С (Чув)
К Д18
25645-чув
24132
С

М. ДАНИЛӐВ-ЧАЛДУН

# КОЛХОЗ КАЛАВӖСЕМ

ЧӐВАШИЗДАТ
1 9 3 6

Национальная библиотека ЧР
4-025645

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | 1R26 | | | |

Моргаушская типография Зак. 1296 Тир. 10.000 1931 г.

ЧĂВАШ
ИЗДАТ
1936

М. Н. ДАНИЛОВ (ЧАЛДУН)

# КОЛХОЗНЫЕ РАССКАЗЫ

★

ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
ЧЕБОКСАРЫ 1936

М. Н. ДАНИЛĂВ (ЧАЛДУН)

# КОЛХОЗ КАЛАВĔСЕМ

★

ЧĂВАШСЕН ПАТШАЛĂХ ИЗДАТĔЛСТВИ
ШУПАШКАР 1936

ПРОВЕРЕНО
2007

Редактор И. С. Тукташ.
Техредактор Н. С. Степанов.

★

Послано
в производ-
ство 13/VII-36 г.
Подписано к печати
28/X-36 г. Уполномоч.
Чувашлита № 1467. Чуваш-
гиз № 173. Заказ № 1224.
Тираж 3000 экз.
Ф. б. 72×105 1/32.
Об'ем 4 п. л.

★

Типография № 1 Чувашгиза,
г. Чебоксары, Канашская, 16.

м 25645-чув

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

# СТРЕЛОК ИВАНĔ

## I

Вĕсем виççĕн пĕр тăван: кĕçĕнни Петĕр, вăталăххи Хветĕр, чи асли Иван. Ивана ашшĕ пит йуратсах кайман, мĕншĕн тесен вăл ытла хăйулă, харсăр йĕкĕт пулса ÿснĕ; çитменне тата мĕн çамрăкранах турра ĕненмен, начаљниксене пит пăхăнсах кайман,—никама та пуççапасшăн пулман. Çавăнпа та ăна ашшĕ хăй çуртĕнче усрама шикленнĕ. „Вăл усал пирки тем курса тăрăн. Çуртран та хуса кăларса йарèç“, тенĕ ашшĕ. Вара ăна авлантармасăрах, тата нимĕн памасăр, уйăрса кăларнă. Ашшĕн памали те нимех те пулман; çуртĕнче мĕн пурĕ те: пĕр ула кĕсре, тепĕр виçĕ чĕчĕлĕ, хăрах măйракалă хĕрлĕ ĕне, çур йат çĕр, тăррине çерем кассипе витнĕ хура пÿрт пулнă, урăх нимĕн те пулман.

Иван хăй те ашшĕ çуртĕнче пурăнасшăн çунман, мĕншĕн тесен ăна амаçури амăшĕ те курайман.

— Ых, харам пыр, йантине çеç çисе вырттатăн! Аçу пек пулсан, епĕ сана тахçанах тарçа кайса памала,—тесе ылханнă кашни çиме лармассерен. Тепĕр йенчен амаçури амăшĕнчен çуралнă икĕ шăллĕ Иванпа пĕрле ÿссе çитĕннĕ. Шăллĕсемпе те Иванăн сăмах пит килĕшсех кайман: вĕсем иккĕш те турра ĕненнĕ, кашни вырсарникун чиркĕве çÿренĕ, начаљниксем умĕнче сиксе чĕтренĕ, лешсем мĕн ыйтнă çавна пама, мĕн хушнă çавна тума хатĕр пулнă.

— Ех, хăравçăсем!—тесе кулнă Иван вĕсенчен.

— Анне, Иван пире „хăравçăсем“ тесе мăшкăлат,—тесе елекленĕ лешсем амăшне.

Çав çилĕпе амаçури амăшĕ ик-виçĕ кун хушш çиме памасăр усрană.

Иван пĕрре çеç мар сивĕ каçсенче ĕне картинче сывăрса çĕр каçнă. Пĕрре çеç мар, ыйткалакан пек, кӳршĕсенчен çăкăр татăкĕ ыйтса илсе çинĕ. Малтанах ăна кӳршĕри хĕрарăмсем шелленĕ, кайран-кайран вара вĕсем те çавăрăнса пăхми пулнă.

Иван ашшĕ çуртĕнчен уйăрăлса тухсан, чи йал вĕçне, тăвата йупа хушшине пураса, тăмпа шăлса, тăррине çерем кассипе витсе пӳрт лартнă та, сăвăр пек пĕр пĕчченеçи пурăннă. Çирĕм çула çитсен вăл авланас тесе те шухăшланă. Анчах йалта ăна йурăхлă хĕр сем пулман: пырас текеннисене хăй илмен, хăй илес текеннисем пыман! „Çав турра ĕненмен, сынна пăхăнман, начальниксене сума-суман сынна качча кайса, йепле пурăнса ĕмĕре иртерес?“—тесе хăратнă хĕрсем пĕрне-пĕри. Кунсăр пуçне тата Иванăн тепĕр çултан салтака каймала пулнă. Çавăнпа вăл хăй те çине тăрсах хĕр шыраман. Пурăннă вăхăтчен...

Çынна çиме йуратакан çынсем Ивана куç хыçĕнче йытă пек кăшланă:

— Çĕрсĕр кайăк! Пирĕн çĕре вараласа пурăнаť,—тесе вăрçнă ăна çĕрлĕ çынсем. Сылтăм йенчи кӳршинче пурăнакан Антун Микулайĕ ăна пĕр вăтанмасăр, куçĕнченех темтепĕр каласа вăрçнă:

— Вилсен те вĕт сан ӳтне чавса чикмелĕх çĕрӳ çук. Ланчашка! Тĕне кĕмен пушкăрт. Турра маннăскер! Тĕне кĕнĕ халăх йатне çĕртекен антихрис. Вилсен, леш тĕнчере те сан вырăн пулас çук!—тесе хăйранă вăл Ивана.

Çук, Иван Микулайа пăхăнма мар, унран хăй кулнă:

— Ха ха-ха! Есĕ, Микулай пичче, вилме пуçтарăнатăн пулсан, епĕ вилесшĕн мар-ха. Хăçан та пулсан манăн та çĕр пулĕ.

— Кам ухмахĕ сана çĕр патăр? Йĕмне сутса сутăн илĕп тетĕн-им ес ыр çын çĕрне? Хе-хе-хе! Кĕтсех тăр...—çăварне сарса, куçĕсене хĕссе кулнă Микулай.

— Епӗ ҫӗре укҫа парса илесшӗн те мар, „укҫапа ухмах та кулаҫ илсе ҫинӗ“ тет. Есӗ ҫавна илтнӗ-и?

Нумай тавлашнӑ Иванпа Микулай. Хӑш чух ҫапӑҫас патнех ҫитнӗ. Микулай тен ҫапӑҫнӑ та пулӗччӗ, анчах Иван хӑй ҫыхланман.

— Мӗн сана, ухмаха, ҫапса алла варламала,— пӑрӑнса кайнӑ вӑл.

- Е-е-е!.. Епӗ, ухмах-и? Мӗнле сан чӗлхӳ ҫӗкленет. Епӗ вӗт виҫӗ йат ҫӗр тытса тӑратӑп, –автанла тапӑртатса, кӑкӑрне шакканӑ Микулай.

Иванӑн ҫӗрӗ пулмасан та, вӑл ыгти ҫӗрсӗр хресченсем пек, пуйансем патне тарҫа кӗрсе, тӑранса пурӑнман. Вӑл хӑйӗн тӑван амӑшӗ вилес умӗн пиллесе хӑварнӑ хушпуне сутса пӑшал туйаннӑ.

„Нуша кулаҫ ҫиме вӗрентет“, тенӗ пек, Иван пӑшалпа ҫавтери тӳрӗ пеме вӗренсе ҫитнӗ. Вӑл улпут вӑрманӗсене сунара ҫӳренӗ. Ун кусӗ умне ҫитсе лекнӗ кайӑк-кӗшӗк нихӑҫан та хӑтӑлайман.

Ҫапла Иван сунар ӗҫӗпех тӑранса пурӑнма пуҫланӑ.

Вӑхӑт йалан малала шунӑ. Ир пулнӑ та каҫ пулнӑ, хӗл иртнӗ те ҫу ҫитнӗ.

Пӗрре ҫапла, кӳршӗ Микулай ӗҫсе хӗрнӗ те Иванран кулма шухӑш тытнӑ. Шӑп ҫав вӑхӑтра Иван урампа иртсе пынӑ. Микулай чӳрече витӗр пуҫне кӑларнӑ та, лӑх-лӑх-лӑх кулса кӑшкӑрнӑ:

— Иван!

Иван чарӑнса, ун йенне ҫавӑрӑнса пӑхнӑ.

— Мӗн кирлӗ?

— Хе-хе-хе!.. Есӗ пит стрелока тухса кайнӑ теҫҫӗ. Тӗрӗс-и?

—Сана мӗшӗн кирлӗ вӑл?

— Ак, пӑх-ха, куратӑн-и, ҫирӗм пуслӑх кӗмӗл. Ҫирӗм хӑлаҫран лартатӑп. Пӑшалпа персе лектер— хӑна пулӗ, лектереймесен ху ҫирӗм пус парӑн. Килӗшетн-и?—Хӑй ӳсӗр тутисене сарса йарса кулнӑ, аллинчи кӗмӗл укҫине хӗвел ҫинче выљатса йӑлтӑртаттарнӑ.

— Лартса пар. Персе пăхам. Çирĕм пус мĕн вăл. Аллă хăлаçран аллă пуслăх ларт,—тенĕ Иван сăмахĕсене шăлĕ витĕр сăрхăнтарса.

—Ох-о-о!. Ытла нумайа хапсăнатăн... Ну йурĕ...— Микулай ӳсĕр урисемпе каллĕ-маллĕ тайкаланса, аллă хăлаç виçсе кайнăта аллă пуслăх кĕмĕле çурри таран çĕре чиксе лартнă:

— Ме, пер!—тĕнĕ вăл, лăх-лăх кулса.

Иванпа Микулай тавлашнă çĕре йалти çынсем, пуринчен ытла ача-пăчасем пуçтарăннă.

— Ăçтан лектерет. Кĕмĕлĕ çурри ытла вĕт çĕр айĕнче, чух çеç курăнать вĕт!

— Ак курăн, лектерме мар, сирпĕтсе çеç йарĕ,— пĕр-пĕринпе тавлашнă курма пуçтарăннă çынсем.

Иван пăшалне хулпуççи çинчен илнĕ те, пĕр труп пĕрчи йарса авăрла пуçланă.

— Асту, Микулай пичче, лектерсен шеллемеле ан пултăр,—тенĕ Иван, пăшалне авăрласа пĕтерсен.

— Лектер, лектер, епĕ шеллемĕп. Хăвăнне ан шелле. Ман çитĕ. Ак, куратн-и?—кăсйинчен укçа йенчĕкне кăларса шăнкăртаттарнă.

— Иван пăшалне хулпуççийĕ çумне тĕресе хунă.

— Ну, пăх!—тенĕ вăл.—Лектерсен манăн, лектермесен санăн.—У-ух! кĕрлеттерсе йанă. Кĕмĕл укçа чăнкăр туса, иквиçĕ хăлаçа сирпĕнсе ӳкнĕ. Пăшал сасси Меселлĕ çырми тăрăх хăпарса, Карташов улпут вăрманĕнче тепĕр хут ухлатса çухалнă.

Микулай кĕмĕлне выљаса йанипе, тĕлĕнсе пăхса тăнă.—Шел...

Иван хăвăрт утса çитсе, кĕмĕлне пĕшкĕнсе илнĕ те, кăсйине чиксе хунă. Унтан пăшал кĕпçинчи тĕтĕмне вĕрсе тасатнă.

— Тата лартатн-и?—Микулай çине пăхса кулнă Иван.

— Есĕ чăнах-им вара, Иван? Епĕ вĕт выљаса çеç. Пар аллă пуса калле!—Микулай, аллине Иван йенне чăсса, ыйткалакан пек тилмĕрнĕ:

— Епĕ санпа выљама пĕчĕк ача мар. Пит выљас-

су килсен, ав ачасемпе выља,—тесе кĕвĕçтернĕ Иван Микулайа.

— Тата ларт, Микулай пичче, тата ларт,—Микулай тавра шăлĕсене йĕрсе, кăшкăрашса чупкаланă ачасем.

— Саланăр! Мĕн, туй пур-им кунта?—кăшкăрнă Микулай, ачасем çине çиллenсе.

Иван пăшалне хулпуççийĕ урлă çакнă та малала утнă.

— Çавăнтан вара Ивана „стрелок" тесе йат панă. Пурăна киле унăн хушамачĕ те—Стрелок пулса тăнă. Халĕ ĕнтĕ ăна Стрелок Иванĕ теççĕ.

## II

Иван çĕр çинчи кайăксемпе вĕçĕн-кайăксене çеç мар тытма йуратнă. Вăл пулăçă та пулнă. Тата тытма çеç мар, ĕрчетме те пĕлнĕ: пулăсăр кÿлĕсене пулă тытса йарса пулăлантарнă. Анчах ăна курайман пуйансем нумай пулнă, вăл пулăлантарнă кÿлле кантăр, курăс хутса, пуллисене вĕлерсе пĕтернĕ. Кун çинчен Иван вулăса та кайса каласа пăхнă, анчах вулăсрисем ун хутне кĕмен.

— Санăн пуллу тесе, йал çыннисен сÿс, мунчала тумала мар-им?—тавăрнă вĕсем.

Иван влаçа хирĕç ним те тăвайман, шăлне çыртнă та тÿснĕ.

Йывăр пулнă ăна. Çав пуйансем унран кулнă, мăшкăланă:

—Ĕççĕр аптăранă. Пулăсăр кÿлĕсене пулă йарса ĕрчетесшĕн... Ха-ха! Çара çерçи!..

Иван çапах пăхăнман, хăйĕннех ĕçленĕ. „Хăçан та пулсан епĕр те вĕсенчен кулăпăр-ха", тесе шутланă хăй ăшĕнче.

Сивĕ хĕл иртсе кайнă, çуркунне çитнĕ; кайăк-кăвакалсем вĕçсе килнĕ. Сунарçăсем пăшал йатса кÿлĕ патĕнчен кÿлĕ патне чупнă. Каç пулсан, йытă пек супса тавăрăннă. Пĕрер кăвакал тытнисем çынсем

ўменче мухтанасшăн, кăвăкалĕсене пилĕк хушшине хĕстерсе, урам тăрăх унтала-кунтала пăхкаласа пынă: „Курăр, епĕ кăвакал тытнă вĕт“.

Иван мухтанакан сунарçă мар, вĕл кайăк-кĕшĕк тытса таврăннине никам та курман.

Пĕрре çапла Иван Çуткўл çине кăвакал тытма кайнă. Илтет: пăшал сассисем вăрçăри пек кĕрлеççĕ. „Мĕнле сунарçăсем кĕсем, пĕр вĕçĕмсĕр переççĕ? Капла вĕсем кўлĕре пĕр кăвакал та хăвармĕç,—тесе шухăшласа кўлĕ патнеле утнă вăл. Пăхат—кўлĕ хĕрринче вулăсри тийекпе унăн арăмĕ, икшер кĕпçелĕ пăшалсемпе кĕрслеттереççĕ çеç. Кăвакалсем хăранипе, кўлĕ çине лармасăр, сывлăшра йавăнса вĕçсе çўреççĕ.

— Кăвакалсене хиретĕр?—хуллен утса, вăрттăн кулса пынă Иван.

— Лармаççĕ. Ларсан та, çывăха йамаççĕ,—кăмăлсăрăн таврăнă тийек.

— Миçе тытрăр?—ыйтнă Иван.

— Пĕрре те çук.

Çав вăхăтра вĕсен пуçĕ урлă пĕр кăвакал йарăнса вĕçсе пынă. Иван хулпуççийĕ урлă çакăнса тăракан пăшалне илнĕ те, кăвакала тĕллесе кĕрслеттернĕ. Кăвакал çавăнтах çунаттисемпе лапăстатса, çĕре лаплатса ўкнĕ.

— Пĕрре пур! Илĕр,—тенĕ Иван, савăнăçлăн кулса.

Çавăнтах тепĕр кăвакал вĕçсе тухнă, пăшал сасси каллех кĕрслетнĕ. Кăвакал çăмха пек пĕтĕрĕнсе çĕреле персе аннă.

— Иккĕ те пур. Пуçтарса илĕр. Сире ваљљи куччĕнеç, господин тийек, — тăрăхларах кулнă каллех Иван.

Тийекпе арăмĕ тĕлĕннипе, ним тума аптăраса тăнă.

Иван пăшалне каллех хулпуççи çине çакнă та:

— Сывă пулăр,—тесе малала утнă.

Тийек Иван йеннеле çавăрăнса:

—Мужик, мĕн чул парас сана ку кăвакалсемшĕн? —тесе кăшкăрса ыйтнă.

—Ним те кирлĕ мар. Епĕ хама ваљљи татах тытăп. Кусем сире ваљљи кучченеç пулччăр,—тавăрнă Иван, тийек çине хулпуççи урлă çавăрăнса пăхса.

—Спаçибă!—кăшкăрнă тийек арăмĕ.

Иван, тийекпе арăмĕнчен уйрăлсан, кўлĕ çинче вĕççе çўрекен кăвакалсене пĕрин хыççăн теприне пере-пере ўкерме пуçланă.

Тийекпе арăмĕ тахçанччен тĕлĕнсе пăхса тăнă.

—Бăт-тăк стрелок! Кашни пемессерен—кăвакал.

— „Пăшалĕ пит лайăх-тăр ун. Мĕнле майпа-ха унăн пăшалне туртса илес?“ —шухăшланă тийек хăй ăшĕнче.

Тепĕр кун ирех Иван патне деçатски хашкаса чупса çитнĕ.

—Иван, айта часрах. Сана вулăсри тийек чĕнет.

— Мĕншĕн?

— Пĕлместĕп. Пит час килтĕр терĕ,—васкатнă деçатски.

—Иван шухăша кайса ларнă. „Мĕншĕн-ха? Ĕнер епĕ вĕсем перекен кўлĕ патне пырса, кăвакалсене тытнăшăн-ши? Йе кучченеç сахал патăм-ши? Тата пĕриккĕшне тытса памалаччĕ, вара кăмăлĕ тулĕччĕ. Шуйттан карланкисем, ним парса та тăранмаççĕ,“ шухăшланă вăл хăй ăшĕнче.

—Ну, мĕн пуçна чиксе ларатăн? Аўа хăвăртрах! Саншăн мана айăплĕ тата,—хистенĕ деçатски.

—Ан хăра, саншăн хам ответ тытăп. Аўа,—тенĕ Иван.

Иван вулăс кантурĕн алăкĕнчен кĕрсенех, тийек ун патне тилĕ пек йăпăлтатса пынă.

—А-а-а, çитрĕн-им? Аўа,—хăйĕн кабинетне илсе кĕнĕ Ивана.—Лар!—тенкел çине тĕллесе кăтартнă.

Иван тийек çине пăхса илнĕ те, сĕтел хушшинче, хăйне хирĕç пăхса ларакан, кĕреçе сухаллă, çутă çамкалă старшинана хирĕç тенкел çине ларнă.

—Ну, Иван, тўррипе кала: пăшална сутатн-и?—ыйтнă тийек.—Сутмастăп,—тенĕ Иван, пуçне пăркаласа.

—Мĕншĕн?—сиввĕн пăхса ыйтнă тийек.

—Манăн пĕтĕм пурлăх çавă. Ăна сутсан, мĕнле пурăнас ман?.

—Сутмастăн пулсан, аҭа еппин ман икĕ кĕпçелĕ пăшалпа улăштарар. Килĕшетн-и?

Иван тĕлĕнсех кайнă.

—Мĕн калаçатăр есĕр, господин тийек. Манăн пăшал пилĕк тенкĕ тăраҭ, сирĕн сахал хурсан вунпилĕк тенкĕ. Сире ĕстев пама ман укçам çук. Тата епĕ хам пăшала нимĕнле пăшалпа та улăштармастăп, мĕншĕн тесен вăл ман аннен пиллĕхĕпе туйаннă йапала, татса каланă Иван.

—Мĕн калаçса тăмала унпа. Ырлăхпа сутмасан, йе улăштармасан, урйадникe йарас та, илтерсе килтерес, ĕçĕ те пĕтрĕ,—тенĕ старшина, çĕçĕпе касса çурнă пек хĕсĕк куçĕсене тĕрлĕ май выљаткаласа.

Иван ирĕксĕрех килĕшнĕ. Хăйĕн пăшалне тийекĕн икĕ кĕпçелĕ пăшалĕпе улăштарнă.

Çапла Иван пĕр кĕпçелĕ пăшалтан икĕ кĕпçелине туйаннă. Кун хыççăн унăн сунарçă йачĕ пĕтĕм Епхӳ кĕпĕрнине сарăлнă. Ун çинчен Карташов хушаматлă çĕрулпучĕ те илтнĕ. Вăл хуҭ те мĕн хака ларсан та, Ивана хăй патне тарçа илме шухăш тытнă.

## III

Хĕлле. Пĕр ирхине Иван сунара кайма пуçтарăннă. Сасартăк ун чӳречи умне урхамах пек хура лаша кӳлнĕ çуна çитсе чарăннă:

—Тпру! Стрелок Иванĕ çакăнта пурăнаҭ-и?—чӳрече витĕр кăшкăрнă куччĕр.

—Çакăнта. Мĕн кирлĕ сана манран?—Иван пăшалне хулпуççи урлă çакса тухнă.

—Аҭа, лар, сана улпут хăй патне чĕнет,—тенĕ куччĕр...

—Мĕн тума кирлĕ епĕ ăна?

—Епĕ пĕлместĕп. Мана илсе килме хушнă. Унта çитсен пĕлĕн.

„Ах, шуйттан, ку ĕнтĕ, хăй вăрманĕнче сунара çӳренĕшĕн айăплама мана чĕнтерет. Ых, харам пыр, хăйĕн мулĕ сахал, тата мужикăн йулашки татăк çăкăрне туртса илесшĕн хапсăнать“—шухăшланă Иван.

—Ну, лар, мĕн пăхса тăратăн тата,—васкатнă куччĕр.

—Аҫта, хăвала лашуна!—çуна çине сиксе ларнă Иван.

— Куччĕр тилкепине карт туртса, шик шăхăрнă. Лаша çĕлен пек авкаланса хускалса кайнă. Çуна хыçĕнчен шурă тăман çеç çавраçил пек пĕтĕрĕнсе тăрса йулнă. Халиччен кун пек лайăх лаша çине ларса курман Иванăн чĕри кăрт-кăрт тапнă. Çуна сулăнка çите-çите çапăннипе тухса ӳксе йулас пек туйăннă.

Куччĕр пырсан-пырсан пĕр шик шăхăрнă, тилкепине карт туртнă. Лаша пĕрех пуçне ухса малала ăнтăлнă.

Çуна ухă пек шăхăрса хапхаран пырса кĕвĕ. Урлă măйăхлă, ватă сăнлă, пĕрĕнчĕк питлĕ-куçлă, хурчăка пек курпун сăмсалă улпут майĕпен хирĕç утса тухнă.

—Хе-хе, стрелок Иванĕ текен чăваш есĕ пулатни-ха?

— Епĕ,—тавăрнă Иван.

Иван улпут йенне аллине чăснă, леш алă паман.

—Аҫа, кĕрер,—улпут Ивана хăй пурăнакан курницине илсе кĕнĕ.—Лар,—тенĕ вăл, кăвак пустав витнĕ çемçе диван çине пӳрнисемпе чăсса кăтартса.

Иван ларма хăйаймасăр, унтала-кунтала пăхкаласа тăнă.

— Лар,—тенĕ улпут тепĕр хут.

Иван ирĕксĕрех ларнă. Пружинăлă диван ăна сăпкари пек сиктернĕ.

— Иван, есĕ пит чаплă сунарçă тенине илтнĕ епĕ. Чăнах-и?

— Кайăк кĕшĕк курсан тыткалатăп,—тенĕ Иван, мухтанмасăр.

— Хĕм, апла есĕ ман пата сунара çӳреме—тарçа кĕретни?—тенĕ улпут тӳрех.

Иван, улпутăн ыйтуне хирĕç труках тавăрман. Кăшт шухăша кайса ларнă. Унтан хăйĕн çăпата сырнă, йурлă ури çине пăхнă. Йур ирĕлсе, сарă сăрпа сăрланă урайне патлатса тумланă.

— Кĕрĕшес, мĕншĕн кĕрĕшес мар. Мĕн чул хурăн уйăхне? — тенĕ Иван хăйулăн.

— Хакĕнче ĕç тăмасť. Сунар ĕçĕ ăнса пырсан, аптăратмăп. Мана укçа шел мар, — тенĕ улпут.

Çапла Иван хăй те сисмен, улпут тарçи пулса та тăнă. Çавăнтах улпут хăйĕн стени çумĕнче çакăнса тăракан пăшалĕсене кăтартма пуçланă.

— Ман пăшалсем пек пăшалсем ку таврари улпутсен пĕрин те çук. Епĕ вĕсене йут патшалăхран кӳртернĕ, — мухтаннă улпут.

— Пит аван вара, — килĕшнĕ Иван. Хăй йĕпе урисемпе сăрлă урай çине лăп-лăп пусса упа пек йĕрленĕ. Пăшалĕсене кăтартса пĕтернĕ хыççăн, улпут сунара çӳремелли йыттисене кăтартма тухнă. Пĕр картара сакăр йытă хупăнса тăнă. Вĕсем пурте вĕшлеке сăмсалă, сарлака кăкăрлă, çинçе хырăмлă пулнă. Ивана курсан пурте харăс хăр-р! — вĕрсе йанă, шăлĕсене йĕрнĕ. Ирĕк парсан халех çуркаласа тăкма хатĕр пулнă.

— Йурамасť! Ку сирĕнпе пĕрле сунара çуремели çын, — тесе йыттисене пӳрнипе йунанă улпут. Йытăсем шăп пулнă. Иван çине шурă куçĕсемпе çавăрна-çавăрна пăхнă. Унтан пурте хăйсен вырăнĕсене кайа-кайа выртнă.

Калле курницана кĕрсен, вĕсене пĕр кăвак куçлă, çап-çамрăк хĕрарăм хирĕç пулнă.

— Лизаветă Петровнă, ку пирĕн сунарçă пулаť, паллашăр, — тенĕ улпут хĕрарăма, Иван çине кăтартса. Хĕрарăм сăмах чĕнмесĕр, Иван çине куçхарши айĕнчен пăхса илнĕ.

— „Йепле-ха çав тери илемлĕ, çап-çамрăк хĕрарăм çак ватă старике йуратса пурăнаť?“, тесе шухăшланă Иван хăй ăшĕнче. Унтан хĕрарăм çине мĕскĕнĕн пăхнă.

Хĕрарăм Иван çине тепĕр хут чейе куçĕсемпе пăхса илнĕ те, хăй те астуман, Иван умне утса пырса:

— Аван-и, — тесе аллине панă.

Иван савăннипе хĕрарăмăн кăпăк пек аллине хытă чăмăртанă. Лешĕ ыратнипе шари çухăрса йанă...

— Мужик алли! — Хĕрарăм аллине картах туртса илсе, шурă тутăрпа шăлкаланă та, вăр çавăрăнса, урăх пӳлĕмеле тухса кайнă. Иван хĕрарăм çинчен куçне илмесĕр пăхса йулнă.

— Ну, Иван, ырантан пуçласа сунара çӳре пуçлăпăр. Унта курăпăр, есĕ мĕнле стрелок иккенне. Халĕ апата ан! Унта, кухӈăра çитерĕç. Лӈудмилă, Ивана апат хатĕрлесе çитер! — кăшкăрнă улпут.

Çавăнтах, чĕрне вĕççĕн чупса, тепĕр хĕрарăм пырса кĕнĕ. Ку хĕрарăм Лизаветă Петровнăран çамрăкрах та, тата илемлĕрех те пулнă; унăн икĕ хулăн çивĕчĕсем хулпуççийĕсем урлă йухăм шыв пек авкаланса йухса выртнă; çаврака кăвак куçĕсем, те хуйхăпа, те савăнăçпа, ăшшăн выӈанă, çӳхе тăп-тăп тутисем ачашшăн йăл кулнă; çинçе те вăтам пĕвĕ кӳлĕ хĕрринчи хăмăш пек авкаланнă. Анчах вăл темшĕн сылтăм питçăмартине шурă тутăрпа туртса сыхнă. Кам пĕлет, тен ун шăлĕ ыратат-тăр? Ăна Иван пĕлмен.

— Атăр манпа пĕрле, — йăвашшăн чĕннĕ вăл Ивана.

Иван хĕрарăм хыçĕнчен майĕпен утнă. Улпут урăх пӳлĕме тухса кайнă.

## IV

Кухӈăра урăх никам та пулман. Иван сĕтел хушшинче пĕр пĕччен купăста йашкипе ыраш çăкăрĕ çисе ларнă. Лӈудмилă пĕр чарăнмасăр улпутпа арăмĕ апатланакан пӳлĕме васкаса апат тултнă. Кухӈăна кашни кĕмессеренех вăл Иван çинчен куçне илмен. Вăл çавăнтах Иванпа калаçасшăн пулнă, анчах пирвайхи хут курнă çынна сăмах хушма хăйайман. Иван та ун çине шăтарас пек пăхнă. Вăл хĕ-

рарăм унăн кăмăлне çав тери кайнă. „Мĕншĕн есĕ питçăмартине çыхса çӳретĕн“? тесе ыйтасси килнĕ.

Иван апатланса тухичченех, улпут арăмĕ кухӈăна пырса кĕнĕ.

— Мĕн ĕне пек мăшăлтатса çӳретĕн. Пыр, сĕтел çине пуçтар, хăвăрт!—кăшкăрнă улпут арăмĕ кухаркине.

Иван, улпут арăмĕ кухаркине мĕншĕн вăрçнине пĕлмесĕр, тĕлĕнсе итлесе ларнă.

— Астăвăр, Иван, есĕр ун çумне ан çулăхăр. Куратăр-и, ав вăл чирлĕ, питçăмартине çыхса çӳрет,—пĕлтернĕ Лизаветă Петровнă.

Иван çисе тăранмасăрах, кашăкне пăрахса, сĕтел хушшинчен тухнă.

— Есĕ тĕне кĕмен-им, Иван, апат хыççăн турра сăхсăхмастăн?—ыйтнă Лизаветă Петровнă.

— Тĕне кĕнĕ те, чăвашсем нумайĕшĕ сăхсăхмаççĕ. Епĕ те çавсен шутĕнче,—тенĕ Иван.

Лизаветă Петровнă Ивана тата калаçтарасшăн пулнă. Анчах упăшки пырса кĕни кансĕрленĕ.

— Ну, улпут апачĕ килĕшет-и?—хулăн тутине сарса йарса ыйтнă улпут.

Лизаветă Петровнă упăшки çине усал куçĕсемпе çавăрăнса пăхнă та, тухса кайнă.

## V

Иванăн хĕрарăм мĕн чирпе чирлине пĕлесси килнĕ. Çавăнпа вăл, пĕрре Лӈудмилă хăй умĕнчен иртсе пынă чух, ăна аллинчен тытса чарнă.

— Чим ха, ман санпа калаçмали пур,—тенĕ вăл. Лӈудмилă чарăннă.

— Кала хăвăртрах, мĕн каламали пур. Унсăрăн, улпут арăмĕ курсан, мана вăрçĕ. Вăл йалан мана хыçран сыхласа çӳрет,—тенĕ леш хăранă сассипе, унтала-кунтала пăхкаласа.

— Мĕншĕн есĕ питçăмартине çыхса çӳретĕн?—ыйтнă Иван.

Хĕрарăм тӳрех каламан, кăшт вăтанса тăнă. Тарă-

нăн сывласа, сывлăшне пуçтарса илнĕ хыççăн çеç кала пуçланă:

— Халиччен никама та каламанччĕ. Пĕр сана анчах каласа парам. Манăн анне çак çуртра, ман вырăнта,—кухаркăра ĕçлесе пурăнса вилнĕ. Епĕ аттесĕр çуралнă хĕр. Аттем кам иккенне епĕ тĕплĕн пĕлместĕп: те çак улпутăн ашшĕ, те улпут хăйех. Ун çинчен мана анне каламан. Епĕ аннерен вуникĕ çулта йултăм. Вăл вилсен ун ĕçĕ ман çине куçрĕ. Саккăрмĕш çул ĕнтĕ çапла ĕçлетĕп. Ырă сăмах илтсе курман. Кашни кун мана упăшки çумне хушса кӳлешет. Халĕ ĕнтĕ, есĕ килнĕренпе сан çумна çыпăçтарать. Пĕркун çапла, улпут килте çук. Епĕ кухњăра сывăрса выртатăп. Калама çук усал тĕлĕк куратăп, тем пысăкĕш хура çĕлен ман пата йавкаланса шуса пычĕ те, кăшкăрса та ĕлкĕреймерĕм, питçăмартинчен çатăр сăхрĕ. Вăранса кайрăм. Чăнах та питçăмарти вутпа пĕçернĕ пек пĕçерсе ыратать. Алăпа йарса тытрăм, пĕтĕм питри ӳт алă çумне сĕвĕнсе çыпăçрĕ...

Иван тӳссе тăраймарĕ. „Хĕрарăм суйать" тесе шухăшларĕ пулас, çавăнпа ăна пӳлсе:

— Тĕлĕкре çĕлен сăхнипе вара питçăмарти ӳчĕ сĕвеленсе тухать им?—терĕ.

— Çук, унпа мар, улпут арăмĕ кӳлешнипе мана суккăр тăвасшăн, ман пит çине вĕри шыв сапнă. Анчах хăранипе, алли чĕтренĕ пулас, тӳрех лектереймен. Ак, куратăн, хăрах питçăмартине çеç пĕçертнĕ. Халĕ ĕнтĕ ман çинчен „чирлĕ" тесе йат сарса çӳрет,—тесе вĕçленĕ Људмилă хăйĕн сăмахне.

Иван тинех ăнланса илнĕ. Вăл хĕре çавтери шелленĕ. Унăн ăна халех ыталаса чуптăвасси килнĕ.

— Есĕ вĕт ĕнтĕ пĕчĕккĕ мар. Мĕншĕн-ха хăна-ху çак ылханлă çуртра йытăла култарса пурăнатăн?..

Људмилă Иван куçĕнчен мĕскĕнĕн пăхнă.

— Ăçта кайас ĕнтĕ ман? Епĕ вĕт ку тĕнчере пĕр пĕччен. Тата кухњă ĕçĕнчен пусне урăх нимĕн ĕç те пĕлместĕп,—тенĕ вăл. Унăн куçĕсенчен ирĕксĕрех

М 25645-чув
Чувашская республиканская БИБЛИОТЕКА

куççуљ сăрхăнса тухса питçăмартийĕсем тăрăх йухса аннă.

— Људмилă, ан йĕр. Куççуљ сана пулăшас çук. Ман çине шанатăн пулсан, аťа иксĕмĕр тарар ку çуртран. Епĕ сана вутра та çунтармăп, шывра та путармăп, кирлĕ пулсан епĕ саншăн вилме те хатĕр,— тенĕ Иван. Ку сăмахсем унăн кăкăрĕнчен çулăм пек йалкăшса тухнă.

Људмилă Иванăн сăмахĕсене ĕненсе, ун аллисене чăмăртанă.

— Ырă çынăм, çăл мана. Епĕ сана ĕмĕр-ĕмĕр тав тăвăп. Санран пуçне урăх ман хута кĕрекен çын çук ку тĕнчере...

Çав вăхăтра алăк хыçĕнче ура сасси илтĕннĕ.

— Килет!—тенĕ Људмилă, шартах сиксе. Вăл хăвăртрах кухњăран тухса кайнă. Иван хăй вырăнне йăванса кайса выртнă.

— Људмилă! Каçхи апат хатĕрле! — кăшкăрса пырса кĕнĕ Лизаветă Петровнă.

Иван, çывăрам пек пулса, куçне хупса выртнă.

Çакна курсан улпут арăмĕ Иван патне хуллен утса пырса, ăна хăлхинчен темĕн каласшăн пулнă, анчах ĕлкĕреймен: алăк йар уçăлнă та Људмилă пырса кĕнĕ.

## VI

Пысăк мар вăрмана Йамансас чăвашĕсем ункă пек çавăрса илнĕ. Унта та, кунта: ух та ух! кăшкăрнă сасăсем йанраççĕ. Кайăксем тарса тухас вырăнта Иванпа Карташов улпут, пăшалĕсене хатĕр тытса тăраççĕ. Иван пĕр вăхăта пăшалĕ çине тайанса шухăша кайрĕ. Вăл Људмилăна мĕнле майпа вăрласа тарасси çинчен шухăшлаť. Унăн куçĕсем умне уйар каçхи çăлтăр пек Људмилă тухса тăраť. Иван йерипен пуçне çĕклесе пăхрĕ те хăйĕнчен пĕр вăтăр хăлаçра улпут тăнине курчĕ. Пуçри шухăшсем унăн каллех пăтранса кайрĕç, куçĕ умне каллех Људмилă тухса тăчĕ. Људмилăпа пĕрле ун чĕрине сасартăк хăрушă

шухăш савăлланса кĕчĕ. „Мĕнех тăрат-ха мана ку ватă улпута типĕтмешкĕн? Ăна çакăнтах тирпейлем те, Людмилă манăн пулĕ“. Анчах Иван хăйĕнчен хăй хăраса ӳкрĕ. „Çук, кунта манран пуçне урăх никам та çук. Тӳрех ман çине калĕç. Вара тĕрме, катăргă“...—шутласа илчĕ вăл. Шăп çав вăхăтрах сĕм-вăрмантан пĕр кашкăр сиксе тухрĕ. Çын шăршине сиссен, шăп чарăнса, сăмсине çĕклесе, унтала кунтала пăхкаласа, наш-наш шăршларĕ. Улпут васкаса пăшалне хулпуççи çумне тĕресе: ух! кĕрлеттерчĕ, пăшал сасси вăрман тăрăх кĕрлесе кайса, таçта инçетре-инçетре тепĕр хут ухлатса çухалчĕ. Кашкăр йалт сиксе ӳкрĕ те, калле çавăрăнса тарма пуçларĕ.

Улпут кашкăра лектерейменнине кура, Иван пăшалĕпе кашкăрăн чĕри тĕлĕнчен тĕллесе ухлатарчĕ. Кашкăр сăмсипе йур ăшне чикĕнсе анчĕ.

— Молодец, Иван!---савăнçлăн кăшкăрса ырларĕ улпут Ивана. Иван улпут сассине илтмерĕ. Вăл пăшалне çĕнĕрен авăрласа, улпут çине тепĕр хут пăхрĕ те пăшалне çĕклеме тăчĕ. Анчах Ивана темĕнле шикленӳлĕ вăй тытса чарчĕ: „Мĕн çак усалпа çыхланса алла вараламала“... Вара вăл пăшалне хул хушшине хĕстерсе чăмăртарĕ.

Вăл кун Иван вунă кашкăр, çирĕм тилĕ, вăтăр мулкач персе ӳкерчĕ. Улпут пĕр кайăк та тытаймарĕ.

Кайăк хăвалакан чăвашсем çитсен Ивана:

— Вăт стрелок-тăк, стрелок!—тесе мухтама пуçларĕç.

Улпут та Иван патне утса пычĕ.

— Халĕ ĕнтĕ ĕненетĕп: есĕ чăн-чăн стрелок, Иван!—тесе йăпăлтатса илчĕ вăл. Шăп çав вăхăтра Лизаветă Петровнă йуланутпа сиктерсе килчĕ. Ăна курсан улпут:

— Иван, есĕ ман вырăна кайса тăр. Епĕ сан вырăна тăрам,—терĕ.

Иван улпут сăмахне итлесе, ун вырăнне кайса тăчĕ.

— Хе-хе-хе! Ну, сунарçăсем, кам миçе кайăк тыт-

рĕ?— савăнăçлăн кулса ыйтрĕ Лизаветă Петровнă, купаланса выртакан кайăксем çине пăхса.

— Ак, куратăн пуљ вĕт, кам мĕн чухлĕ тытнине?— тавăрчĕ улпут.

— Ой, ĕненместĕп епĕ сана, есĕ вĕт халиччен кашкăр мар, мулкач та тытса курман, — тăрăхласа кулчĕ улпут арăмĕ.

— Мана ĕненмесен, ав, чăвашсенчен ыйтса пĕл,— терĕ улпут.

— Тĕрĕс, улпут тытнă,—илтĕнчĕç сасăсем, улпута йурас шутпа.

— Ах, чейе те ĕнтĕ, çын аллипе кăвар туртма вĕреннĕ,—măкăр-макăр калаçса илчĕç хăшĕ-пĕрисем.

— Молодец, улпут. Сунарçă çумĕнче сунарçă пуласах пулать,—тесе мухтарĕ улпута арăмĕ. Хăй çав вăхăтрах Иван çине пăхса куçне кăшт хĕсрĕ.

Кайăк хăвалакансем, кашни пĕрер кайăк йатса улпут çуртне тавăрăнчĕç. Улпут, сунар ăннипе савăнса, кайăк хăвалакансене укçа салатса пачĕ. Лешсем тем пек хĕпĕртесе килĕсене саланчĕç.

## VII

Улпут тепĕр кунне пĕтĕм хăйĕн çывăх тăванĕсене хăпуçтарса ĕçкĕ тунă. Вăл кун улпут тарçисене те хăна пулма пĕр витре ерех панă. Вĕсемпе пĕрле Иван та ĕçнĕ.

Улпутăн хăнисем ĕçсе хĕрсен, йатлă сунарçа — Ивана кăтартма ыйтнă. Ивана курсан, унăн илемлĕ сăнĕнчен тĕлĕннĕ. Пуринчен ытла хĕрарăмсем каçсах кайнă.

— Стрелок сыв пултăр! — кăшкăрса бакалĕсене хире-хирĕç шаккаса ĕçнĕ. Ивана ĕçтересшĕн сĕннĕ. Çук, Иван вĕсемпе пĕрле ĕçмен. Вăл бакалне ĕçем пек туса çăварĕ патне илсе пынă та, хăнасенчен вăрттăн урайне тăкнă.

Ӳсĕр улпутсем ташланă, йурланă, мулĕсемпе мухтаннă. Пĕр-пĕрин майрисене тыта-тыта чуптунă. Ĕçсен-ĕçсен хăшĕсем тухса кайнă, хăшĕсем йăванса

пĕтнĕ. Йулашкинчен Карташов улпут хăй те чикĕнсе аннă.

Ĕçкĕн йĕрки пĕтнĕ. Пӳлĕмре Иван тата Лизаветă Петровнă çеç тăрса йулнă.

Иван урайĕнче ӳсĕр ахăрса, хăсса, тирпейсĕр сарканса выртакан улпут хăнисем çине тĕлĕнсе пăхса тăнă.

— Мĕншĕн савăнăçлă мар есĕ, Иван? Йе пирĕн сăй çителĕклĕ пулмарĕ-и?—тесе, кушак ами пек мăрăлтатнă Лизаветă Петровнă.

— Мĕншĕн савăнас ман? Епĕ вĕт сирĕн пата хăнара пурăнма тарçа кĕмен,—пуртăпа каснă пек татса хунă Иван.

Лизаветă Петровнă пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе сиввĕ тытнă пек чĕтресе Ивана ыталаса илнĕ те, тутисене ĕмсе чуптунă.

Иван ним иккенне пĕлмесĕр тĕлĕнсе тăнă.

— Йуратмастăн-им?—малтанхинчен те ачашраххăн ĕнĕрленĕ улпут арăмĕ.

— Ăçтан епĕ сана йуратма пултаратăп? Санăн вĕт упăшку пур. Тата епĕр санпа пĕр йăхри çынсем мар. Есĕ улпут йăхĕ, епĕ—мужик ачи,—тенĕ Иван.

— Çук, вăл ман вата упăшка. Епĕ çамрăк. Ман çамрăк арçынна йуратас килет. Йурат мана, Иван...

Иван урайĕнче тирпейсĕр сарканса выртакан хĕрарăмсем çине тепĕр хут пăхса çавăрăннă та, каланă:

— Епĕ сана йуратма пултаратăп. Анчах есĕ хăçан та хăçан çак вата упăшкунтан уйрăлсан кăна.

—Ах!—аллисемпе кăкăрĕнчен йарса тытнă майра,— йепле уйрăлăп-ха епĕ унран? Унран уйрăлсан вăл вĕт мана мул парас çук. Мулсăр йĕпле пурнăпăр?— Çамрăк майра питне аллисемпе хупласа диван çине йăванса кайнă.

— Мана сан мулу кирлĕ мар. Ак, сан умăнта епĕ хам ылттăн. Куратн-и?—Çирĕп кăкăрне, мăлатук пек чăмăрĕпе шаккаса кăтартнă Иван.

Лизаветă Петровнă, пуçне çĕклемесĕр, диван çин-

че, шывран типĕ çĕре кăларса пăрахнă пулă пек, турткаланса выртнă.

Иван чĕнмен, майĕпен утса кухњăна тухнă.

Ӳсĕр тарçăсем Ивана алă çинче çĕклесе çӳренĕ:

— Урра! Стрелок Иван сыв пултăр!

Лизаветă Петровнă тата чылай вăхăт диван çинче турткаланса, шухăша кайса выртсан-выртсан, вутпа пĕçернĕ пек йалтлатса сиксе тăнă та, каллех Ивана шыраса тупса тилмĕрме пуçланă:

— Йурĕ, Иван. Епĕ сана йурататăп. Çавăнпа есĕ каланă пек пултăр. Епĕ ватă упăшкаран уйăрăлатăп. Анчах мулĕ пирĕн пултăр,—тенĕ вăл. Иван ун çине ĕненмесĕр пăхнă. „Тĕрĕсех калаçаĭ-ши ку, йе ахаљрен кăна супĕлтетет-ши?" — шутланă Иван. Анчах майра ахаљрен кăна супĕлтетме шутламан мĕн. Вăл çавăнтах улпут пӳлĕмне чупса кĕрсе кайса мамăк минтер илсе тухнă та, урайĕнче сарăлса выртакан улпут çăварне çав минтерпе хупласа хунă. Улпут ан тапалантăр тесе, майри минтер çине пĕтĕм кĕлеткипе тăсăлса выртнă. Ватă улпут сывлăшĕ тухманнипе аллисемпе, çапкаланнă, урисемпе тапкаланнă, анчах ӳсĕрскер ним те тума пултарайман. Лизаветă Петровнă упăшки çăварне хупласа хунă минтер çинче хура çĕлен пек йавкаланса выртнă. Упăшки хускалми пулса, ӳчĕ сивĕнсен тин сиксе тăрса минтерне айаккала ывăтса йанă. Хăй ухмаха йернĕ хĕрарăм пек çӳçне-пуçне лапăстаттарса:

— Иван, чунăм! Епĕ упăшкаран уйăрăлтăм. Епĕ халĕ ирĕк хĕрарăм. Йурат мана. Пĕтĕм улпут мулĕ пирĕн иксĕмĕрĕн! - тесе кăшкăрашса, пулĕмрен-пулĕме чупса, Ивана шыранă. Анчах çуртра Иван та, Људмилă та пулман. Вĕсем таçта тарса çухалнă. Тарçисенчен ыйтнă,—вĕсем те пĕри те курман. Пĕр хапха хуралçи çеç хӳме урлă пĕр арçынпа тепĕр хĕрарăм сиксе каçса кайнине кăшт курса йулнă. Анчах вĕсем камсем пулнă,—ăна вăл пĕлмен.

Лизаветă Петровнă Ивана шыраса пĕтĕм çуртне ухтарса çаврăнсан, ним тăвайман йенне, сывлама-

сăр выртакан упăшки патне пынă та ăна вăратасшăн тытса лăскама пуçланă:

— Йевгени, тăр. Мĕншĕн хускалмастăн? Илтетн-и? Иванпа Људмилă çуртран пăрахса тарнă. Ах, улталарĕ вăл мана!..

Çук, улпут хускалман. Унăн сăнĕ хуран хăрăмĕ пек хупхура курăннă. Вăл çавтери хăрушăланса çитнĕ. Лизаветă Петровнă хăрушă упăшкин сăнĕнчен хăранипе ăнтан кайса йăванса выртнă. Никам та пулăшакан пулман. Унтан сиксе тăнă та, урайĕнче ўсĕр çывăрса выртакан хăнисене лăскаса вăратнă:

— Ей, тăрăр! Пулăшăр! Улпут ерех нумай ĕçнипе супса вилнĕ. Стрелок Иванпа Људмилă çурта çаратса тухса тарнă. Разбой!—кăшкăрнă.

Ўсĕр хăнисем тăра-тăра ларса, ним иккенне пĕлмесĕр, пĕр-пĕринчен ыйтнă:

— Мĕн çунаť?

— Ăçта пушар?

— Кама çаратнă?

— Кам вилнĕ?

Лизаветă Петровнă ăшĕ çавтери хытă çуннипе, çине-çинех ик-виç бакал ерех тултарса ĕçнĕ. Вара пĕр самантрах ăнтан кайса, упăшкипе йунашар тĕшĕрĕлсе ўкнĕ.

VIII

Тепĕр кунне пĕтĕм таврана тĕлĕнмеле хыпар сарăлнă: „Карташов улпут ерех ĕçсе вилнĕ. Стрелок Иванпа улпут кухарки хуçине çаратса тухса тарнă“. Çак хыпар сарăлнă-сарăлманах стражниксем Иванпа Људмилăна пикенсех шырама тытăннă.

Иван хăйĕн нимĕнле айăп пуррине те чухламан. Тĕрĕссипе унăн нимĕнле айăп та пулман. Çавăнпа та вăл Људмилăна тўрех хăйĕн килне илсе таврăннă. Мĕн пек телейлĕ пулнă вĕсем çак каç. Икĕ çамрăк чун пĕрне-пĕри йуратса тăранайман. Анчах вăл телей вăраха пыман, часах вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрнă.

— Тпру!—илтённĕ урамран сасартăк çилĕлĕ сасă. Иванăн чӳречи умне хура ăйăр кӳлнĕ çуна пырса чаранна. Ун çинчен виçĕ стражник аннă.

— Стрелок Иван килте-и?—кăшкăрса ыйтнă стражниксем.

— Килте,—тавăрнă Иван хăйулăн.

— Ах, Иван, чунăм, вĕсем мана санран уйăрса илсе кайма килчĕç. Ан парса йар,—хăраса ӳкнĕ Људмилă.

— Ан хăра, Људмилă. Вĕсем сана туртса илме тивĕçлĕ мар. Есĕ вĕт вăйпа мар, ху ирĕкĕпе ман пата килнĕ,—тесе лăплантарасшăн пулнă Иван.

Çук, Људмилă хăйне уйăрасса пĕтĕм чĕринчен сиснĕ, çавăнпа пĕтĕм пĕвĕпе халтăртатса чĕтренĕ.

—Есĕр мĕншĕн улпут çуртне çаратса тартăр?—хистесе ыйтнă пĕр стражникĕ.

Иван стражник çине урлă та тăрăх пăхса çавăрăннă.

— Епĕр унăнне йĕпне те илмен. Кирлĕ те мар,—тенĕ вăл.

Стражниксем çавăнтах Иванăн пӳртне ухтарма тытăннă. Анчах нимĕн те тупман. Унтан Иванпа Људмилăн аллисене хыçал ла туртса çыхса, улпут çуртне илсе кайнă.

Иванпа Људмилăран вăрах ыйтса-тĕпчесе тăман. Тепĕр куннех вĕсене сут умне тăратса, сут тунă.

Качака сухаллă, кăркка çăмарти пек чăпар питлĕ, çерçи сăмсалă сутйе Иванран ыйтнă:

— Есĕ хăна-ху айăплă тесе шултатăн-и?

Иван пуçне пăркаланă:

— Çук. Епĕ айăплă пулма вăрă мар. Епĕ пĕтĕм Ĕпхӳ кĕпĕрнинчи йатлă сунарçă,—тавăрнă вăл.

Унтан сутйе Људмиларан ыйтнă.

Лудмилă та Иван пекех пуçне пăркаланă:

— Çук, халиччен епĕ çынăн шăрпăкне те илсе курман,—татса хунă Људмилă.

— Суйатăр!—кăшкăрнă сутйе,—качака таки пек урипе тапса.

— Суйатпăр пулсан, пиртен урăх ыйтса ан тăрăр. Есĕр хуçа. Влаç сирĕн аллăрта. Мĕн тăвас тетĕр, çавна тума пултаратăр тенĕ Иван татăклăн.

Сут вăраха пыман. Сутйе пригăвăр вуланă.

— Стрелок Иван Павлович, çирĕм пĕр çулта, Меселпуç чăвашĕ. Карташов улпут патĕнче тарçăра пурăннă вăхăтра, улпутăн кухаркине хăй май çавăрса, хăйне йураттарнă. Иулашкинчен февралĕн 18-мĕшĕнче, каçхине, çуртра пурте çывăрса пĕтсен, улпут хаклă йапалисене пуçтараççĕ те, тухса тараççĕ. Çăвăншăн вĕсене патша саккунĕ тăрăх айăплас: пĕрремĕш—Стрелок Ивана вунă çула Çĕпĕре катăргăна ăсатас. Иккĕмĕш, улпут кухарки—Лђудмилăна —турра кĕлтуса çылăхне каçарттарма пилĕк çула мăнастыре йарас...

Лђудмилă çакна илтсен чăтса ларайман:

— Ай!—кăшкăрса йанă вăл, Ивана ыталаса илсе, — ан уйăрăр пире! Хуť те ăçта йарсан та пĕрле йарăр.

Çук, Лђудмилăн йăлăнни ахалех пулнă. Сут пригăвăрне пĕтĕмĕшпех пурнăçа кўртнĕ. Ивана—Çĕпĕре ăсатнă. Лђудмилăна мăнастыре хупса лартнă.

---

# С Ă Н Ч Ă Р

I

Вăл ушкăнта мĕнпурĕ вăтăр çичĕ çын ĕçленĕ. Пурте вĕсем кĕл тĕслĕ кăвак арестант тумтирĕсем тăхăннă. Вĕсен пуçĕсене çуррине бритвăпа хырнă, çурри, пуп çӳçĕ пек, вăрăм хулпуççи урлă каçса выртнă. Вĕсен урисемпе аллисенче сăнчăр чанкăртатнă. Айккинчен пăхсан, вăл çынсенчен çак пусмăр тĕнчи ахăлтатса кулнă пек туйăннă.

Вĕсем йаланах пĕр кĕвĕлĕ йурă йурласа, хăйсен йăвăр хуйхисене пусарнă:

Скрывается солнце за степи,
Вдали золотится ковыль.
Колодников звонкие цепи
Взметают дорожную пыль.
Динь-бом, динь-бом
Слышно там и тут
Нашего товарища
На каторгу ведут.

Ку йурра вĕсем çĕрле те, çинĕ чух та, тĕрмере хупăнса ларнă чух та, вырăнтан-вырăна куçарнă вăхăтра та, çул çинче те, ĕçленĕ çĕрте те—йаланах йурланă. Хăш чухне вĕсене йурлама чарасшăн пулнă, çук, вĕсем чарăнман. Пушшех кăшкăрса йурланă.

Ĕçлессе вĕсем пурте пĕр ĕç ĕçленĕ—прииск ра ылттăн çунă: пĕрисем шурăфран хăйăр чавса кăларнă, теприсем çав хăйăра тачкă çине тийесе, бутар çине кайса тăкнá. Бутар умĕнче иккĕн тăнă, вĕсем пырса тăкнă хăйăра кĕреçепе салатса йанă. Бутар çине çӳлтен шарлама пек шарласа шыв аннă, вăл бутар çинчи чуллă хăйăра айалала йухтарса антар-

нă. Бутар тĕпне хăнкăла пек йăлтăртатакан ылттăн пĕрчисем выртса йулнă.

Бутарăн икĕ йенче икĕ стражник пăшалĕсене хатĕр тытса, чĕркĕмĕл çумне купаланакан ылттăн пĕрчисем çинчен куçĕсене илмесĕр пăхса тăнă.

— Ну, ну, хăвăртрах ĕçлекелĕр, мĕн ăмансем пек çеç йăшăлтататăр!—васкатнă стражниксем арестантсене.

Арестантсем ним чĕнмесĕр хăйсен йăвăр—катăргă ĕçне ĕçленĕ. Стражниксем çине шурă куçĕсемпе çаврăна-çаврăна пăхнă. Шăлĕсене шатăр çыртнă. Анчах нимĕн те тума пултарайман. Ĕçлесен-ĕçлесен пуçĕсене çĕклесе пăхнă, каллех хăйсем тавра хĕçпăшаллă стражниксем тăнине курнă. Алли-урисенчи сăнчăрĕсем чĕрисене ыраттарса чанкăртатнă. Тарăхса çитнипе тарма шухăш тытнă, çук, ĕç тухман: хĕçпăшал, сăнчăр хытă сыхланă вĕсене. Хăшĕсем çав хуралçăсене пăхăнмасăр тарнă; хăшĕ хăталнă, хăшне çавăнтах йытă пек персе пăрахнă, нумайĕшне хуса тытса, тĕрмерен кăлармасăр пĕччен камĕрăна хупса усранă.

Тĕрме çтенисем çав тери çирĕп пулсан та, тытса чарайман, пурĕпĕрех кашни кун тенĕ пек пĕр çын, йе икĕ çын çухалнă; сăнчăрĕсем çеç тăрса йулнă, хăшĕ сăнчăрне те хăварман. Вĕсен вырăнне кашни кун çĕнĕрен-çĕнĕ çынсене хуса пынă. Малтан çурри пуçне хырнă, унтан алли-урине сăнчăр тăхăнтарнă, йулашкинчен çурăмĕ çине цифăр çырса хунă; вара чăн-чăн арестант пулса тăнă. Çынсене йат, хушамат тăрăх мар, çав çурăмĕсем çинчи цифăрсем тăрăх пĕлнĕ.

— Ку тайгаран епĕр пурĕ-пĕрех чĕрĕ тухас çук,— тенĕ хуллен, бутар умĕнче ĕçлекенсенчен пĕри.

— Тĕрĕс мар, пурне те вĕлерсе пĕтереймĕç. Хăшĕ те пулсан чĕрĕ йулма тивĕçлĕ,—тенĕ тепри ун çине çаврăнса пăхса.

— Тарас пулаť.

— Тĕрĕс калатăн. Урăх нимĕнле май та çук. Пурĕ-

пěр, йе пурнăç, йе вилěм,—мăкăр-мăкăр калаçса илнě арестантсем хăйсен хушшинче.

—Молчаť! Ан калаçăр! Каллех çав ухмахла политикă çинчен-и!?—пырě тěпне хырса ахăрнă стражник.

Арестантсем шăп пулнă. Кěреçисемпе хăйăра пăтратнă. Бутар çине шыв шарласа аннă. Арестантсем, ним шухăшсăр пек, хăйсен йуратнă йуррисене чăснă:

...Динь-бом, динь бом,
Слышно там и тут.
Нашего товарища
На каторгу ведут.

Стражниксем калаçма чарсан та, вěсем йурлама чарăнман.

II

Вăхăт кăнтăрла тěлне çитнě. Арестантсем апат валеçсе парасса кěтнě. Вěсене апат çын пуçне,—аламан ыраш çăнăхěнчен пěçернě виçě чěрěк кěренке çăкăр, пěр шыв курки йўçě купăста шўрпи панă. Шыва виçесěр ěçтернě. Анчах талăкне виçě хут: ир, кăнтăрла, каçхине, вылђăхсене шăварнă, пек бутар хěрне хуса антарса ěçтернě. Ытти вăхăтра, ěçес килнипе çунса вилсен те, ěçтермен.

Арестантсем стражниксем курман вăхăтсенче çеç вăрттăн ěçкеленě. Çавăн пек саккун пулнă: арестант вăрттăн шыв ěçнине курсан, ăна айăпласа, çав кун апатсăр хăварнă. Кăнтăрла пěр сехет канмали вăхăтра та кантарман—ěçлеттернě. Арестантсем çавăнтан хăраса, ěçес килсен те, вăхăтчен тўсме тăрăшнă.

Çав кун хěвел ытти чухнехинчен темиçе хут ытларах хěртсе пăхнă. Арестантсем апат çимен пулсан та, çăварěсем типнě, вěсем вăхăтчен тўсме тăрăшнă, сурçăкěсене пыр тěпěнчен кăларса, çăварěсене йěпетнě.

— Ох! — йăвăррăн сывланă хăшě-пěрисем. Пуçěсене çěклесе пăхнă, вěсем ěçлекен вырăна виçě йенчен çўлě ту, тăваттăмěш йенчен Ленă шывě хуплаcа тăнă. Стражниксем арестантсем çинчен куçěсене илмесěр сыхланă. Умěсенче шыв шарласа йухнă, анчах ăна выртса ěçме йураман.

— Ну, ну, васкăр, васкăр. Кăнтăрла çитет. Норма тултарăр. Унсăрăн апат памастăп,—тесе кăшкăрнă аслă стражникĕ.

Арестантсем тарлă çамкисене шăлса типĕтсе, нормисене тултарма тăрăшнă.

— Ох, çук тӳсейместĕп. Ăш çунса тухать! Апатсăр хăварсан хăварĕç, выртса ĕçетĕп, тенĕ бутар умĕнче ĕçлекенсенчен пĕри.

— Пĕр санăн çеç мар вĕт, пурсăмăрăн та ĕçес килет. Еçес-тĕк ĕçетпĕр пурсăмăр та. Çĕркĕ сăмах татнине мантăн-им? Ан тив, хăварсан пурсăмăра та апатсăр хăварччăр. Апла та, капла та пурĕпĕр,—тенĕ ун йулташĕ.

— Молчать! Каллех калаçма!—кăшкăрнă стражник.

— Йулташсем! Ĕçĕр пурте. Ан тив, пурсăмăра та апатсăр хăварччăр. Пурĕпĕр тăранмалăх çук вăл. Пире апла та, капла та вилĕм!—кăшкăрнă тепĕр вăйпитти хăйулă арестант. Хăй çавăнтах бутар хĕрне выртса лаша пек ланкăртаттарса ĕçме пуçланă.

Ăна кура ыттисем те аллисенчи тачкисене, кĕреçисене пăрахса, бутар патне кĕшĕлтетсе пынă.

— Сволăчсем! Ĕçме йурамасть!—стражниксем чупса çитсе арестантсене пăшал кучĕсемпе чышнă.

Бутар умĕнче ĕçлекенсенчен пĕри курать: стражниксем арестантсене хĕнемелипех хĕнеççĕ. Вăл тулса çитнĕ çиллине тытса чарайман. Тимĕр кĕреçине çавăрса тытнă та, çивĕчĕшпе пĕр стражник пуçĕнчен лартнă. Леш хайар саспа ахăрса йарса, бутар ăшне кĕрсе ӳкнĕ.

— Тарăр йулташсем!—йанăранă пĕр сасă.

Çавăнтах пĕр арестант сăнчăрне аллисемпе пуçтарса тытнă та, Ленă йеннеле чупнă. Ун хыçĕнчен тата темиçен сăнчăрĕсене чанкăртаттарнă.

Сасартăк пăшал сассисем пĕрин хыççăн тепри: ух! ух! кĕрленĕ. Арестантсем хăшĕ чупса пынă çĕртенех: ой!—тесе кăшкăрса йăвана-йăвана ӳкнĕ. Хăшĕсем вилĕмрен хăраса калле çаврăннă.

Пĕри çеç нимĕнрен те хăраман, вăл Ленă хĕрне

чупса пынă та тӳрех шыва чăмнă. Чăмнă вырăнта хăмпă пек кăпăксем çеç пăкăртатса тухса йулнă.

Икĕ стражник çырма хĕрне чупса çитсе, арестант чăмнă вырăна чылайччен пăхса тăнă. Çук, шыв çинче çын курăнман.

— Йытта йытă вилĕмĕ. Сăнчăрĕ шыв тĕпне туртса антарса кайрĕ пуль. Хăй шуйтана кĕрсе кайтăр, сăнчĕрĕ шел,—тенĕ стражниксенчен пĕри.

— Йурĕ. Аŧа апата. Кайран килсе шыраса тупатпăр та хывса илетпĕр сăнчăрне,—тенĕ тепри.

Вара çаврăнса утнă.

Ак, арестантсене пурне те пĕр çĕре пуçтарнă. Суса пăхнă. Виçĕ çын çитмен. Иккĕшне персе вĕлернĕ пулнă. Пĕри пуçĕпех çухалнă.

— Кам çук? Миçемĕш номĕр?

Списăк тăрăх тĕрĕсленĕ:

— Тăхăрçĕр тăхăрвун тăххăрмĕш номĕр! Стрелок Иван!

Çук, Стрелок Иван сасă паман.

— Иван Стрелок!

Сасă илтĕнмен.

Çав кун арестантсене апат паман, вĕсем каçчен çимесĕр, éçмесĕр ĕçленĕ.

### III

Стражниксем пăрахса кайсан, тепĕр пилĕк минутран шыв пакăртатса илнĕ.

— Уф!—çын пуçĕ курăннă. Иван шапа пек саркалanса ишсе çырма хĕрне тухнă. Ун-кун пăхкаланă, никам та курăнман. Вара сăнчăрне пуçтарса тытса, çырма хĕррипе, тумтирри тăрăх шыв тумлатса утнă.

Хĕвел хĕртсе пăхнă. Иван çырма хĕрринчен тухса, тайга вăрманĕ ăшнеле кĕрсе кайса курăнми пулнă.

Стражниксем апатланнă хыççăн, Иванăн ӳтне шыраса тупса, сăнчăрне хывса илесшĕн чылай шыва чăмнă. Çук. Тупайман.

— Шыв йухтарса кайнă пуль,—тенĕ те, урăх шыраман.

IV

Тайга. Çӳлеле пăхсан çĕлĕк ӳкмеле кедăр, чăрăш, пихтă вуллисем, хăйсен шӳреке тăррисемпе пĕлĕте хырса ларнă. Йĕри-тавра мăк, кăмпа, çĕрĕк йăвăç шăрши сăмсана çурнă. Ура айĕнче хăлаç çӳлĕшĕ, çил хуçса антарнă йывăç каскисем урлă та пирлĕ йăванса выртнă.

Иван çав каскасем урлă сăнчăрне чанкăртаттарса утнă. Ăçтала кайнă? Вăл ăна хăй те пĕлмен. Йалан шалала—тайга варринеле кĕнĕ пек туйăннă. Стражниксен аллинчен хăтăлнипе савăнса, вăл пĕр вăхăта çийессине те манса утнă. Шывлă вар курмассерен тăватуралачса тăрса, лаша пек ланкăртаттарса шыв ĕçнĕ. Икĕ çул хушши катăргăра пурăннă хыççăн, халĕ вăл тайга варринче пĕччен, выçă пулсан та ирĕккĕн сывланă. Уншăн хаљ тĕнче ирĕк туйăннă. Куккуксем авăтнă, шăпчăксем йурланă, тĕрлĕ хурт-хăмăр, тĕкĕлтурасем нăрлаçа вĕçнĕ. Вăл çав шăв-шав айĕнче йалан малала утнă.

Икĕ кун, икĕ çĕр пĕр ларса канмасăр утнă хыççăн, сасартăк ывăннă пек пулнă. Çийесси килсе кайнă. Кĕпçесем татса çинĕ. Пиçнĕ-пиçмен çырласем тата-тата хыпнă. Çук, çийес килнине лăплантарайман. Пуринчен ытла уринчи сăнчăрĕ кансĕрленĕ, вăл туратсене çакланса йăвана-йăвана кайнă. Тăрса силленнĕ те, татах малала утнă. Мел пулсан вăл сăнчăрне халех хывса ывăтса йарĕччĕ те, çук, нимĕн те тăвайман. Аптăранă йенне шăлĕпе кăшласа пăхнă, çук, пулăшман. Вăйĕ пĕтсе çитнипе йăванса кайса, пĕр вăхăта куçне хупса выртнă. Çавăнтах стражниксен аллинчен хăтăлни асне çитсе кĕнĕ те, каллех сиксе тăрса малала утнă.

Хĕвел тухнă, хĕвел аннă. Ир пулнă та, каç пулнă. Пилĕк талăк хушши пĕр çын та хирĕç пулман. Йулашкинчен Иван пĕтĕмпех выçăпа аптăраса çитнĕ. Пĕр каска урлă йăванса кайнă та, тăма та вăйĕ йулман.

— Ех, асран кайми, Људмилă, епĕ кунта асапланса çӳретĕп, есĕ ман пирки таçти мăнастирте хупăн-

са ларатăн пуђ. Епĕ ăна пĕлместĕп. Мĕншĕн епĕр пĕрне-пĕри йуратрăмăр? Мĕншĕн? Пирĕн йурату ырлăхшăн мар, хурлăхшăн çеç пулчĕ,—хăй тĕллĕн калаçса выртнă вăл. Ирĕксĕрех куççулĕ тухса, питçămартийĕсем тăрăх шăпăртатса йухнă. Вăл выртакан тĕлти йăвăçсем çине пĕр пар хура çăхан карăклатса пырса ларнă. „Тинех вилĕм çитрĕ. Кусем ман чун тухасса кĕтсе лараççĕ“ шухăшланă вăл. Пĕр вăхăта куçне хупса, çывăрнă пек пулса выртнă.

Нумай-и, сахали вăхăт иртсен, сасартăк йытă вĕрнĕ сасă илтĕннĕ. Иван куçне уçса пăхнă. Умĕнче, çине пăлан тирĕнчен çĕленĕ кĕрĕк, пуçне хĕрлĕ тилĕ çĕлĕк тăхăннă, аллине пăшал тытнă, сарлака питлĕ, лапчăкрах сăмсаллă, çĕçĕпе касса çурнă пек хĕсĕк куçлă пĕр çын тăнине курнă. Йытти Иван çине сиксе ўксе вĕрнĕ.

— Иван вăл çынна хăй хыçĕнчен стражник хуса çитнĕ пулĕ тесе шутланă.

— Ах, пўтсĕрсем! Каллех епĕ сирĕн аллăрта. Çук, халĕ ĕнтĕ есĕр мана ниçта та илсе кайаймăр. Мейĕр, çакăнтах персе вĕлерĕр. Çитĕ, урăх ан тарăхтарăр есĕр мана!—тесе, кăкăрне уçса хурса, сиксе тăнă.

— Ан хăра. Епĕ стражник мар!—тенĕ хуллен хĕсĕк куçлă çын.

— Кам тата есĕ пăшаллăскер?—ыйтнă Иван.

— Епĕ кунти сунарçă, бурйат,—тенĕ пăшаллă çын.

Иван ун çине мĕскĕн куçĕсемпе тинкерсе пăхнă,

— Ах, йулташ. Епĕ катăргă ĕçĕнчен тарнă çын: арестант. Хăтар мана, епĕ выçă вилетĕп,—тесе йăлăнса ыйтнă.

— Каламасан та куратăп есĕ кам иккенне. Аťа хам пата, ман йуртă айакра мар кунтан.

— Ай, йепле утса çитĕп-ши? Манăн вĕт утма мар, çип татмалăх та вăйăм йулман,—тенĕ Иван, тăнă çĕртен касса йанă йăвăç пек йăванса кайса.

Бурйат Ивана хулпуççийĕ çине вырттарса, хăй пурăнакан йурттине йăтса тавраннă.

Бурйатăн йурти тайга варринчи пĕр пысăк мар уçланкăри кӳлĕ хĕрринче пĕр пĕчченçи ларнă. Кӳлĕ тавра алла вĕреннĕ пăлансем йешĕл курăк çинче çӳренĕ. Кӳлĕ тĕлĕнче кайăк-кăвакалсем кĕтĕвĕпе вĕçнĕ.

Бурйат Ивана йуртă патне йăтса çитерсен, вĕсене хирĕç ашшĕ пекех лапчăк сăмсалă, хĕсĕк куçлă виçĕ ача сиксе тухнă.

— Урус, урус!—тесе калаçнă вĕсем хăйсен хушшинче. Ивана ăçтан тупни çинчен ашшĕнчен ыйтса пĕлнĕ. Ашшĕ ачисене каласа панă.

Унтан бурйат Иванăн алли-урисенчи сăнчăрне хывса илсе, ачисене выљама панă. Хăйне йурта илсе кĕрсе ĕçтернĕ-çитернĕ. Хăйĕн чĕлĕмĕнчен тапак турттарнă. Иван бурйатпа сăмала пек хура çӳçлĕ арăмне аллисенчен тытса тавтунă:

— Спаçипă сире, мана вилĕмрен çăлнăшăн!—Унтан хăй мĕнле майпа катăрга лексе, йепле тарса хăтăлни çинчен пĕр пытармасăр каласа панă. Бурйатпа арăмĕ пуçĕсене пăркалса итлесе ларнă. Ачисем сăнчăрне сĕтĕрсе çӳресе выљанă.

Пĕр ерне хушши Иван ниçта хускалаймасăр ĕçсе-çисе выртнă. Унтан бурйатăн пăшалне илсе сунара çӳре пуçланă. Кашни кун çĕклемĕ-çĕклемĕпе тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк тытса таврăннă Иван. Куншăн вара бурйатпа арăмĕ тем пекех савăннă.

—Епĕ лайăх стрелок шутланатăп бурйатсен хушшинче. Есĕ манран çĕр хут ирттерен—тесе мухтанă бурйат Ивана.

Вăхăт иртнĕ. Пурăнсан-пурăнсан, Иванăн çак тискер тайгаран тухса, хăй савнă Људмилăна шыраса тупса, ăна та ирĕке кăларасси килнĕ. Анчах тухма çул пĕлмен.

Пĕрре çапла сунартан таврăнсан, апат çисе ларнă вăхăтра, сăмах çаврăнăçĕ май:

— Ку вырăнтан Иркутск хули айакра-и—тесе ыйтнă Иван бурйатран.

— У-у-у... айакра. Тӳрĕрен кайсан пин çухрăм, тавра кайсан пин çурă,—тенĕ бурйат аллине сулса.

— Унта тухма çул пур-и вара?

— Пур. Анчах çул мар, сукмак кăна, çуран, йуланутпа çеç çӳреççĕ.

— Вăл çул айакра-и кунтан?

— Пĕр çирĕм çухрăм,—тенĕ бурйат. Анчах вăл çул хăш йенче иккене каласа паман, мĕншĕн тесен бурйат Ивана хăй патĕнчен йарасшăн пулман. Вăл сунара çӳресе питĕ пысăк усă панă ăна.

Çапла калаçнă хыççăн, Иван сунара çӳренĕ май кашни кун çав сукмака шыранă. Йулашкинчен тупнă.

Пĕр ирхине, ирхи апат çинĕ хыççăн, Иван ури çине тăнă та:

— Ну, тусăмсем, спаçипă сире мана вилĕмрен çăлнăшăн. Епĕ сире куншăн ĕмĕр-ĕмĕр манас çук. Ĕнтĕ сывă пулăр. Епĕ Иркутска тухатăп. Унтан хам çуралнă çĕршыва таврăнатăп,—тенĕ бурйатпа арăмне алллисенчен тытса.

Бурйат тĕлĕнсе кайнă.

— Есĕ вĕт унта тухма çул пĕлместĕн. Аташса кайăн та, йе выçă вилĕн, йе пĕр-пĕр тискер кайăк тытса çийĕ хăвна,—тенĕ бурйат, Ивана хăратса чарасшăн.

Епĕ аташас çук. Сукмак тĕлне пĕлетèп,—тенĕ Иван шанчăклăн.

Бурйат пуçне чиксе шухăша кайса тăнă. Унтан пуçне çĕклесе:

— Апла пулсан, кай хăв çуралнă çĕршывна. Епĕ чармастăп. Анчах сыхлан. Вăл сукмакпа стражниксем арестантсене хуса çӳреççĕ. Хирĕç пулсан, вĕсем сана каллех тытса кайма пултараççĕ. Ме, асăнмалăх хамăн пăшала парса йарам. Çул çинче кирлĕ пулĕ,— тенĕ бурйат, çтена çумĕнче çакăнса тăракан пăшалне илсе парса.

— Тавтапуç сана, тусăмçăм. Епĕ ку пăшала хам виличченех усрăп,—тенĕ Иван. Унтан бурйатпа арăмне, ачисене чуптуса уйрăлнă.

Иван йуртăран тухса кайса курăнми пуличченех, бурйат ăна алă сулса ăсатса йанă. Иванпа пĕрле су-

нара çӳрекен йытти сукмак çине çитиччеnex пынă. Тен йулман та пулĕччĕ. Анчах сукмак çине тухсан. Иван йытта пуçĕнчен шăлкаласа каланă:

—Ну, Соболь! Тавăрăн ĕнтĕ хуçу патне. Епĕ пĕччеnex кайатăп.

Йытă Иван çине мĕскĕн куçĕсемпе тилмĕрсе пăхнă та, унтан çаврăнса, килне йĕрпе калле йуртнă.

## V

Иван йытта курăнми пуличчен ăсатса йарсан, аварланă пăшалне тепĕр хут тишкĕрсе пăхнă та, сукмак тăрăх, кăнтăр йеннеле утнă.

Кун кайнă, çĕр кайнă. Çул çинче кайăк-кĕшĕк курсан персе илсе пĕçерсе çинĕ те, кăшт выртса кансан, каллех тăрса утнă. Йăвăç вулисем хушшинчи кукăр-макăр сукмак, вĕрен пек хыçала чăсăлса выртса йулнă. Çӳлĕ тусем, тарăн варсем урлă каçнă. Малта та, хыçалта та, айаккисенче те хура вăрман кашласа ларнă. Иван аллинчи пăшалне хатĕр тытса унтала-кунтала пăхкаласа малала утнă. Пĕр-пĕр тискер кайăк курсанах пеме хатĕр пынă. Анчах пĕр кайăк та хирĕç пулман. Умĕнчен мулкачсем çеç сиксе тухса, хӳрисене вăльт-вальт сиктерсе тарнă. Иван шик! шăхăрнă.

Виççĕмĕш кун утсан, сасартăк малта лаша тулхăрнă сасă илтĕннĕ. Иван тăп чарăнса итленĕ. Каллех çав сасă йанăранă. Иван çавăнтах сукмак çинчен пăрăнса, пĕр пысăк тункаta хыçне пытанса ларнă та, малала мĕн пуласса кĕтнĕ.

Кăшт вăхăт иртсен, малта икĕ йуланут курăннă. Вĕсем стражниксем пулнă, лашисем çинче пăшалĕсене хатĕр тытса ларнă. Икĕ йуланут хушшинче алли-урисене сăнчăрланă пĕр çын пуçне чиксе пынă.

„Стражниксем... Арестанта хуса килеççĕ. Мĕнле хăтарас? Вĕсем иккĕн, винтовкăсемпе. Епĕ пĕччен— дробовикпе çеç“, шухăшланă Иван.

— Ут, ут! Сволăч!—кăшкăрнă хыçалти стражник арестанта. Лаши пуçĕпе çурăмĕнчен чыштарнă.

Арестант стражник çине мĕскĕн куçĕсемпе çавăрăнса пăхнă, ним чĕнмесĕр, курпунне кăларса малала утнă. Вăл тайкаланнă, ун çумĕнчи сăнчăрĕ чăнкăртатнă.

Йуланутсем хăй тĕлне çитсен, Иванăн урăх шухăшласа ларма вăхăт йулман. Вăл пăшалне хулпуççийĕ çумне хунă та, хыçалти лаша çинче ларса пыракан стражнике шăп куçĕнчен тĕллесе у-ух! кĕрслеттернĕ. Пăшал сасси тайга тăрăх савăнăçлă çын пек ахăлтатса кулса саланнă. Вăл таçта инçетре-инçетре тепĕр хут ухлатса шăпланнă. Таврари кайăк-кĕшĕксем пар-р-р вĕçсе çĕкленнĕ.

Стражник хайар сасăпа мĕкĕрсе йарса, лаши купарчи урлă хыçалала лаплаттарса аннă. Лаши çиçĕм пек малала тапса сикнĕ. Иккĕмĕш стражник лашине пăшал кучĕпе чышса, пушă йĕнерлĕ лаша хыçĕнчен вĕçтернĕ.

Сăнчăрлă арестант пĕре хăранипе, тепре тĕлĕннипе, пĕре савăннипе ним тума пĕлмесĕр унтала-кунтала пăхкаласа тăнă. „Чăн-ши ку, тĕлĕкре-ши?" шухăшланă вăл. Хыçалала çавăрăнса пăхнă, çук, тĕлĕкре мар — чăн! Хăйне хыçалтан сыхласа пыракан стражник, персе пăрахнă кашкăр пек йун йухтарса, чунĕ тухас умĕн йулашки хут алли-урисемпе тапкаланса выртнă.

Пысăк тунката хыçĕнче Иван пăшалне каллех авăрланă та, сăнчăрлă çын патне утса тухнă:

—Ан хăра, халĕ ĕнтĕ есĕ ирĕкре.

—Есĕ кам пулатăн капла, мана хăтараканскер?—тесе ыйтнă сăнчăрлă çын.

Иван хăй кам иккене кĕскен каласа панă.

—Епĕ рабочи-шахтор. Мана патша сакунне хирĕç пынăшăн тытса вунă çула катăргăна ăсатрĕç,—каласа панă сăнчăрлă çын.

Иван ун сăмахне ĕненнĕ.

—Епĕ Стрелок Иван.

—Епĕ Йаковенко Павел.

Иван çавăнтах Йаковенко алли-уринчи сăнчăрне чулсемпе çапса ватса хывса илнĕ те ывăтса йанă. Унтан стражник çинчи тумтирне сӳсе илнĕ.

—Кирлĕ кунта кирлĕ пулĕ. Аўа хăвăртрах ку вырăнтан кайар. Унсăрăн леш хăтăлнă стражник çитсе систерсен, пирĕн хыçран шырама тухма пултараççĕ,— тенĕ Иван.

Вĕсем çавăнтах сукмакран пăрăнса курăнми пулнă. Сукмак çинче сăнчăр çĕлен пек авкаланса выртса йулнă. Çăхансем парлăн-парлăн: „кранк-кранк!“ кăшкăрса вилĕ тĕлĕнче йавăннă.

---

# ПĂЛХАВ ВĂХĂЧĔ

Елĕк вăл арман пуйан Ваçукăн пулнă. Халĕ ĕнтĕ колхозăн. Пайан унта çич сакăр çын çĕнĕ тулă тырри авăртма пынă та черет çитессе кĕтсе ларaççĕ.

Арман чулĕ майĕпен кăштăртатса çавăрăнать, вăлак тăрăх кăпăк пек шурă çăнăх пăкăлтатса йухса лар çине тулса пырать.

Арман мелникĕ Йăкăнат, кукăр чăпăклă чĕлĕмне чалăштарса хыпнă та, армана пынă çынсене вăтăр çул ĕлĕкрех пулнă пăлхав вăхăчĕ çинчен каласа парать. Лешсем, сывлăшĕсене кăлармасăр, шăпăрт итлесе ларaççĕ.

***

—Ку арман Ункă шывĕ çинче вăтăр-хĕрĕх çул хушши ĕнтĕ çакăн пек нимĕн татти-сыпписĕр хăлтăртатса ларать. Пĕчĕк çеç пулин те армантан нихăçан та çын татăлман: ир те каç та, каç та ир те йаланах тулли халăх пулнă.

Пайанхи пекех астăватăп: Йаппун вăрçи вăхăтĕнче, пĕрре çакнашкал калаçса ларнă вăхăтра, арман пўртне хамăр йалти Ваçли салтак килсе кĕчĕ. Хаљ кăна вăрçăран аманса тавăрăннă хăй. Çитсе кĕчĕ те çак Ваçли салтак пире сывлăх сунчĕ. Унтан вăрçăри пурнăç çинчен, çĕнĕ хыпарсем çинчен каласа кăтартма пуçларĕ.

Нумайччен итлесе ларгăмăр епĕр Ваçли салтак сăмахĕсене. Çав тери халапа ăста çынччĕ вăл. Халап тĕлĕшпе çеç мар, вăйă-ташă йенчен те йалта ăна çитекен çын çукчĕ. Çавăнпа та вăл пире йулашкинчен йурласа та кăтартрĕ, ташласа та савăнтарчĕ.

Нимĕнрен ытларах вăл йурласа панă йурă кăмăла

карĕ ун чух пире. Кĕввине те, сăмаххисене те халĕ те лайăх астăватăп... Васли салтак пире пурне те йурлама вĕрентсе хăварчĕ вăл йурра.

Ун чух çак арманах Уçăп Мĕтрийĕ çăнăх авăртма килнĕччĕ. Мĕтрийе пушшех кăмăла кайрĕ Васли салтак вĕрентнĕ йурă. Вăл тыррине авăртса пĕтерсе ула кĕсри çине утланса ларчĕ те, улăх тăрăх йалала, хаљ кăна вĕреннĕ йурра йанраттарса йуртгарчĕ. Илемлĕ йурă сасси кăна хумханса йулчĕ аслă улăхра:

Отпустили крестьян на свободу
Девятнадцатого февраля.
Только не дали землю народу.
Вот вам милость дворян и царей.
Нажимает земский начальник,
А урядник дышать не дает.
Поп пугает адом кромешным,
А сам последнюю копейку берет...

Анчах çав вăхăтра Çĕрпӳ хули йенчен урйадник йалала пынă мĕн. Вăл Мĕтрийе нимĕн те каламан, ун çине сивĕ куçĕсемпе чалăшшăн кăна пăхса иртсе кайнă. Усал йытă пек шăлне шатăр! çыртнă.

Мĕтри хăйĕн йуррине чăсса килне таврăннă. Урйадник старăстă хапхи умне пырса чарăннă.

—Кам вăл, ула лаша çине утланса çӳрекенскер?— тесе ыйтнă урйадник старăстăран.

Старăстă курман. Вăл нимĕн калама та пĕлмен:

—Пĕлместĕп. Пирĕн йалта ула лашалă çынсем нумай, господин урйадник,—тенĕ чĕтрекен сассипе.

—Пуçтар йалти пур ула лашалă çынсене,—хушнă урйадник.

Старăстă ăнланса илеймен:

— Ула лашисене те илсе килччĕр-и?

— Ухмах! Лашисемпе мĕн тăватăп епĕ. Мана çынсем кирлĕ,—çăварĕнчи сурчăкне пĕрĕхсе ахăрнă урйадник.

Пĕр вунă минутран вунпилĕк хресчен хурал пӳртне пуçтараннă.

— Ну, калăр! Кам сиртен пайан армантан тавăрăнчĕ?—ыйтнă урйадник, пурин çине те шăтарас пек пăхса.

Пĕри те чĕнмен. Пуçĕсене çеç пăркаланă.

— Мĕншĕн каламастăр, сволăчсем! Саламат çийес килет-им!

— Кам пулнă вара? Калăр,—пĕр-пĕринчен ыйтнă хресченсем.

— Молчаť! Чăвашла ан калаçăр! —урине тапса кăшкăрнă урйадник.

Хресченсем, çăварĕсене шыв сыпнă пек, шăп пулса тăнă.

— Паллаттарасшăн мар?! Пурпĕр паллăп. Утланса килĕр лашăрсене,—хушнă урйадник.

Хресченсем кĕпĕр тухса, йал тăрăх саланнă. Çилленсе çитнĕ урйадник хурал пӳртĕнче ларма-тăма вырăн тупмасăр, каллĕ-маллĕ уткаласа çӳренĕ. Старăстăна çĕрти-çӳлтине хăвармасăр вăрçнă, тĕрмене хупса лартассипе хăратнă:

— Сан куç умĕнчех вĕт революцилĕ йурăсем йурлаççĕ. Есĕ илтместĕн!

Пилĕк минут та иртмест, ула лашасем çине утланнă хресченсем, туй халăхĕ пек, хурал пӳрчĕ умне кĕпĕрленсе çитеççĕ.

Урйадник лашисене пăхса çавăрăннă. Паллайман, мĕншĕн тесен лашасем нумайĕшĕ пĕр пек ула пулнă. Куçĕсемпе пăхса паллайман хыççăн йĕнерчĕк вырăнĕсене аллипе сăтăра-сăтăра пăхнă. Йулашкинчен, алли çăнăхпа вараласан тупнă:

— А-а... Есĕ пулнă арманта. Сволăч!—Пĕтĕм вăйĕпе ахлатса, саламачĕпе пуç урлă çапнă Уçăпа.

Уçăп хайар сассипе кăшкăрса йанă.

— Кала! Кам вĕрентрĕ сана вăл йурра?—ахăрнă урйадник Уçăп çине тилмĕрсе.

Пĕр айăпсăр Уçăп, ним иккене пĕлмесĕр, ăнтан кайса тăнă. Ытти хресченсем кураççĕ: „айăплă“ çын тупăнчĕ. Лашисем çине утланса,чăлпар саланса пĕтнĕ.

Уçăп пуçĕ урлă тата ик-виçĕ хут саламат чăсăла-

чăсăла ансан, тӳсеймен, урйадник умне чĕркуçланса ларнă та:

— Господин урйадник, каçар. Епĕ арманта пулман. Унта ман ывăл пулнă,—тесе йăлăннă.

— А-а... Есĕ мар, сан ывăл?! Пар ăна, халех илсе кил!—урипе тапса йăвантарнă урйадник Уçăпа.

Уçăп сиксе тăрса, ула лаши çине утланнă та, ывăлне илме кайнă.

* * *

Мĕтри çавракас куçлă, чăмăр питлĕ, хура куçлă çамрăк каччă пулнă. Урйадник унăн ашшĕне саламатпа хĕненĕ пулин те, вăл урйадник умне хăйуллăн пырса тăнă.

— Есĕ пайан армантан таврăнтăн-и?—тесе ыйтнă урйадник.

— Таврăнтăм,—кĕскен тавăрнă Мĕтри.

— Камран вĕрентĕн есĕ вăл йурра?

— Никамран та мар, хамах шухăшласа хыврăм. Епĕ вăл йурра ахаљ чухне çеç мар, апат çиме ларас умĕн те йурлатăп, мĕншĕн тесен çав тери илемлĕ вăл. Ăна пĕр епĕ çеç мар, пирĕн пĕтĕм йалти çамрăксем йурлаççĕ...

Урйадник тӳсеймесĕр, урлă мăйăхне каллĕ-маллĕ сăтăркаласа, айалти тутине шăлĕ хушшине хĕстерсе çыртнă:

— Илтетĕн-и? „Пĕтĕм йалти çамрăксем йурлаççĕ?! Пăлхану! - старăстă йеннеле çавăрăнса пăхнă урйадник.

Старăстă хирĕç ырă та, усал та чĕнмен. Пысăк айăплă çын пек пуçне чиксе, çĕреле пăхса тăнă.

— Йурĕ, халь епĕ пĕччен... Кайран тата килĕпĕр. Сирĕн йала кăшт вĕрентес пулать. Унсăрăн ытла аса пуçланă,—тенĕ те урйадник, лаши çине утланса, йалтан тухса кайнă.

* * *

Вăл çул Çĕрпӳ таврашĕнче тырă начар пулчĕ, çавăнпа хресченсем чылайăшĕ выçă аптăратчĕç. Мака-

çей кĕлечĕсĕнче тырă йăтăнса выртнă. Анчах ăна никам та пырса тĕкĕнеймен.

Выçă аптăранă çынсене пĕрер пăт та пулсан çĕнĕ тырăччен салатса пама ыйтрăмăр йалти старăстăран, çук, усси пулмарĕ.

— Епĕ макаçей кĕлетĕнчи тырра хуçа мар, старшина хушмасăр пĕр пĕрчĕ те салатса пама пултараймастăп,—тавăрчĕ старăстă.

Старшинаран ыйтрĕç. Вăл:

— Епĕ земски начаљниксĕр пуçне нимĕн тума та пултараймастăп,—тесе тавăрчĕ.

Çапла, „хуçи йыттине, йытти хӳрине" тенĕ пек пулчĕ. Вăхăчĕ пурĕ-пĕр малалах шурĕ. Хресченсем пĕтĕмпех выçă аптăраса çитрĕç. Малала чăтма май йулмарĕ.

Пĕр ирхине никам чĕнмесĕрех хурал çуртне халăх пуçтарăнчĕ.

— Макаçей кĕлетĕнчи тырра салатса илес,—кăшкăрма тытăнчĕç выçăпа аптăранă хресченсем.

— Йал йышсем! Начаљниксем хушмасăр ан хăтланăр! Тем курса тăрăпăр,—чарасшăн пулчĕç тутăраххисем.

— Ним те пулмĕ. Салатăр!—кăшкăрчĕ Ваçли салтак.

Çав кун макаçей кĕлечĕн çăрине ватса, тыррине выçă хресченсене салатса пачĕç.

Старăстă хура ăйăрне кӳлнĕ те, Çĕрпӳ хулине йалти ĕç çинчен пĕлтерме вĕçтернĕ.

Хресченсем хулпуççи урлă тырă хутаççисене йăтса армана утрĕç.

— Ыйтса-йăлăнса тăмала тата вĕсене. Тахçанах çапла кирлĕ пулнă.

Ик-виçĕ ерне хушши тырă çуккипе чарăнса ларнă арман, каллех халтăртатса çавăрăна пуçларĕ.

* * *

Тепĕр кун хĕвеле хура пĕлĕтсем хупласа илчĕç. Пурин мăрйинчен те тĕтĕм мăкăрланса тухаŭ. Йал

çине вĕри çăкăр шăрши сарăлчĕ. Вăл кун йалта никам та выçă пулман—пур те тутă.

Кăнтăрла çитнĕ çĕре йала исправник, унпа пĕрле тăватă стражник персе çитрĕç.

Çавăнтах пуху пуçтарчĕç.

— Ну, кам хушнă тăрăх есĕр макаçей кĕлетĕнчи тырра салатса илтĕр? — кăшкăрса ыйтрĕ исправник.

— Никам хушмасăрах. Хамăр!—сасă илтĕнчĕ халăх хушшинчен.

— А-а... хăвăр! Старăстă, пар вунă çын. Кăтартам епĕ вĕсене „хамăр" мéнне. Стражниксем тытăр!—кăшкăрчĕ исправник, пĕрре старăстă çине, тепре стражниксем çине пăхса.

— Йулташсем, ан парăнăр!—йанраса тухрĕ халăх хушшинчен тепĕр сасă.

Пуху халăхĕ тинĕс хумĕ пек пăтранма пуçларĕ. Стражниксем çынсене тытса, аллисене хыçалала çыхасшăн пулчĕç. Анчах ĕç тухмарĕ. Хресченсем вĕсене хăйсене çавăрса илсе, пир çапнă пек хĕне пуçларĕç. Исправник курат—ĕç начар. Тӳрех чӳречерен сиксе тухса, лаши çине утланат те, йалтан тухса тарса хăтăлат.

Тăватă стражнике вĕлерес пек хĕнерĕç. Вĕсен хĕçпăшалĕсене туртса илсе, хуçкаласа, арман пĕвине ывăтрĕç.

— Тахçанах çапла кирлĕ вĕсене!—кавассăн калаçма тытăнчĕç хресченсем.

Çак хыпар пĕтĕм таврари йалсене сарăлчĕ. Унта та хресченсем никам хушмасăрах макаçей кĕлечĕсенчи тырăсене выçă аптăракансене салатса панă.

Пăлхав вăйланса пычĕ...

* * *

Нумайах та вăхăт иртмерĕ,—йала 47 стражниксем пĕр трук килсе çитрĕç. Вĕсем йалаункă пек çавăрса илчĕç те, пăлхава йертсе пыракан пуçлăхсене кăтартса пама ыйтрĕç.

Хурал çурчĕ патне халăх пуçтаранчĕ. Анчах нихăшĕ те никам çине тĕллесе кăтартмарĕç.

Сасартăк халăх хушшинчен Çимун ывăлĕ Карачăм мала сиксе тухрĕ те:

— Йулташсем, мĕн пăхса тăратпăр? Аттăр хирĕç тăрар! — тесе кăшкăрса, стражниксем йенне ле чупрĕ. Çавăнтах йĕркесĕр пăшал сассисем йанраса кайрĕç. Чи малта чупса пыракансенчен: Васли салтак, Мĕтри, вĕсемпе пĕрле тата тăватă çын çĕре йăванса ÿкрĕç.

Çак хăрушлăха курсан, ыттисем пĕрерĕн-пĕрерĕн кутăн чакса, саланса пĕтрĕç.

Çапла ултă çынна вĕлерне хыççăн, стражниксем йала хăйсен аллине çавăрса илсе, пăлхавра малта пыракансене, çичĕ çын тытса кайрĕç...

Вăт йепле пулнă ун чухнехи пурнăç, — терĕ мелник, хăйĕн сăмахне вĕçлесе. — Çак пайанхи куна курăпăр тесе сунман та, ĕмĕтленмен те. Халĕ ак хамăра хамăр хуçа, пайан пурăнмалăх çăкăршăн çеç мар, хамăр пурнăçа телейлĕрех те илемлĕрех тăвассишĕн кĕрешетпĕр"...

Арман чулĕ йерипен хăлтăртатса çавăрăнать, шурă тулă çăнăхĕ кăпăкланса вăлак тăрăх лар ăшне тулса пырать...

# ИККĔМĔШ ХУТ

## I

Нумай çулсем иртрĕç ĕнтĕ. Хăшне-пĕрне мана та пуçланă. Анчах Çĕпĕре, çĕнĕ çĕре куçса пырсанах, йалтан-йала, пуртă, пăчăкă йăтса çÿренине, пуйансем патĕнче хăма çурса, пÿрт, кĕлет вађђи пурасем пуранине, шаршан вуттисем каснине часах манас çук. Халĕ те куç умĕнче мĕкéлтетсе тăраççĕ çав иртнĕ мĕлкесем.

Вăхăт—çĕртме уйăхĕ. Çанталăк тÿсме çук шăрăх, çĕр çине çара уран пуссан, вутпа пĕçернĕ пек пĕçерет. Епĕр пĕр йалта ĕçлеремĕр те, тепĕр йала куçрăмăр. Тÿррипе каласан йăлăхтарчĕ ку йалта. Ĕç хакĕ питĕ йÿнĕ. Тепĕр йалта хаклăрах пуђми тесе шутлатпăр.

Манăн йулташ Ерхип калама çук шутникскер. Таçтан та сăмах тупса калаçма пĕлет вăл... Итлесе çеç тăр. Унпа пĕрле ĕç патĕнче те, çул çинче те, нихăçан та кичем мар. Вăл сана хуй те мĕнле йăвăр хуйхă вăхăтĕнте те, йалан шутлĕ сăмахсемпе ирĕксĕрех култарать те, савăнтарать те. Хăш чухне Ерхип хăйĕн сăмахĕсемпе питĕ йăлăхтарса çитерсен вара:

— Чарăн ĕнтĕ. Кăшт чĕлхÿне кантар,—тесе чарасшăн тăрăшатăп.

— Чĕлхен шăмми çук. Чăн сăмахăн суйи çук. Çут тĕнчен хĕрри çук, мĕнчул утсан та каллех çав вырăна çавăрăнса пыратăн. Калаçса йул. Вилсен пурпĕрех чĕлхÿне хуртсем çисе йарĕç. Калаçмасан, йурламасан, ташламасан, епĕр çуртсăр-йĕрсĕр, йал-

тан-йала сĕтĕренсе çӳрекенсем, тарăхсах вилĕпĕр,— тесе тавăрать Ерхип.

Уй тăрăх утатпăр. Сăртсем, варсем урлă каçатпăр. Хĕвел вут пек пĕçерет. Хресченсем уйра пĕрерĕн-пĕрерĕн сапаланса иккĕмĕш хут çĕртме сухи тăваç-çĕ. Типĕ çĕртен пĕлĕт пек хура тусан çĕкленет. Йă-ран тăрăх чавка-кураксем карласа вĕçеççĕ.

Ак, пĕр хресчен лашине тилхепипе карт-карт турт-каласа ани вĕçне тухрĕ. Пире курсан лашине чарчĕ те, суха пуçне пăрахрĕ. Унтан тусанпа витĕннĕ тар-лă питне кĕпи çанни вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ те:—турт-мали пур-и, тăвансем?,—тесе ыйтрĕ.

— Пур,—терĕ Ерхип. Унтан ăна йенчĕкрен тапак кăларса пачĕ.

Хресчен кукăр чăпăклă чĕлĕмĕ ăшне пӳрни вĕçĕпе тапак пусса тултарчĕ те, çăварне хыпса халаплама тытăнчĕ:

— Ăçтисем пулатăр есĕр? Ăçтала çул тытатăр

— Пирĕн çуралнă йал та, тăван килçурт та çук. Епĕр вырăнтан вырăна çӳрекен платниксем кăна,— тавăрчĕ Ерхип.

— Сирĕн çине пăхатăп та, савăнатăп епĕ,—тавăр-чĕ хресчен.

— Мĕн, пит илемлĕ-им вара епĕр?

— Çук унпа мар. Ирĕккĕн пурăнатăр есĕр.

— Ирĕккĕн? Ав, чавка-кураксем те ирĕккĕн вĕçсе çӳреççĕ. Ха-ха-ха...—савăнăçлăн кулчĕ Ерхип.

Хресчен пĕр вăхăта чĕнмерĕ. Чĕлĕмне тивертсе, пит çăмартийĕсене шалала туртса, чăпăкне ĕме пуç-ларĕ:

— Ирĕккĕн пурăнакансем пур тĕнчере.

— Камсем?

— Пуйансем.

— Есĕ вара пире вĕсен çумне çыпăçтарма шутла-тăн-и?

— Çу-ук. Тапакран ирĕк пурăнатăр есĕр...

— Тапакран аптăрасах каймастпăр вара... Хамă-рăн пулмасан вăрласа та тупатпăр.

Хресчен Ерхип çине тĕлĕнсе пăхрĕ:

— Вăрлама? Вăрлама сылăх вĕт.

— Пуйансенне вăрланăшăн ним те сылăх çук... Вĕсем хăйсем пирĕнне куçкĕретĕнех вăрлаççĕ...

— Вăрлаççĕ,—ирĕксĕрех пăшăлтатса илчĕ хресчен.

— Вăрлаççĕ çав. Ак, час вăрçă хускалмала. Мĕншĕн тетĕн есĕ ăна? Пире ĕççыннисене çаратма. Ак есĕ кунĕн-çĕрĕн çĕр ăшĕнче чакаланатăн. Çапах санăн çиме çук.

— Мĕнле вăрçă тата?

— Германипе вăрçă хускалать.

— Каллех вара пире пуçтарса кайĕç-ши вăл вăрçа?—тĕлĕнсе, чĕлĕмĕн чăпăкне шăлĕпе çыртса тăрса йулчĕ хресчен пирĕнтен.

## II

Йал патне çитсе, укăлча хапхине кĕрес чух, Ерхип пуçне çӳлеле çĕклесе, сăмси шăтăкĕсене сарса йытăла нăш-нăш шăршларĕ.

— Ку йалти хуçа арăмĕсем пелмен пĕçерсех кĕтсе илеççĕ пулас пире. Шăршласа пăх-ха. Пит тутлă шăршă кĕрет,—терĕ Ерхип сурчăкне çăтса.

— Пелменĕ лекмесен, шăршине шăршласа та пулин тутă пулăн,—терĕм куларах.

— Епĕ кăшт çителĕклĕ çын пулсанах пелмен çеç çисе пурăнăттăм. Ех, йурататăп та çав пелмене! Пуринчен ытла мăнтăр сурăх какайĕнчен тунине,—тутисене йапăл çуласа илчĕ Ерхип.

Çапла пелмен çинчен каласса йал вĕçĕнчи, улăмпа витнĕ, çĕмрĕк чӳречи кантăкĕсене хăма татăкĕсемпе сапласа пĕтернĕ пӳрт тĕлне çитрĕмĕр.

Сасартăк çил урса туллаша пуçларĕ. Çĕр çумĕнчен хĕллехи тăман пек хура тусан çĕкленчĕ. Çанталăка хаљ татăлса анас пек хура мăнтăр пĕлĕт хупласа илчĕ. Йăлтăр та йалтăр çиçĕм çиçет. Кĕрлеттерсе аслати авăтса йачĕ. Çавăнтах шултра çăмăр пĕрчисем пăт-пат ӳке пуçларĕç.

— Çил-тăвăл иртсе кайиччен, айта çак пӳрте кĕрсе ларар. Хамăр пек чухăн çын. Сăмах çавăрăнăш май, йалта хăш пуйанăн ĕç пуррине ыйтса пĕлĕпĕр,—терĕ Ерхип.

— Айта!

Епĕр пӳрт патне чупса çитсен, шалтан пĕр хĕрарăм вилес пек кăшкăрни илтĕнчĕ.

— Ай, Прохăр, тархасшăн ан вĕлер!..

Çав вăхăтра пирĕнтен инçе те мар шартлаттарса аçа çапрĕ. Витререн тăкнă пек шултра çăмăр çава пуçларĕ.

— Кĕр хăвăртрах йĕпениччен,—чупса çитсе пӳрт алăкне уçса йатăм. Мана хирĕç çӳçне-пуçне салатнă хĕрарăм тухса ӳкрĕ алăкран.

— Иртен-çӳренсем, тархасшăн çăлăр. Вĕлерет вĕт!—аллисене хăлаçласа, Ерхипе мăйĕнчен ыталас илчĕ хĕрарăм.

Хĕрарăм хыçĕнчен çатма аври йатнă, урине акаци пушăтĕнчен тунă çăпата сырнă, хĕсĕкрех куçлă, лапчăк сăмсалă арçын пурсуй йытă пек йалтлатса, сиксе тухрĕ:

— Ых, йытă ами! Есĕ иртен-çӳрекенсенчен пулăшу ыйтма-и-ха... Ак сана!—çатма аврине çӳлеле çĕклесе хĕрарăма пуçĕнчен çапма тăчĕ. Анчах çапаймарĕ. Аллинчен йарса тытса, çатма авăрне туртса илсе, айаккала ывăтса йатăм.

— Мĕн, есĕ ухмахланатăн-им! Йытă мар вĕт вăл, çатма аврипе хĕнеме.

— Аа-а... Есĕ, бродйагă, ман арăм хутне кĕме-и! Вон, тухса кайăр ман килкартишĕнчен!—Хресчен çаннисене тавăрса, чышкисене чăмăртарĕ, чĕлĕм туртнипе сарăхнă шăлĕсене шатăртаттарса çыртса, мана çапма тăчĕ.

— Хуллентерех. Санăн пулсан, манăн та хирĕç тавăрмали пур. Ак, кăна куратни-и!—чышка чăмăртаса сăмси умне илсе пытăм епĕ.

Лапчăк сăмсан хĕсĕк куçĕсем чаларса кайрĕç. Те манран хăранипе, те çиллипе, кăвакарнă тутисем

С·24132·

тăрăлтатса чĕтреççĕ; шăлĕсем сивĕ тытнă çыннăнни пек хире-хирĕç шакkaççĕ. Çăмăр витрелесе çăвать. Ура айĕнчен шарласа шыв йухать. Епĕр йанк уçă выртакан алăк умĕнче йытăсем пек харкашса тăратпăр. Лапчăк сăмса шыва чиксе кăларнă чăхă пек йĕп-йĕпе: çӳçĕ пĕрчисем тăрăх шакăртатса шыв йухать; улача кĕпе ӳчĕ çумне çыпăçса ларнă. Пĕрре пăхсан вăл çав тери мĕскĕн çын пек туйăнать. Тепре пăхсан калама çук вăйлă та, хастарлă сăнлă курăнать. Анчах ăна чухăн пурнăç хăй аллипе çавăрса илнĕ те, мăйĕнчен пăвать. Çавăнпа ун сасси харăлтатса çеç тухать.

Пӳрт ăшĕнчен ача-пăча сасси чĕтренсе тухать.

— Мĕншĕн хĕнетĕн-ха есĕ арăмна? Мĕн айăп турĕ вăл сана? Кала-ха!

Лапчăк сăмса пире килкартишĕнчен хуса кăларма вăйĕ çитессине шанмарĕ пулас. Çавăнпа ирĕксĕрех лăпланчĕ. Унтан хăйĕн хурлăхне калама пуçларĕ:

— Калама та çук намăс вĕт, тăвансем... Калама та... Виçĕ ача амăшĕ пулнă. Халличен епĕ ăна çапма мар, чĕрне хурипе те тĕртсе пăхман. Усал сăмахпа каласа вăрçман. Халĕ, халĕ, мĕн турĕ вăл мана... Курман пулсан татаччĕ. Куç умĕнчех вĕт, куç умĕнчех. Мăшкăл!—çак хурлăхлă сăмахсем ун кăкăрĕнчен ирĕксĕр нăйăлтатса хĕсĕнсе тухрĕç. Тен, ун куççуль те тухрĕ пуль. Анчах питне çăмăр çапса çунипе палăрмарĕ...

— Мĕн турĕ вара вăл сана куç умĕнчех?

Лапчăк сăмса пĕрре вăтаннипе, пĕрре çиллипе куçĕсене мăч-мăч хупса илчĕ те чĕтрекен пӳрнисемпе пĕр кăвак сăрпа сăрланă, икĕ хутлă çӳрт çине чăсса кăтартрĕ:

— Ав куратăр-и çав тимĕр витнĕ çурта?

— Вара вăл çурт мĕнтен айăплă?

— Çурчĕ мар. Хуçи. Çиме пĕтсе çитрĕ. Çĕнĕ тырăччен пĕр-икĕ пăт кивçен ыйтма кайрăм. „Парăп, каçхине арăму килтĕр", терĕ. Вара епĕ тав туса тухса килтĕм. Каçхине арăма хутаç йăттарса йатăм тырă

илме. Хам ун хыçĕнчен: „мĕншĕн-ха вăл хама памарĕ, арăма пыма хушрĕ“, тесе шухăшласа, сыхлама кайрăм. Хӳме çурăкĕнчен пăхса тăратăп. Арăма кĕлете тырă виçсе пама илсе кĕчĕ те алăкне шатлаттарса питĕрсе хучĕ... Калама та намăс вĕт, тăвансем. Калама та-..

Тинех ăнланса илтĕм. Ав мĕншĕн хĕнет иккен вăл арăмне.

— Кунта вĕт сан арăму айăплă мар. Вăл — пуйан айăплă...

Лапчăк сăмса мана хирĕç чĕнмерĕ. Куçĕсемпе çĕреле пăхса, шăлне çеç çыртрĕ.

Чылай вăхăт арăмĕ айăплă марри çинчен каласа ăнлантарнă хыççăн, упăшкин кăмăлĕ çавăрăнчĕ пулас:

— Пăлаки, иртен-çӳрекенсене пӳрте илсе кĕрсе, хăна ту,—терĕ вăл арăмĕ çине ăшăн пăхса.

— Прухăр, каларăм вĕт, епĕ айăплă мар, тесе. Ху та куртăн. Кăшкăрасран çăвара пĕр ывăç çăнăх тултарса хучĕ те, сывлаймасăр чут антăхса кайаттăм...

— Йе, çитĕ, Пăлаки, пĕрре пулнă ĕнтĕ. Калла çаврăс çук. Тен хăçан та пулсан пирĕншĕн те праçник çитĕ-ха,—терĕ арăмне калаçма пӳлсе.

— Айтăр, пӳртеле кĕрĕр, иртен-çӳрен тăвансем... Халĕ те есĕр пултăр, унсăрăн тен çапса та пăрахнă пулĕччĕ. Тавтапуç сире,—пĕтĕм кăмăлĕнчен тавтурĕ хĕрарăм пире.

— Чухăнлăх вăл çапăçтарать те, вăрçтарать те.

Кĕтĕмĕр. Пӳртре тултинчен те ытларах пылчăклă хутăшлă тумла шапăртатса йухать. Чӳречи шăтăкĕсенчен пăшăлтатса çил кĕрет. Нӳхрепри пек чĕрĕ те, йăвăр шăрш сăмсана çурать. Урай варринче пĕтĕ кĕсре пек саркаланса ларакан кăмаки çинче, виçĕ ача чĕрĕпсем пек хутланса лараççĕ. Куççуљпе шывланнă куçĕсем шăши вучĕ пек йăл-йăл курăнаççĕ, пирĕн çине шăтарса пăхаççĕ.

Пăлаки, упăшки çăлкаласа тăрмаланă çӳçне-пуçне тирпейлесе тутăрпа туртса çыхрĕ те, унтан хуранне çуса, чей ваљљи шыв çакса йачĕ.

Çил-тăвăллă çăмăр хĕвелтухăçнеле кĕрлесе иртсе кайрĕ. Анчах çăмăр иртсен те, пӳртре тата тахçанччен шапăртатса тумла йухрĕ.

Хуранти шывĕ вĕресен, Пăлаки ун ăшне пĕр ывăç матрушке курăкĕ йачĕ. Унтан хуранĕнчен тӳрех сăра куркисемпе ăса-ăса илсе сĕтел çине лартрĕ.

— Хăнасем, пирĕн ним те çук та ĕнтĕ, ан ӳпкелĕр, матрушке чейĕпе те пулин хăна тăвам. Сĕтел хушшинеле сиксе ларăр-ха,—пĕтĕм кăмăлĕнчен савса сĕнчĕ пире.

— Çăкăр пулнă пулсан тата аван пулнă пулĕччĕ те, çук. Ларăр-ха, хăнасем. Ан тиркĕр пирĕн апата,—терĕ Прухăр, арăмне пулăшса. Унтан хăй сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ те, сăра куркине пӳрни вĕçĕсем çине лартса, хулăм тутисемпе вĕрсе, лĕрĕплеттерсе сыпа пуçларĕ вĕри шыва.

Ерхип пĕрре Прухăр çине, унган ман куçран тинкерсе пăхрĕ.

— Кăлар хамăрăнне,—терĕм Ерхип çине пăхса.

Ерхип хулпуççийĕ урлă çакăнса тăракан сăран сумкинчен кулач пек шурă хăпарту кăларса хучĕ:

— Инке, çĕçĕ тупса пар-ха. Шывĕ сирĕн, çăкăрĕ пирĕн. Пĕрне пĕри хăна тăвар.

Упăшкипе арăмĕ пĕр-пĕрин куçĕсенчен тинкерсе пăхса илчĕç. Кăмака çинче шăпах ларакан ачисем йăнăша пуçларĕç. Уша-йупи çинче выртакан кушак йалтлатса сиксе анчĕ те мйав-мйав!.. кăшкăрса, сĕтел айне кĕрсе ларчĕ. Пӳртре çăкăр шăршине сиссен, çтена çумĕнче ларакан шăнасем те нăйласа вĕçе пуçларĕç. Кăмака трупи çумĕнче купаланса ларакан таракансем те тĕрлĕ май кĕшĕлтегсе саланчĕç.

— Есĕр иртсе-çӳрекенсем пулсан та, пиртен пуйан. Епĕр çуртлă-йĕрлĕ пурăнсан та, нихăçан кун пек çăкăр çимен ,—терĕ Прухăр.

Пăлаки вăрахчен çĕçĕ шырарĕ, анчах тупаймарĕ:

— Епĕр тахçантанпа та çăкăр касса курман та, çавăнпа çĕççи те таçта выртать,—хăй тĕллĕн мăкăртатса каласса илчĕ Пăлаки кăмăлсăр.

— Хамăрăнне тупаймасан, кӳрше кайса илсе кил,— хушрĕ вăл арăмне.

— Ан ҫӳре, инке. Ҫĕҫĕ пулмасан, хуҫкаласа та ҫийĕпĕр,—чартăм хуҫа арăмне.

Ҫавăнтах Ерхип хăпартăва хуҫкаласа ҫичĕ татăк турĕ те сĕтел ҫине хучĕ:

— Лар, инке, ху та пирĕнпе ҫиме. Ачасене те пĕрер татăк пар.

— Тавтапуҫ, ан чăрманăр.

Ачисем кăмака ҫинчев пĕринчен пĕри ăмăртмала сиксе анса, сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕҫ те, хăйсен пайĕсене ҫавăра-ҫавăра тытса, васкаса кавле пуҫларĕҫ.

Пăлаки хăйĕн пайне кăшт хуҫса илсе астиврĕ те, йулашкине тутăр татăкĕпе чăркесе пуҫтарса хучĕ.

Матрушке шывĕпе йĕпетсе апатланнă хыҫҫăн, епĕр йала ĕҫ шырама тухса кайрăмăр.

— Иртсе-ҫӳренĕ чух кĕрсе тухăр. Малашне пĕлĕшлĕ пулăпăр,—алă тытса кăларса йачĕҫ упăшкипе арăмĕ пире.

— Пиччесем, ыран татах хăнана килĕр,—кăшкăрса йулчĕҫ ачисем.

— Епĕр те начар пурăнатпăр, пиртен те начар пурăнакансем татах та нумай,—терĕ Ерхип урама тухсан. Ку сăмахсене вăл шӳтпе мар, пĕтĕм чĕринчен каларĕ.

— Пĕр тĕнчере—ҫĕр тĕслĕ пурнăҫ: пĕрисем ырă кураҫҫĕ, теприсем выҫă лараҫҫĕ, — килĕшрĕм Ерхиппе.

## III

Унтан вара нумай уйăхсем, ҫулсем, ҫурхи шыв пек кĕрлесе, йухса иртрĕҫ ĕнтĕ. Германђ вăрҫинче пултăм. Револђуци хускалчĕ. Унта хутăшса кăшт та пулсан рабочи класа пулăшрăм. Коммунисла парти ĕретне ҫырăнтăм. Халĕ ĕнтĕ ĕлĕкхи пекех йалтан-йала пуртă, пăчăкă йăтса ҫӳреместĕп. Манăн кăсйара „уполномоченный“ тесе пĕлтерекен хут выртать.

Кăçал çуркунне, çурхи ака кампани иртерме кайрăм пĕр района. Района çитиччен пĕр пысăк йал уйĕ урлă иртме тӳрĕ килчĕ. Уй ĕлĕкхи пек: варĕсем, тусем, сăрчĕсем улшăнман. Анчах уйри çулсен ĕлĕкхин тĕсĕ те йулман. Ĕлĕк ку çулсем çинче хресченсем мĕнчул урапа ватнă пулĕ? Мĕнчул лаша тарĕ йухнă пулĕ? Халĕ „Молотăв“ савăтĕнчен тухнă автомобил, шыв çинчи кимĕ пек, çемçен чӳхенсе йухса пырать. Ĕлĕк анасем хушшисенче йăрансем чăсăлса выртатчĕç. Çав татăк-кĕсĕк анасем çинче хресченсем пĕчченĕн-пĕчченĕн нăрăсем пек чакаланаччĕç. Халĕ пырăр та курăр: анасен хушшисенче пĕр йăран та курăнмасть. Таçтан-таçтан тинĕс пек хуп-хура уй сарăлса выртать. Çав хура уй тăрăх вунă-вунпилĕк трактăр умлă-хыçлăн карласа пыраççĕ.

Малта пысăк йал курăнать.

— Ку мĕнле йатлă йал?—тесе ыйтрăм хама леçме пыракан шофĕртен.

— Ĕлĕк ăна Ивановкă тенĕ. Халĕ Прохăрăвкă теççĕ,—ăнлантарса пачĕ манпа йунашар ларакан шофĕр.

— Мĕн пирки-ха кивĕ йатне улăштарса, çĕнĕ йат панă?

— Унта Прохăр йатлă пĕр ватă партизан пурăнать. Çавăн йатне хунă.

Прохăр йатне асăнсан, çав иртнĕ вăхăтсем каллех аса килчĕç. Ых, йепле ирсĕр вĕсем! Вĕсем çинчен çырма мар, асăнас та килмест те, анчах халĕхипе иртнине танлаштарса пăхасшăн çеç епĕ çак калавăн малтанхи пайне çыратăп.

— Çав Прохăр чăваш халĕ те сывă пурăнать-и-ха?

— Сывă çеç мар, хурçă пек çирĕп старик-ха. Колхозра председатĕл пулса ĕçлет,—савăнăçлă кулса илчĕ шофĕр.

Вĕр-çĕнĕ, тăррине тимĕр витнĕ, пысăк чӳречисем умĕсене чĕнтĕр чаршавсем карнă пысăк çурт пăлтăрĕ умне çитсе чарăнчĕ автомобил...

— Кĕрсе апатланса тухар,—терĕ шофĕр машинине ĕçлеме чарса.

Çав вăхăтра кăлкан пек шурă сухаллă, кăкăрĕ çине хĕрлĕ çăлтăр орденĕ çакнă, çирĕп сывлăхлă старик, уринчи çĕнĕ сăран аттине чĕрик-чĕрик чĕрĕклеттерсе утса пычĕ.

— Ку уполномоченнăй. Ку колхоз председателĕ— Прухăр йулташ. Паллашăр,—терĕ шофĕр кабинкăран тухса.

— Çав Прухăр пулсан, епĕ унпа тахçанах паллашнă. Аван-и?—алла чăсрăм старик йеннеле.

Шурă сухал ман куçран пăхса илчĕ те, пуçне калле-малле пăркаларĕ:

— Епĕ сире малтанхи хут куратăп, йулташ.

— Йăнăшатăр. Епĕр сирĕнпе иккĕмĕш хут курăшатпăр. Астăватăн-и матрушке чейĕпе шурă хăпарту çинине?..

Старик çĕрелле пăхса, чылай вăхăт шухăша кайса тăчĕ. Унтан пуçне çĕклесе:

— Есĕ пултăн-и-ха вăл? Леш шутник йулташĕ ăçта ĕçлет? Сывă-и?— савăнăçлă кăшкăрса йарса, алла чăмăртарĕ.

—Вăл 1914-мĕш çул Германђ вăрçине кайнăранпа тавăрăнман. Те вилĕ, те чĕрĕ... хыпар-хăнар илтĕнмест.

— Лайăх çынччĕ,—вăрăмăн сывларĕ старик кăкăрĕ тулли.

— Ну, каласа пар старик. Мĕнле пурăнатăн? Ачасем сывă-и?.. Карчăкку...

— Ачасем: асли—инженер, шахтăра ĕçлет, вăталăххи—учителĕ, ачасене вĕрентет. Ак ку, кĕçĕнни—шофĕр, чул сарнă çулсем тăрăх автомобилсене чуптарать. Пурсăмăр та ĕçре. Хам колхозра председатель. Карчăк ачасен йаçлинче... Ку, пирĕн колхоз столовăйĕ. Айтăр, кĕрсе апатланăр...

Старик малтан, епĕ ун хыçĕнчен утса кĕтĕм...

Çав кун епĕ унпа иккĕмĕш хут курнăçрăм.

---

# КУТĂН КУÇМА

Унăн тĕп йачĕ Куçма. Вăл йат çумне тата мĕншĕн „кутăн“ сăмах çыпăçтарса лартнă? Ун çинчен ним те калама пултараймастăп вара. Те вăл унăн хушамачĕ, те ахаљ çеç çапла калаççĕ ăна. Пĕлместĕп. Мĕншĕн тесен епĕ вăл йал çынни мар. Куçма çинчен çынсем каласа панă тăрăх çеç пĕлетĕп. Куçма вăл Канаш районĕнчи пĕр чиркўлĕ чăваш йалĕнче пурăнаť. Йалĕн йатне кăтартмасан та, вулакан хăйех чухласа илĕ, тесе шанатăп. Тата Куçма пек çынсем вĕсем ытти йалсенче те сахалах мар-ха.

Куçма вăл ытти çынсем пек пĕрле пуçтарăнса калаçса, канашласа ларма, тата пĕрлешсе ĕçлеме йуратакан çын мар. Вăл йалан упала, пĕччен пурăнма тăрăшаканскер пулнă.

Пĕлетĕр—ĕлĕкхи вăхăтра, халђхи пек пĕрлешўлĕ, колхозлă хуçалăхсем пулмасан та, çапах çынсем вăхăт-вăхăт та пулсан пĕрлешсе ĕçленĕ: пĕччен вăй çитеймен — йăвăр ĕçсене ниме туса пĕрне-пĕри пулăшнă.

Куçма вара çынсем патне нимене кайман, хăй те пуçтарман. Ăнсăртран кам та пулин нимене йыхăрма пырсан:

— Санăннисĕр пуçнех, ман хамăн та ĕç çителĕклĕ,—тейейсе хунă, йыхăрма пынă çын çине пăхмасăр.

— Халĕ есĕ мана пулăшсан, кайран епĕ сана пулăшăп. „Алă алла çăваť“ тенĕ авалхи ватăсем...

— Ман ниме туса, çынсене тăрантма ытлашки çăкăр-йашкам çук, —тавăрнă Куçма сиввĕн.

Йыхăрма пынă çын кăмăлсăр пулса:

— Кутăн çуралнă,—тенĕ те, вăрçса тухса кайнă.

— Вĕреннĕ ансата. Ĕçĕсене ниме пуçтарса ĕçлеттерсе, кайран килĕрен-киле халлап йарса çӳреме. Кахал патшисем,—вăрçса тăрса йулнă Куçма.

„Çӳпçине кура хупăлчи“ тенĕ пек, хăйне кура, Куçман арăмĕ те хăй пеккийех тупăннă. Куçма ашшĕпе амăшин пĕртен-пĕр ывăлĕ пулсан та, авлансан, пĕр уйăхранах, ăна арăмĕ:

— Айта уйăрăлса тухар. Мĕн вĕсемшĕн ĕçлесе, вĕсене тăрантса пурăнмала. Хамăршăн-хамăр çурт-йĕр пуçтарар,—тесе хĕтĕртме тытăннă.

Арăмĕн сăмахĕсене хирĕç пыман Куçма. Вара уйрăлса тухнă.

Анчах ывăлĕпе кинĕ уйăрăлнишĕн ашшĕ çав тери çилленнĕ. Çавăнпа та пĕр чĕрне хури тăршшĕ те йапала паман. Мĕн пурĕ те арăмĕн ашшĕ панă икĕ çулхи пушмак-пăруне çеç çавăтса тухнă. Йулашкинчен çав пушмак пăруне сутса, укçипе йупах тыха туйанса йанă.

Вăл çул Куçма, çав йупахĕпе суха туса—çурпилĕк тырă акса хăварнă. Вăл çурпилĕкне сухаласа акни çинчен çакна каласа хăварас пулать: Куçман йупахĕ çав тери ырхан пулнă; шăммисем саланса кайасран—тирĕ анчах тытса тăнă. Йăран тăрăх виççĕ йарса пуснă та чарăннă, виççĕ йарса пуснă та чарăннă. Куçма йупахĕ тавра пĕлĕт пек чакак-кураксем карласа вĕçнĕ. Утса пынă çĕртех çурăмĕ çине ларса, вăрăм сăмсисемпе таккама пуçланă. Куçма вĕсене пушшипе хăратса вĕçтерсе йанă. Çынсем нумайăшĕ çурхи ака пĕтереççĕ. Куçма ерне ытла сухалать пулсан та, çуррине те сухаламан-ха. Тата анана сухаланипе çеç мар, ăна акса сӳрелес те пулать. Каплипе ĕçлесен вăл ăна, утта тухиччене сухаласа акĕ.

Чухлатăр-и, йепле кутăн вăл. Ашшĕн икĕ лаша. Çук, Куçма ун патне пулăшу ыйтма кайман, кайасшăн та пулман.

Тепĕр кунне пăхаççĕ: ак тамаша!.. Хай Куçма, йупахĕпе йунашар арăмне пичевлесе йанă та, сухана

сĕтĕреççĕ; хăй хыçалтан чышса пырать. Пырсан-пырсан, шик! шăхăрса:

— Но-но!—кăшкăра-кăшкăра йарать. Пушипе çат çапать. Йупахĕ хӳрине вальт çĕклесе пăтратать. Арăмĕ хăйне лекесрен хăраса, хыçалала çаврăна-çаврăна пăхать. Çулпа иртекен çынсем йури чарăнса, Куçма асапланни çине пăхса тăраççĕ:

— Ак кутăн çуралнăскер. Йепле вăл никамран та пулăшу ыйтасшăн мар. Пăхăр-ха, пăхăр, арăмне пичеве кӳлнĕ вĕт,—тĕлĕнеççĕ пĕрисем. Теприсем пĕççисене çапса, хырăмĕсене йăваласа ахăлтатса кулаççĕ.

Куçмашăн намăс таврашĕ çук. Вăл çаврăнса та пăхмасть. Пĕрех йупахне пушипе тивретет. Сухине хыçалтан чышать:

— Но-но!

Çапла асапланса Куçма çурпилĕкне сухаласа пĕтерсе, акса, сӳрелерĕ. Ĕçне пĕтерне хыççăн, пуçĕнчи çĕлĕкне хывса, хĕвел тухăçнеле пăхрĕ те:

— Тавтапуç турра!—тесе сăхсăхрĕ.

Анчах çак çурпилĕк историйĕ Куçма арăмĕ—Кулинешĕн ĕмĕр-ĕмĕрне асăнмалăх тăрса йулчĕ, мĕншĕн тесен вăл шăп çав вăхăтра йăвăр çын пулнă. Суха, сӳре сĕтĕрсе хура тара ӳкнĕ хыççăн, сивĕ çăлтан выртса шыв ĕçнĕ. Çавăнтан вара труках чирлесе ӳкне, ултă уйăхри ачине пăрахнă. Ача пăрахнипе Кулине тем пек кульанса хуйхăрнă.

— Ан хуйхăр. Халь çурт-йĕр çавăриччен ача-пăча пулмасан та аван. Епĕр çамрăк-ха. Кайран та çуратса ĕлкĕрĕпĕр,—тесе лăплантарнă Куçма арăмне.

Кулине упăшкин сăмахĕсемпе килĕшнĕ. Малашне йăвăрлă пуласса кĕтнĕ.

## II

Вăхăт малала шунă. Кунсем, уйăхсем, çулсем иртнĕ. Анчах Кулинен кĕтни ахалех пулнă: мĕн чул пĕчĕк ача аллине тытса курасси килсен те, урăх вара йывăр çын пулман. Йалан ăшпа аптăра-аптăра

ӳкнĕ. Вăхăт-вăхăт икшер-виçшер кун вĕри кăмака çинче йăванса выртнă. Тухтăр таврашне çӳремен. Йăланах: „Ыратсан-ыратсан иртсе кайĕ-ха“, тесе пурăннă. Час-часах йӳмăç карчăка чĕнсе варне шăлтарнă. Вĕрнĕ-сурнă шывсем те ĕçкелесе пăхнă. Çук, усси пулман. Йулашкинчен, пит аптăраса çитсен тин тухтăр патне кайнă.

— Вăрах. Вăхăт иртнĕ. Малашне есĕ йăвăр çын пулса ача çурагас çук,—тесе татса калана тухтăр.

Çавăнтан вара ĕнтĕ Кулинен аллине ача тытса йуратас шанчăкĕ пĕтнĕ. Вăл ĕмĕрлĕхе тӳрленмеле мар, суранлă çын пулса йулнă. Хĕр чух панулми пек илемлĕскер, хаљ типĕтнĕ шăрттан пек типсе хăрса кайнă, кукăр кĕвенте пек курпун сиксе тухнă, хырăмĕ шалала пĕрĕнсе кĕнĕ. Çулĕ ытла нумайах мар пулсан та, питçăмартийĕсем пĕркеленсе, куçĕсем путса ларнă, пичĕ çине карчăк сăнĕ çапнă.

Ача-пăча çуккипе, Куçмапа Кулине чĕпĕсĕр хур аçипе ами пек тăлăхăн пурăнса иртереççĕ ĕмĕрĕсене. Пурнăçĕсенче йăпатакан çук. Ĕçлеççĕ, кунне-çĕрне пĕлмеççĕ. Йалта пуринчен ир хире кам тухса кайаť? Кам пуринчен каçа йулса таврăнаť? Куçмапа арăмĕ. Камшăн ĕçлеççĕ вĕсем? Вĕсен пуçтарнă мулĕсем кама йулĕç хăйсем вилсен? Ун çинчен вĕсем шухăшламаççĕ-ха.

Уйăрăлса тухнă чух ашшĕ ним те паман пулсан та хăйсем тăрăшса ĕçленипе ик-виçĕ çул хушшинче çурт-йĕр çавăрса, выљăх-чĕрлĕх туйанса, вăтам пурнăçпа пурăнаççĕ. Тыррисем çĕнĕрен-çĕнне çитсе пыраççĕ. Патшалăх умĕнчи парăмсене вăхăтлă тӳлесе татаççĕ.

— „Çынсем пурте колхозра, есĕр мĕншĕн кĕместĕр?“ —тесен, Куçма:

— Çынсен çумĕнче пирĕн мĕн ĕç? Вĕсем хăйсемшĕн, епĕр хамăршăн пурăнатпăр. Пире çынăн кирлĕ мар. Колхоза кĕрсе çыншăн ĕçлеме епĕр ăсран тайăлман-ха,—тейейсе хураť Куçма кĕскен.

— Унта кӗрсе ӗҫлеме пирӗн хыҫран чупса ҫӳре кенсем „анне, мемме“ кӑшкӑракансем ҫук,—тесе таврат Кулине.

Анчах, ҫакна каласа хӑварас пулать. Куҫман „пире ҫынӑн кирлӗ мар“ тенӗ сӑмахӗсем пӗртте тӗрӗс мар. Пӑхӑр-ха, пӳртне лартнӑ чух вӑл пӳрт пӗренисемшӗн пӗр пус та укҫа тӳлемерӗ, патшалӑх вӑрманӗнчен ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе вӑрласа турттаратчӗ.

Мӗншӗн патшалӑх вӑрманне вӑрлан? тесе ыйтсан:

— Мӗн, ҫӑварна каран? Хысна вӑрманӗ шел-им сана? Есӗ те турттар! Кам чарать сана!—тейейсе хуратчӗ.

Ҫапла вӑл Куҫмапа арӑмӗ. Хӑйсенне ҫынна парасшӑн мар та, ҫынӑнне, тӳрӗ лексен, пӑрахсах хӑвармаҫҫӗ. Пӳрнисем хӑйсене май кукӑрӑлаҫҫӗ.

Лӑпкӑн пурӑнаҫҫӗ Куҫмапа арӑмӗ, халиччен ҫын ӗҫне ӗҫлемен. Йалан хӑйсен кил таврашӗнче йавӑҫаҫҫӗ. Ачи-пӑчисем пулмасан та, пӗр-пӗринпе пит вӑрҫса-туллашсах каймаҫҫӗ. Анчах, урампа пӗр-пӗр ача иртсе кайнине курсан:

— Ах, пирӗн те ҫавӑн пекки пулсанччӗ,—хаш! хашлатса илет Кулине.

Куҫма час-часах вара: „ухмах арӑмӗпе мухтанать“ тенӗ пек:

— Ман арӑм пек ӗҫчен арӑм пирӗн йалта та ҫук!—тейейсе хурать сӑмах ҫаврӑнӑҫӗ май.

Колхоза кӗресси ҫинчен Куҫмапа Кулине шухӑшласа та пӑхман-ха:

— Ан тив, пурӑнччӑр. Ӗҫлеччӗр пӗрле. Колхоз вӑл пире кирлӗ йапала мар. Епӗр хамӑршӑн хамӑр хуҫа!—тесе ӑнлантарать арӑмне. Арӑмӗ те ун сӑмахӗсемпе килӗшет.

Куҫмапа арӑмӗ йал хушшине тухса ҫӳремеҫҫӗ. Пухусенче нихҫан та пулман. Йалсовет председателӗ Куҫмана курсан час-часах:

— Мӗншӗн есӗ нихӑҫан та совета пырса ҫаврӑнмастӑн?—тет.

— Мӗн тӑвас ман унта? Епӗ мӗн кирлине тӳлесе

пĕтернĕ,—тесе, председатĕл çине пăхмасăр, пăрăнса кайат.

„Ах, тимĕр пăрçа пек хытă. Вăт кутăн собственник ăçта вăл“—тесе шухăшлат председатĕл.

Куçма çаврăнса пăхмасăр утат малала.

— Ав, Кутăн Куçма пырат!—тесе пӳрнисемпе тĕллесе, йĕрĕнсе кăтартаççĕ колхозниксем.

Куçма илтсен те илтмĕш пулса утат.

Тĕрĕс. Халиччен Куçмапа арăмĕн пурнăçĕ ăнса пынă: акнă тырри-пуллисем чиперех ӳснĕ; пур пек зылђăх-чĕрлĕхĕсем пурăннă. Хутран-ситрен, хăйсем аллисем çитсех кайман çĕрсенче, çынсене те тара тыткаласа ĕçлеттеркеленĕ. Çавăнпа та вĕсем пит аптрасах пурăнман. Хăйсенни хăйсене çитсе пынă. Колхоз йеннеле çаврăнса пăхасшăнах пулман. Пурăннă упала, ĕçленĕ лашала. Ырă тумтир тăхăнса курман. Йалан пуйасшăн тăрăшнă. Мĕн тăвас тетĕн?... Ун пек пĕччен пурăнса пуйасшăн тăрăшакансем вĕсем çеç, пĕр Куçмапа арăмĕ çеç пулнă тесе ан шутлăр. Вĕсене çĕр, пин, вунă пин те тупма пулнă. Вĕсен пурин те шухăшĕсем пĕр пекрех-ха: малтан пĕр лаша, пĕр ĕне, унтан иккĕ, унтан виççĕ, унтан кĕтĕвĕпех тăвасшăн тăрăшнă. Анчах вĕсен шухăшланă пек тухман. Урăхла. Чăнах, хăшĕ-пĕрисем пуйнă. Нумăйĕшсем çука йулнăçемĕн йулнă, виççĕмĕшсем, йалта пурăнма мел пулманнипе хуласене, хапрăк-савăтсене тухса кайса ĕçлекенсен шутне йышлăлантарнă. Çапла вăл пĕччен хресчен пурнăçĕ. Шыв çинчи кимĕ пек чӳхенет.

Клас кĕрешĕвĕ вирлĕн пырат. Çав вăхăтрах пурнăç улшăнат, хресченсем пĕчеккĕн-пĕчĕкĕнех колхоза кĕрсе пĕтеççĕ. Пĕччен пурăнакансен шучĕ сахалланнăçем сахалланат.

Куçмапа арăмĕ те пурнăçпа йытăпа кушак тулашнă пекех тулашаççĕ. Анчах нимĕн те тума пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен пĕччен. Пурнăç вĕсенчен вăйлăрах. Пусат-пусатех. Мĕн чул кĕрешсен те çийеле

тухма пултараймаççĕ, йалан пурнăç айне пулса йулаççĕ. Мекĕрленеççĕ. Ахлатаççĕ. Йăвăр.

— Ых, мĕншĕн-ха ку капла?—пуçне çĕклесе, çамка çинчи тарне кĕпи аркине тавăрса шăлса типĕтет Куçма, пит тарăхса çитнĕ вăхăтсенче. Анчах ун ыйтуне хирĕç никам та тавăрмасť. Пăхаť, йĕри-тавра —пĕччен. Арăмĕ те чĕнмест. Вăл шухăша кайнă.

Куçман акнă тыррисем колхоз тыррисенчен инçех те мар. Пăхаť Куçма: колхоз тыррисем витĕр çĕлен шуса тухмала мар—çăра, хăмăш пек çўлĕ, пучахĕсем шит тăршшĕ вăрăм. Ак, унăн, çĕртен шăтса тухнă та, сарăхса ытса ларнă, пучахĕсем тўмме пек, çил çинче вĕл-вĕл вĕçсе лараççĕ:

— Мĕншĕн-ха ку капла? Епĕ те вĕт вĕсем пекех ĕçлесе акнă, — вырма чарăнса, хăй тĕллĕн тарăхаť Куçма. Унтан пĕрре хăйĕн çурпилĕкĕ çине, тепре колхозăн вĕçĕхĕрисĕр, таçтан сарăлса, кашласа выртакан хирĕ çине пăхса тăраť тĕлĕнсе.

— Вĕсем вĕт трактăрла сухаласа, тимĕр сўресемпе сўрелесе, çейăлкăпа акнă. Епĕр суха пуçĕпе сухаласа йăвăç сўрепе сўреленĕ. Тен çавăнпа-и? Тен пирĕн анасем кивелнĕ? Вĕсем тислĕк тăкнă, — хуллен пăшăлтатса тăраť вăл арăмĕпе йунашар.

Куçма арăмĕ çине пуçне пăрса, йăвашшăн пăхаť. Ак çурпилĕкин хăш тĕлне çурлапа вырса, хăш тĕлне аллисемпе çăлса пĕтерчĕç. Суса пăхрĕç, мĕн пурĕ çĕр те виçĕ кĕлте. Колхозăн çакăн чухлĕ вырăнта пилĕк сурат—пилĕкçĕр кĕлте. Тата вĕсен кĕлтисем шултрарах та, вăрăмрах та. Куçман çĕр кĕлти пĕр лав пулаť. Колхозăн—иккĕ, йе ытларах та...

Куçмапа арăмĕ çурпилĕкне вырса пĕтерсен, кĕлтисене сурат туса тăмарĕç. Тўрех урапи çине тийерĕç те, лашине кўлсе, килнеле уттарчĕç.

Каç пулса килет. Арăмĕ лаши пуçĕнчен çавăтнă. Куçма хăй, кĕлтелĕ урапи тўнсе кайасран хăраса, айаккинчен аллисемпе тытса пыраť. Пырсанпырсан:

— Но, но!...—лашине аллипе сулса хăратаť.

Лаша хӳрине валЂт ҫěклесе пăтратať, васкаса утаť.

Ак пěр тăвăр кěперлě вар. Шăп кěпер урлă каҫсассăн кăшт тайлăк вырăн пур. Ěлěк вăл вырăн тикěс пулнă, халě трактăр ҫӳреме пуҫланăранпа, унăн шăллă урапи чакаласа пăснă.

— Лашана хуллентерех уттар. Чалăш вырăна ҫитрěмěр,—кăшкăрса илчě Куҫма арăмне.

— Тпру!—лашине чарасшăн пулчě Кулине. Лаши хирěҫнě пек пушшех хăвăрт утрě. Кěлтелě урапа ӳсěр ҫын пек кайлă-майлă сулкаланса, тӳне пуҫларě. Куҫма тӳнтересшěн мар пулса тармакланаť.

— Ай-й!.. Чар лашана,—кăшкăрса йачě вăл. Анчах Кулине лашине тытса чараймарě. Урапа вăЂт ҫеҫ йăванса, Куҫмана пусса выртрě. Лаши турти хушшинчен тухса кайса, йăванса ӳкрě.

Кулине хăранипе нимěн тума пěлмесěр урапа тавра чупса ҫаврăнчě. Унтан пěрре лаши патне чупса пыраť, тепре урапине ҫěклесе упăшкине кăларасшăн тăрмашаť. Ҫук, нимěн те тума пултараймасť. Лаши йăванса ӳкнě, — харăлтатаť. Куҫма кěлтелě урапа айěнче вилěм сассипе ахлатаť...

— Ах, мěн тăвас-ши!—ик пěҫҫине шарт ҫапаť Кулине. Унтан каллех урапине ҫěклесе тăратасшăн тăрăшаť. Ҫук, урапа хускалмасť те. Пăхаť йěри-тавра, никам та ҫук. Кулине ним тăвайман йенне пěчěк ача пек ěсěклесе йěрсе йачě:

— Ай, пулăшăр!..—хăй ҫӳҫне хăй ҫăлаť вăл.

Ҫук, никам та пулăшмасť. Тен Куҫмапа лаши вилнě те пулěччěҫ. Анчах ҫав вăхăтра, вěсен телейне пула тевě пекех, пучах пуҫтарма кайнă колхоз пионерěсен отречě йурласа пырса ҫитрě:

„Епěр ҫамрăк паттăрсем,
Харăс утатпăр.
Пěрре, иккě! Малала—
Пурнăҫ тăватпăр".

— Отрйад, стой! Мěн пулчě, инке? Мěншěн йěретěн?—Кулине умне йăпăр-йапăр пырса тăчě вожатăй.

— Ах, ачамсем, тархасшăн пулăшăр. Ав, вилет вĕт Куçма...

Пионерсем çавăнтах урапана кăткă пек çавăрса илчĕç. Кулине шывланнă куçĕсене те шăлса типĕтме ĕлкĕреймерĕ. Хатĕр! Урапана тăратса лартнă. Лашине тăварса кӳлнĕ. Хăрах ури сыппи сикнĕ Куçмана урапи çине улăхтарса вырттарнă.

Кулине савăннипе нимĕн тума пĕлмесĕр пионерсене тыта-тыта чуптăвать:

— Тавтапуçах сире, ачамсем, тавтапуç...

Пионер отрйачĕ, Куçмапа арăмне пулăшрĕ те, каллех ĕретленсе тăрса малала утрĕ:

„Ленин йалавне
Çӳлерех çĕклер.
Пĕрре, иккĕ! Малала—
Пĕрлешсе ĕçлер".

Куçмапа Кулине пионер отрйачĕ çине тахçанччен пăхса тăчĕç.

— Кулине!

— Мĕн?

— Ах, ура ыратать.

— Мĕн тăвас ĕнтĕ ман? Çын айăплă мар вĕт. Хамăр кутăн пирки. Иксĕмĕр те чире кайрăмăр: епĕ ăшсăр пултăм. Есĕ урасăр йултăн. Малашне мĕнле пурнăпăр-ши?

— Çук, епĕ урасăр мар! Ман уран сыппи çеç сикнĕ. Вăл часах тӳрленĕ,—урапа çинчен сиксе анса, арăмĕ патне уксакласа утса пычĕ Куçма.

Кулине упăшки çине тèлĕнсе пăхрĕ:

— Есĕ мĕн, ухмахлантăн-им? Ма ман çине çав тери тинкерсе пăхатăн? Курман-им?

— Кулине, итле. Вĕсем пулăшмасан вĕт епĕ вилеттĕм. Вĕсем çăлчĕç мана. Мана намăс.

— Тĕрĕс.

— Айта, уттар лашана. Кĕлтене хамăр анкартине мар, колхоз анкартне пушатар. Лашана киле мар. колхоз картине леçсе йарар. Килĕшетĕн-и есĕ çапла?

— Епĕ тахçанах çапла шухăшланă. Анчах сан

сăмахăнтан тухма пултарайманнипе çеç çак куна çиτиччен пуранна.

— Айта. Но-о...

* * *

Ирхине колхозниксем пăхаççĕ: анкартинче пĕр урапа кĕлти ларать.

— Кам? Хăш бригадă тийесе килнĕ? Никам та пĕлмест.

— Ак тамаша! Куçма лаши колхоз картинче апат çисе тăрать.

— Ăçтан килсе кĕнĕ вăл? Кăларса йарас,—лашана хăвалаççĕ коҥухсем. Лаша нимпе те ытти лашасенчен уйăрăласшăн мар. Çав вăхăтра Куçма майĕпен утса пырса кĕчĕ:

—Ан хуса кăларăр, йулташсем. Епĕ те сирĕнпе пĕрле.

Кăшт тăрсан Кулине пычĕ.

— Иксĕрте-и?—колхозниксем ункă пек çавăрса илчĕç упăшкипе арăмне.

Тинех Кулине хăйĕн пĕччен лĕхĕ пĕтнине сисрĕ... Ун йĕри-тавра ача пăча, шăв-шав.

Халĕ ĕнте Куçмана „Кутăн Куçма" тесе чĕнмеççĕ, «Куçма Илйич» теççĕ.

# ТИМĔРÇĔ ТИМУХХА

## I

Шалт тĕлĕнмеле çак Тимĕрçĕ Тимуххаран... Ашшĕпе амăшĕнчен çуралнă пулсан та, чĕрне хури тăрш-шĕ те ашшĕпе амăшне хуман теме йурать. Пĕвĕ кĕвенте пек çÿлĕ; хăй çирĕмрен иртнĕ, çапах та, нихăçан та çынсем пек таса, тирпейлĕ çÿремест. Питне-куçне Тимухха мунчаран-мунчана çеç çăвать; мунчана та йе уйăхра, йе икĕ уйăхра пĕрре кăна кайса çăвăнать. Амăшĕ сывă чух, ывăлĕ çитĕннĕ каччă пулсан та, хăш чухне тыта-тыта çуса йараканччĕ. Халĕ Тимуххан амăшĕ вĕри чирпе чирлесе вилсе кайрĕ. Ун хыçĕнчен ашшĕ те ерех ĕçсе вилсе выртрĕ.

Çапла Тимухха çут тĕнчене, пуçпурне пек, пĕр пĕччен, ашшĕ-амăшсĕр тăлăха тăрса йулчĕ. Ашшĕ йенчен те, амăшĕ йенчен те пĕр хурăнташ, пĕр пĕлекен çын та çук. Ашшĕ лартса хăварнă çĕр пÿртре упа пек пĕр пĕччен пурăнать. Кÿрше-арша ниçта та çÿремест, хăй патне те никам та пымасть.

Тимуххан амăшĕ вилни часах çулталăк тулать ĕнтĕ. Анчах вăл амăшĕ тăхăнтартнă шăликала тĕртнĕ улача кĕпине улăштарса тăхăнман-ха. Улăштарса тăхăнас тесен те, урăх кĕпи çук. Хывса, çуса, типĕтсе тăхăнма Тимуххан ăсĕ çитеймест. Çавăнпа та Тимухха тикĕт мĕлки пек хуп-хура çÿрет; кĕпи çурăмĕ çине пăхсан, хура сăрпа сăрланă пек йăл-йăл хура курăнать. Тимухха çумне пырса тăрсан, тÿсмеле мар йăвăр тар шăрши кĕрет. Пулать кам çын хăне-хăй тирпейлеме пĕлменскер, ирсĕр.

— Капла пĕччен тарăхса пурăнниччен, авланса йамала сан, Тимухха. Пурнăçра хĕрарăмсăр кансĕр-çке,

кĕпӳ йĕмӳсене çуса паракан та, апат-çимĕç пĕçерсе тăракан та кирлĕ,—теççĕ çынсем Тимуххана.

— Хм-м... Хаљхи вăхăтра авланса арăм хырăмне мар, хам хырăма тăрантарсан та питĕ аван та, анчах хам ваљљи те ĕçлесе тупма питĕ кансĕр. Тата авланас тесен те, хамăр йалта мана йурăхлă хĕрсем çук. Йут йалтан илес килмест,—тет Тимухха, амăшĕ вилнĕренпе тураса курман, кĕççеленнĕ кăтра çӳçне, сӳре шăлĕсем пек хура пӳрнисемпе катăр-катăр хыçса.

— Хамăр йалти хĕрсене мĕн пулнă?

— Нимĕн те пулман та, анчах мана йурăхлă хĕрсем пурте колхоза кĕрсе пĕтнĕ. Колхоз тулашне вĕт-шакăрсем çеç тăрса йулнă. Пĕри те кăмăла каймаççĕ.

— Колхозри хĕрсене мĕн пулнă вара? Пăх-ха, пĕринчен-пĕри илемлĕ: питçăмартийĕсем пиçсе çитнĕ панулмисем пек çунаççĕ, куçĕсем çимĕк вăхăтĕнчи çăлтăрсем пек йăлт-йалт выљаççĕ; калаçма тăрсан чĕлхи-çăварĕсем çуран та çемçе, пылтан та тутлă. Йуратман çĕртен йуратмала. Тата колхоз хĕрне качча илсен, ху та часрах колхоза кĕрĕн. Колхоз кĕрӳшĕ пулăн...

— Хм-м... Колхоз хĕрне качча илтĕм тесе, колхоза кĕрсе, çыншăн ĕçлеме ухмахланман-ха епĕ.

— Колхоза ухмахланса çырăнмаççĕ. Тата колхозра çыншăн çын ĕçлемест. Кашни хăйшĕн ĕçлет. Кам мĕн чул ĕçлесе илет, çавна параççĕ. Илтмен-им есĕ Ленин йулташ: „Кам ĕçлемест, вăл çимест“ тенине.

— Пĕлетпĕр йепле ĕçлесе çинине. Ĕçлекеннисем ĕçлесе çийеççĕ, ĕçлеменнисем ĕçлекенсен ĕнсисем çинче лараççĕ.

Çук, Тимуххана хуť те мĕн чул ăнлантарсан та, вăл колхоз пурнăçĕ çинчен пĕртте ăнланасшăн мар; йалан хăйĕннех çаптараť. Тимухха пĕччен пурăнса, ашшĕ-амăшĕ курман пурăнăçа курса — пуйса пăхас-

шăн тăрăшаť. Колхоз тесен вăл, шăши кушакран хăраса ӳкнĕ пек, хăраť. Çӳçĕ ахаљ те тăрмаланчăк хăйĕн, «колхоз» тесе калаçа пуçласан вăл пушшех те тăрмаланса кайаť.

— Йалта çак шуйтан колхоз пулмасан, епĕ тахçанах авланса, пуйса, арăмпа савăнса çеç пурăнăттăм та, анчах çав кансĕрлет,—тесе шухăшлаť Тимухха хăй ăшĕнче йаланах.

* * *

Тимуххан ашшĕ ывăлĕ пек пулман. Вăл çĕрнекунне пĕлмесĕр ĕçленĕ. Ĕçленĕшĕн калаçса-туса тăман, мĕн чул панă, çавна илнĕ. Анчах мĕн чул ĕçлесе тупнине пурне те ĕçсех пĕтерсе пынă. Çавăнпа та хăй ĕмĕрĕнче çынсем пек ырă курса пурăнман, çĕр пӳртрен тухайман. Вилме те ерех ĕçсех супса вилнĕ, мĕскĕн. Тимуххан ашшĕ ку таврара питĕ ăста тимĕрçĕ пулнă. Ытти тимĕрçĕсем ĕçлеймен ĕççене ун патне илсе пынă. Вăл кирек мĕнле ĕçе те тунă. Йăвăç çинчен улми айакка ӳкмест, теççĕ. Çавăн пек, ашщĕ ăста тимĕрçĕ пулнипе — ывăлĕ те ăстана вĕренсе йулнă. Анчах Тимухха ашшĕ пек йӳн тимĕрçĕ пуласшăн мар. Сунталĕ çине мăлатукпа пĕрре çапасшăн та, пĕр тенкĕ илесшĕн тăрăшаť. Çавăнпа, Тимухха патĕнче халăх питех кĕпĕрленсе тăмасť. Çитменнине тата Тимухха ĕçне колхоз тимĕрçи те кансĕрлет, мĕншĕн тесен çур йал ытла колхозра тăракан хресченсем пурте хăйсен колхоз тимĕрçĕ патне кайаççĕ. Колхоз тимĕрçи, Тимухха пек чаплă тимĕрçĕ пулмасан та, хăй патне пыракан ĕççене пурне те туса ĕлкĕрсе пыраť. Тимухха патне хĕрарăмсем çеç йе çĕçĕ, йе кусар тутарма илсе пыркалаççĕ. Анчах Тимуххан ун пек вак-тĕвек ĕççемпе аппаланас килмест. Хăш чух ĕçлемели ĕçĕсем те пулкалаççĕ, анчах ун пек чух Тимуххан йе тимĕрĕ, йе кăмрăкĕ пулмасť. Вара Тимухха колхоза çĕрти-çӳлтине хăвармасăр вăрçаť, ылханаť:

— Антихрис колхозӗ! Аҫа ҫапасшӗ, ҫӗрҫӑтасшӗ!— сура-сура йатлаҫаӗ Тимухха.

Анчах темле йатлаҫса ылхансан та, Тимуххашӑн ҫӑмӑллӑх ҫук. Колхоз куллен-кун ӳсет. Тимуххан ӗҫ сахалланнӑҫем сахалланаӗ. Ак, уйӑх ытла ӗнтӗ Тимухха тимӗрҫӗ лаҫҫине тухса, сунталӗ ҫине мӑлатукпа ҫапса пӑхманни. Сунталӗ ҫийӗ тутӑхса кайнӑ. Лаҫҫи умне йур шӑлса тултарнӑ, алӑкӗ те курӑнмасӗ.

Колхоз тимӗрҫи лаҫҫинче кашни кун тӗтӗм мӑкӑрланаӗ. Иртен пуҫласа каҫчен мӑлатук сасси чантлатса ҫеҫ тӑраӗ. Ҫав мӑлатук сассине илтсен, Тимуххан ӑшӗ пушшех вӑркаӗ вара.

Тимухха, хӑй найан пулсан та, вӑрах ӗҫсӗр пурӑннипе пӗтӗмпех аптӑраса ҫитрӗ. Ӗҫлес марччӗ — хырӑм выҫаӗ. Ӗҫсӗр никам та тӑрантармасӗ. Ӑшӗ ҫуннипе Тимухха, хуйхине пусарасшӑн, ашшӗнчен йулнӑ пӗр кӗпҫелӗ пӑшалне йӑтаӗ те, вӑрмана тухса кайаӗ. Вара иртен пуҫласа каҫчен варсем, тусем тӑрӑх сӗтӗрӗнсе ҫӳрет. Тем чул ҫӳресен те, пӗр кайак чунӗ те тытса тавӑрнаймасӗ. Кашни кун пушӑ, йытӑ пек супса, уринчен урине иртерейместӗр, выҫӑхса тавӑрӑнаӗ.

— Ха-ха-ха! Ӗҫӗ ҫук йенне тимӗрҫӗ Тимухха та ухутана ҫӳре пуҫларӗ ӗнтӗ. Вӑрманта кайӑксене Тимуххашӑн кӑкарсах хунӑ пулӗ, — тесе кулаҫҫӗ йалти хресченсем, Тимухха ухутана кайнине курсан.

Тимухха, ҫынсем ан курччӑр тесе, анкартисем хыҫӗнчен ҫавӑрӑнса ҫӳрет. Анчах — вӑрман хӑлхалӑ, хир куҫлӑ,—ҫынсем Тимухха кайнине те, килнине те кураҫҫӗ-кураҫҫех.

Тимухха ир тухса кайса каҫчен ҫӳренипе—ухутаран тавӑрӑннӑ ҫӗре унӑн пӳрчӗ тулти пекех сивӗнсе ҫитет. Вӑл урай варринче капланса ларакан тимӗр кӑмакине хутса йараӗ те, ҫӗрулмипе тип ҫӑкӑр ҫисе ҫывӑрма выртаӗ. Тимухха пуҫӗнче пӗр шухӑш: унӑн менле те пулин пуйса, пӳрт лартса, ҫак чун илекен ҫӗр пӳртрен тухас килет. Анчах мӗнле майпа? Хӑ-

çав? Ун çинчен Тимухха ним те шухăшлама пĕлмест... Çав пуйас шухăшпа Тимухха халĕ ĕç пулсан ашшĕ пекех кунĕн-çĕрĕн ĕçлĕччĕ. Пĕччен ĕлкĕреймесен мăлатукпа çапакан тарçă та тытнă пулĕччĕ. Анчах ĕç çук, çав пĕтерет. Акă, Тимуххан сăнăхĕ те, çĕрулмийĕ те пĕтсе çитрĕ. Ĕçлемесен, ниçтан та тупас çук. Кивçен те никам парас çук. Сутăн илме те укçи çук...

Ăçта кайас? Камран ыйтас? Колхоза çырăнсан, унта çиме çăнăх та, çĕрулми те параççĕ ĕнтĕ. Анчах Тимухха çынсемшĕн ĕçлесрен хăрать. Тата колхозра пуйасси те пулмасть.—Ех, çак тăвăр çĕр пӳртрен тухасси пулмасть пуль,—тесе шухăшлать вăл ăйăх пусса çитнĕ çĕре.

## II

Пĕр каçхине, çапла çĕрĕпе сывăраймасăр йăванкаласа выртсан, сасартăк Тимухххан пуçне ĕç тупмали шухăш пырса кĕчĕ. Вăл вырăнĕ çинчен сиксе тăчĕ те, пилĕк-ултă хутчен тĕпленĕ çăматтине тăхăнса, кăсйине пĕр йĕнĕ шăрпăк чиксе, тулала тухса кайрĕ.

Çанталăк çуркунне йенне сулăннă пулсан та, çĕр сивĕ те уйар; çăлтăрсем, халь çĕре персе анас пек, йалт-йалт выльанса, чӳхенсе тăраççĕ. Темиçе пин-пин çăлтăрсен хушшинче тулли уйăх колхоз йалне çутатать. Инçетрен, анкартисем хыçĕнчен, кашкăрсем улани илтĕнет. Кашкăрсен сассине хирĕç йалти йытăсем вĕреççĕ. Тимухха, унтала кунтала пăхкалать, урисемпе хуллен хуллен пускаласа, колхоз тимĕрçĕ лаççи йенне утать. Урисем айĕнче йур лăтарт-латăрт туса пусăрăнать. Ак, вăл тимĕрçĕ лаççи патне пĕшкĕне-пĕшкĕне утса çитрĕ. Çитрĕ те лаç алăкне туртса пăхрĕ. Анчах алăкĕ уçăлмарĕ,—шалтан тĕкĕ йарса питĕрнĕ пулмала. Тимухха унтала-кунтала савăрăнкаласа пăхрĕ те, лаç алăкĕ умне кукленсе ларчĕ. Унтан, чăваш тăлинчен çĕленĕ пĕрмелĕ сăхманĕ

кăсйинчен шăрпăк йĕнни кăларса, колхоз тимĕрçи лаççине вут тĕртме пикенчĕ. Анчах шăрпăк нӳрелнĕ, чăрт тăват те сӳнет, чăрт тăват те каллех сӳнет. Пĕр йĕнĕ шăрпăк пĕтерчĕ Тимухха, нимпе те тивертсе йараймарĕ. Йулашкинчен, çиллипе, пушă шăрпăк йĕнине лаç алăкĕ çумне çĕклесе çапрĕ те, ури çине тăрса утма çеç пикеннĕччĕ, сасартăк таçтан пĕр хура йытă сиксе те пычĕ. Сиксе пычĕ те туртса çурас пек вĕрме пикенчĕ.

— Кам çӳрет унта? Вăси, Хурайкка! Вăси! — тесе кăшкăрса йачĕ такам инçех те мар тĕттĕмре. Тимухха колхоз кĕлечĕсене сыхлакан хуралçă сассине уйăрса илчĕ.

Тимухха тарма тытăнчĕ, анчах, хăранипе темĕскер çине такăнса, лаплатса тăсăлса ӳкрĕ. Унтан вăл сиксе тăчĕ те, хăйĕн килĕ йеннеле чупрĕ. Йытă халĕ çыртса илес пек вĕрсе, пĕрре хыçĕнчен чупса çитсе çыртма хăтланат, тепре çумĕнчен сĕртĕнсе иртсе кайса ума пӳлесшĕн тăрăшат, унтан каллех, хыçалала йулса, Тимуххана хайаррăн вĕрсе хăвалат.

Кĕлет хуралçи пĕрехмай:—Вăси, Хурайкка! Вăси!—кăшкăрат.

Тимухха курпунне кăларса чупат. Чупсан-чупсан вăл, йытта хăратасшăн пулса, пĕшкĕне-пĕшкĕне йур ывăçласа илет те йытă çине перет. Çук, йытă хăрамаст, вăл пĕр шит йулмасăр вĕрсе пырат. Хурайкка ытла çилĕлĕ вĕрнине илтсе, йалти ытти йытăсем те йанăрама тытăнчĕç. Çурçĕр çитнипе-и тен, автансем те вăранчĕç.

Тимухха аран-аран хăйĕн пӳрчĕ умне чупса çитрĕ. Хурайкка, Тимухха çине пăхса, тата кăшт вĕрсе тăчĕ те, унтан кĕлет хуралçи патнеле кайала çавăрăнса кайрĕ.

Тимухха кăшт сывлăш çавăрчĕ. Вăл Хурайкка йеннеле чылайччен пăхса тăчĕ те, унтан пӳрте кĕрсе кайрĕ.

Çĕр каллех лăпланчĕ.

## III

Колхоз тимĕрç лаççине çунтарма хăтланса ăшаланнă Тимухха, куçĕсене хупса выртсан та, çывăраймарĕ. Çутăличченех вăл хăй пурнăçне мĕнле майласа йарасси çинчен шухăшласа выртрĕ. Анчах, мĕнле шухăшласан та, çав колхоз тимĕрç лаççине çунтарса йарассисĕр пуçне урăх май тупаймарĕ. Тимухха шухăшлать: акă колхоз лаççи çунса кайать, çĕнĕрен тепĕр лаç лартса, струментсем туйанкаличчен йепле пулсан та колхоз Тимухха патне ĕç илсе пырать-пыратех. Мĕншĕн тесен çанталăк çуркунне йенне кайнă. Колхозăн çурхи акана тухма хатĕрленмеле, акапуçсем, сÿресем, акакан машинăсем тÿрлетмеле. Тата çуркуннепе лашисене те таканламала. Урăх ĕç илсе пымасан та, лашасем таканлаттарма илсе пырать-пыратех. Колхозра мĕн пурĕ икĕçĕр лаша, икçĕр лашара—сакăр çĕр ура, кашни ураран пĕрер тенкĕ илсен те—сакăрçĕр тенкĕ: вăт хайхи пурнăç та тÿрленсе кайать. Çăнăхлăх та, çĕрулмилĕх те укçа пулать,—тесе шухăшлать Тимухха. Савăннипе хăй пĕр йенчен тепĕр йенне çаврăна-çаврăна выртать. Тимухха айĕнчи улăм тÿшек те, ниçта кайса кĕме пĕлмен пек, чашăртатса çеç выртать.

Хĕллехи çĕр çывăрмасăрах иртрĕ Тимуххан. Хĕвел çути, Тимуххан хăрах куçлă чÿречинчен кĕрсе, землʼанккине çутатрĕ. Тимухха вырăнĕ çинчен тăманха. Вăл пулмас шухăш çинченех шухăшласа ăшне вĕçтерсе, йăшăлтатса выртать.

Сасартăк урамра сасăсем йантрани илтĕнсе кайрĕ. Айăплă çыннăн пуçĕнчи çĕлĕкĕ çунать, теççĕ. Çавăн пек, Тимухха та, труках пуйас шухăшне манса, вырăнĕ çинчен сиксе тăчĕ.

— Сиснĕ... Йĕрлесе тытма килеççĕ... Кĕçĕр ăçта çÿрерĕн? тесе ыйтсан, мĕн калас. Лекрĕм! Ăçта кайса кĕрес? Мĕнле хăтăлас? Тĕрме вĕт. Вунă çул, — тесе шухăшласа, çăмарта тăвас чăхă пек кускалать Тимухха. Вăл пĕрре алăк патне, тепре чÿрече пат-

не пыра-пыра пăхать. Курать—колхозниксем килеççĕ, вĕсем хăшĕ пăшал, хăше тимĕр сенĕк йатнă, пурте Тимухха пӳрчĕ йеннеле партизан отречĕ пек кĕрлесе килеççĕ. Кăна курсан Тимухха пушшех хăраса ӳкрĕ.

— Лекрĕм... Пĕтрĕм... Вĕлереççĕ... Тĕрме... Вунă çул... Çук, ан сухатăр, йулташсем! Епĕ вĕт колхоз тăшманĕ мар. Ĕмĕр-ĕмĕр чухăн çын ачи пулнă. Пайантан колхоза кĕрсе, сирĕнпе пĕрле — йунашар тăрса ĕçлетĕп. Анчах ан айăплăр. Каçарăр, — тесе шухăшлать Тимухха. Ним тăвайман йенне вăл каллех вырăнĕ çине чăсăлса выртрĕ те, сăхманĕпе пуçĕ çинчен витĕнсе, çывăрам пек пулса лăпланчĕ.

— Йулташсем! Тимуххана илсе тухăр! — тенĕ сасă пырса кĕчĕ унăн хăлхине.

Тимухха, сĕрĕм тивнĕ çын пек, лĕпсĕрех кайрĕ; аллисем те урисем те хускалми пулчĕç.

Земљанкă алăкĕ йар уçăлса кайрĕ те, комсомолкă Таңăпа колхозник Ентри кĕрсе тăчĕç.

— Тимухха, есĕ хаљ те тăман-и-ха? Вăрах, çывăратăн, вăрах. Тăр хăвăртрах, тăр! Ил те пăшална, ать пирĕнпе кашкăр тытма. Илтмерĕн-им, кĕçĕр çĕрĕпе йал йĕри-тавра кашкăрсем уларĕç?—терĕ Таңă, Тимухха çине пăхса.

Тимухха ку сăмахсене илтсен, пуçĕ çинчи сăхманне сирсе пăрахса, тăрса ларчĕ.

— Манăн йĕлтĕр çук,—терĕ вăл улшăннă сассипе.

— Тумлан хăвăртрах. Хам йĕлтĕре парăп, — терĕ Таңă тăп-тăп тутисене йăл култарса.

— Йĕлтĕрне ăна парсан, ху мĕнпе пыратăн, — терĕ Ентри кӳлешнĕ сассипе.

— Ман килте тепĕр мăшăр пур,—татса хучĕ Таңă.

Ентри урăх ним те чĕнмесĕрех тулала тухса кайрĕ.

— Тимухха, мĕншĕн есĕ пĕртте йал çине тухса çӳреместĕн? Сана пухусенче те, вулав çуртĕнче те, клубра та курма çук,—ыйтрĕ Таңă, иккĕш çеç йулсан.

— Кирлĕ мар çĕрсене çӳреме вăхăт çук ман, — терĕ те Тимухха, ури çине тăрса йулхаван каранчĕ.

— Мĕнде-ха вăл кирлĕ мар çĕр пулаť пуху, вулав çурчĕ, клуб?.. Пухусене, вулав çуртне, клуба çӳресен çын уçăлаť, тĕттĕмлĕхне пĕтерет.

— Есĕр уçăлăр ĕнтĕ. Пире тĕттĕмлĕхре пурăнсан та йурĕ. Ав, сан аçу мĕн Совет влаçĕ пулнăранпах пухусенчен, вулав çуртĕнчен, клубран туха пĕлмест. Кунĕн-çĕрĕн çавăнта пăчăланаť. Анчах çав-çавах, ниçтан та уçăлнă тĕлĕ çук. Ĕлĕк Совет влаçĕччен те кĕтӳçĕ пулнă, халђ те кĕтӳ кĕтет.

— Чим-ха, чим, Тимухха! Есĕ ман аттепе хăна ан танлаштар. Ман атте ватă, çитмĕл çула çитнĕ ĕнтĕ. Есĕ çирĕм пĕр çулта çеç. Ман атте çырăва пĕлместчĕ. Совет влаçĕ пулнăранпа çырăва вĕренчĕ. Кĕнеке-хаçатсем вулаť. Çавăнпа тĕнчере, пурнăçра мĕнле ĕçсем пулнипе-пулманнине пĕтĕмпех пĕлсе тăраť. Есĕ, акă, çап-çамрăк пуçупа çырăва пĕлместĕн. Çавăнпа çак çĕр пӳртре упа пек пĕр пĕччен пăчăланса пурăнатăн. Пурнăç йепле улшăнса пынине курмастăн.

Тимухха Таңђă сăмахĕсене итлесе тăрсан-тăрсан, ним калама пĕлмесĕр, çурăк кĕпçелĕ пăшалтан пенĕ пек персе йачĕ:

— Ман ĕç нумай. Вăхăт çук çырăва вĕренме, пухусене, вулав çӳрчĕсене, клуба çӳреме...

— Мĕн ĕçлетĕн-ха? Пăхма выљăх-чĕрлĕхӳ çук. Тимĕрç лаççинче хĕле кĕнĕренпе те ĕçлемен. Курмастăн-им—лаççун алăкĕ те кĕрт айне тăрса йулнă вĕт?

Тимухха ĕç нумай тенин суйи тухрĕ. Вăтаннипе вăл, ним тума пĕлмесĕр, Таңђă умĕнче ĕнсине хыçкаласа тăчĕ.

— Çап çамрăк пуçпа, çак çĕр пӳртре пурăш пек шăршланса пурăниччен тахçанах колхоза çырăнса, çынсем пек çĕнĕ пурнăçпа пурăнма вĕренмеле.

— Епĕ колхозра мар, пĕччен пурăнса пурнăçа йусас тетĕп,—терĕ Тимухха йулашкинчен.

— Пĕччен пурăнса есĕ пурнăçна нихçан та йусас çук! Вăйу çитмĕ. Халĕ ĕлĕкхи мар...

— Çитĕ-и, çитмĕ-и—сăнаса пăхăп-ха.

— Сăнамали те çук. Курăнсах тăраť.

Çав вăхăтрах тултан:

— Таңă, тух хăвăртрах! Кайрăмăр. Пĕччен тăрса йулатăн,—тенĕ сасă илтĕнчĕ.

Таңă алăк патнеле утрĕ.

Тимухха, Таңă тухса кайассине пĕлсе хăй çине хăй çилленсе, тутисене шатăр çыртрĕ те:—Ех, ухмах çав епĕ. Хăй килнĕ хĕрарăма та хам май çавăрма пĕлместĕп. Тухса кайаť вĕт! Йепле тытса чарасши?—тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнче. Унтан Таңă çине мĕскĕнĕн пăхса:

— Таңă, мĕншĕн кайатăн-ха? Кăшт калаçса ларха,—терĕ. Ку сăмахсем Тимуххан ирĕксĕрех чĕтресе тухрĕç.

— Урăх калаçса тăма вăхăт çук. Йулташсенчен йулас мар. Пит клаçассу килсен, аťа пирĕнпе вăрмана кашкăрсем йĕрлеме.

Тимухха чĕнмесĕр кăшт шухăша кайса тăчĕ те:

— Çук, пырса пулмасť пуђ. Епĕ пайан тимĕрçĕ лаççинче ĕçлес тетĕп,—терĕ.

— Ха-ха-ха! Хĕлĕпе ĕçлеменне, пайан ĕçлес тет вăл... Ĕçле, ĕçле. Ĕçлекен выçă пулмасť, — терĕ те Таңă алăк хыçĕнче курăнми пулчĕ.

Тимухха урăх ним те калама ĕлкĕреймерĕ. Вăганнипе вăл, тупарланнă лаша пек, урисемпе пĕр вырăнта пускаласа тăчĕ. Каллех пĕччен. Тăлăха тăрса йулнă хур аçи пек пуçне чиксе тăрсан-тăрсан тўсеймерĕ: чўречи патне хăвăрт утса пырса, колхозниксем вăрçă халăхĕ пек кĕрлесе, кашкăрсене йĕрлеме кайнине тĕлĕнсе пăхса йулчĕ. Колхозниксем вăрмана кĕрсе курăнми пулсан тин, мухмăрлă çын пек, тайкаланса пырса, сўне пуçланă тимĕр кăмакине çĕнĕрен чĕртсе йачĕ те, çĕрулми пĕçерме лартрĕ. Унтан, чĕри çунниле ним тăваймасăр, каллех вырăнĕ çине ўпне чикĕнсе ўкрĕ. Тимĕр кăмакинчи чĕрĕ ăвăс вутти çĕлен пек шăхăрса шартлатса çунаť. Тăм чўлмекри улма шывĕ, Тимуххаран мăшкăласа кулнă пекех, лăкăртатса вĕрет. Акă, унăн куçĕ умне Таңă

тухса тăчĕ. Таҥăн хура кусхаршисем айĕнчен кусшăрçиййĕсем каçхи çăлтăрсем пек выҥаса, ăшшăнăшшăн пăхаççĕ; санталпа хĕретнĕ пек çӳхе, тăп-тăп тутисем йăл кулса качча илĕртеççĕ. Шурă шăлĕсем витĕр: „пĕччен пурăнса пурнăçна йусаймăн, Тимухха. Вăйу çитмĕ“,—тенĕ сăмахсем йерипен пăшăлтатса тухнă пекех туйăнаť. Тимухха тӳссе выртаймарĕ, пуçне çĕклесе ун-кун пăхрĕ. Çук, земҥанкăра Таҥă та, никам та курăнмасť. Кăмака трупи çумĕнче хурткуççи пек шултăра таракансем çеç кĕрлесе лараççĕ. Унтан, ури çине тăрса, урай варринче ларакан тимĕр кăмаки йĕритавра утса çавăрĕнчĕ те:

— Йусăп. Вăй çитĕ! Анчах йалта колхоз ан пултăр,—тесе татса хучĕ Тимухха. Ăна хирĕç каллех Таҥă сасси хуллен илтĕнчĕ: „Çук! Пĕччен йусаймăн. Вăйу çитмĕ. Колхоз пур. Пулĕ. Нихçан та пĕтмĕ!..“

Çапла Тимухха, Таҥăн сăмахĕсемпе, йытă кашкăрпа тулашнă пек, тулашаť. Анчах нимпе те çĕнтереймест. Ах, мĕншĕн-ха ку Таҥă вăхăтсăр кĕрсе, Тимуххан ахаҥ те çунакан чĕрине тата хытăрах вут хыптарса хăварчĕ? Тимухха вĕт пĕччен пурăнса пуйма тăрăшаť. Пуйсан тарçăсем тытса ĕçлеттерме шухăшлаť. Таҥă ăна колхоза çырăнтарса, çĕнĕле пурăнма вĕрентесшĕн. Тимухха Таҥă шухăшĕсемпе килĕшесшĕн мар. Икĕ шухăш, шуррисемпе хĕрлисем çапăçнă пек, çапăçаççĕ. Çавăнтах Тимуххан пуçне урăх шухăш пырса кĕрет —Ах, илемлĕ те çак мур хĕрĕ— Таҥă... Йуратман çĕртен йуратмала. Чĕлхи-çăварĕ çу пек çемçе. Тепре хирĕç пулсан, хуť те мĕн пултăр, пурĕ-пĕр:—Йурататăп епĕ сана. Сансăр пуçне пурăнма пултараймастăп. Шелле мана ухмаха,—тесе калатăп калатăпах... Çук, çук! Вăл вĕт колхоз хĕрĕ—комсомолкă. Мана улталаса колхоза кӳртесшĕн çӳрет. Епĕ сана, ĕмĕрĕме авланмасăр иртерсен те, качча илессĕм çук...

Тимухха тĕрлĕ шухăшпа пуçне çĕмĕрнипе, тимĕр кăмака çинчи çĕрулми пиçсе пăтă пулса ларнине сисмен те. Çунăк шăрши кĕме пуçласан тин вăл,

васкаса чӳлмекне урайне антарса лартрӗ. Унтан куллен-кунхи пек питне-куҫне ҫумасăрах, ирхи апат ҫиме ларчӗ. Ҫисе тăраннă хыҫҫăн пӗр курка сивӗ шыв ӗҫрӗ те, аллисемпе хăлаҫланса анасланă май как! какăрчӗ. Анчах Таҥăн илемлӗ тӗсӗ Тимуххан куҫӗсем умӗнчен ҫухалмаст, куҫкӗски витӗр куранна пек вăл курăна-курăна кайать. Хăй пӗрех май: Пӗччен пурăнаймăн. Вăйу ҫитмӗ. Пӗрлешсе пурăнма тăрăш,—тет. Тимухха та ăна хирӗҫ:—Вăй ҫитӗ. Пӗччен пурăнăп,—тесе шухăшлать.

— Ҫук пурăнаймăн. Пайан мар ыран, ыран мар— тепӗр кун пирӗн пулăн,—илтӗнет каллех Таҥă сасси.

Тимухха апатланнă хыҫҫăн, чикаркă пӗтӗрсе тивертрӗ те, тумланса тулала тухса кайрӗ.

## IV

Пайан Тимухха ухатана каймарӗ, мӗншӗн тесен вăрманта кашкăрсене йӗрлеме кайнă колхозниксене хирӗҫ пулсан, намăс пуласран хăрарӗ вăл. Ҫавăнпа кӗреҫе илсе, йур пусса кайнă тимӗрҫӗ лаҫҫи патне утрӗ. Йура чавса кӗчӗ те, вучаххине чӗртсе йачӗ. Унтан пӗр тутăхнă тимӗр татăкӗ хӗртсе, хăй мӗн йапала тунине пӗлмесӗр, тӗрлӗ май ҫавăркаласа шакка пуҫларӗ.

— Ырлăха пултăрах. Тимухха та ӗҫе тапранчӗ. Ҫуркунне ҫитет пулас...

— Ӗҫлес мар та, хырăм выҫать-ҫке. Унăн вӗт пирӗнни пек акнă тырри ҫук. Мăлатук вӗҫҫӗн тăранас пулать.

— Ухмах вăл Тимухха. Унăн тахҫанах колхоза ҫырăнса, пирӗнпе пӗрле ӗҫлемеле.. Хырăмӗ те тутă, ҫийӗ те питӗ пулӗччӗ. Ҫын хушшине кӗрӗччӗ хуть...

— Ухмах? Ухмах мар вăл—чӗрӗ йулхав. Колхоза ҫырăнсан кашни кун ӗҫлес пулать. Халӗ вăл ӗҫлес тесен—ӗҫлет, ӗҫлес мар тесен—пăшалне ҫакать те, вăрман тăрăх ҫил хăваласа ҫӳрет. Унтан ывăнса

килет те, куçĕсем шыçăниччен çыврат. Питве çума та вăхăт тупаймасăр лапăстатса çӳрет, — тесе каласса илчĕç колхоз тимĕрçинче ĕçлекен тимĕрçсем. Тимуххан тимĕрçĕ лаççинче мăлатук шакканине илтсен, аллине пĕр тутăхнă тимĕр татăкĕ тытса Мĕкĕте пырса кĕчĕ:

— Аван-и, Тимухха шăллăм. Турă пулăштăр,— терĕ Мĕкĕте ун-кун пăхкаласа.

— Ĕç пулмасан, турă питех пулăшса каймасть,— тавăрчĕ Тимухха, Мĕкĕте çине шурă куçĕсемпе çавăрăнса пăхса.

— Ай, Тимухха шăллăм! Турă пулăшмасан кам пулăштăр?..

— Турă пулăшмасан та пурăнаттăмăр та-ха. Ĕç-лемели ĕç çук, çав йенчен кансĕр,—терĕ Тимухха, сивĕне пуçланă тимĕрне каллех вучаххине чиксе.

— Ак, епĕ пĕр ĕç илсе килтĕм. Çак тимĕр татăкĕнчен пуртă туса параймăн-ши?.. Унсăрăн нимпе вутă касма çук. Антихриссем пуртă таранччен сутса пĕтерчĕç вĕт. Çуртран хуса кăларса йачĕç. Чут Нарыма[1] ăсатаччĕç. Хаљ те кĕрӳ хута кĕнипе çеç хăтăлса йултăм. Мĕн тăвас тетĕн? Тӳсес пулать. Турă хушнинчен иртме çук. Христос тӳснĕ, пирĕн те тӳсес пулать,—терĕ Мĕкĕте хурлăхлă сассипе.

Тимухха, йал çине тухса çӳременнипе, йалта мĕн пулниве ним те пĕлмест.

— Мĕншĕн-ха? Мĕн айăппа пуртту таранччен сутса пĕтерсе, çуртăнтан хуса кăларчĕç?—тесе ыйтрĕ вăл.

—Мĕн айăпĕ шыратăн? Айăппа мар. Пĕлетĕн вĕт кăчухне—çын кăшт пурăнма пуçласан кулаками пулаççĕ, кулака кăлараççĕ. Мана та çапла кулак туса, пĕтемпе сутса пĕтерчĕç. Ниçта та кайма çук. Ирĕксĕрех колхоза кĕмеле пулчĕ,—терĕ Мĕкĕте йĕритаврала пăхкаласа.

---

[1] Нарым — ĕлĕк революционерсене йанă вырăн.

— Е-е-е!.. Ăнлантăм ĕнтĕ. Çавăнпа колхоз тимĕрçинче тутармастăн иккен пурттуна.

— Çук, унпа мар. Колхоз тимĕрçисен ĕç нумай. Вак-тĕвек ĕçсем ĕçлемеççĕ. Акана тухма плугсем, машинсем тӳрлетеççĕ.

— Пурттине туса парăп та... Анчах укçала мар. Ĕçленĕшĕн йе çăнăх, йе çĕрулми парăн,—терĕ Тимухха. Унтан вăл хĕрнĕ тимĕрне кăларса сунталĕ çине хучĕ те, мăлатукпа шакка пуçларĕ.

— Çăнăх? Çĕрулми? Ăçтан тупкаласа парăп-ха?— тесе пуçне пăркаласа илчĕ Мĕкĕте.

— Колхозра тырă, çĕрулми сахал мар-тăр вĕт?

— Вăл апли апла та-ха. Çăнăхĕ, çĕрулмийĕ çителĕклĕ. Вĕсем хам алăра. Хам хуçа—кладовщик вĕт епĕ. Анчах мĕнле майпа илсе килсе парăп сана?— терĕ Мĕкĕте кăшт шухăша кайса.

— Çур пăт çăнăха ĕнтĕ арку айне те пытарса илсе килĕн,—терĕ Тимухха.

— Ек-кей... епĕ мансах кайнă. Пайан вĕт пирĕн колхозниксем килте çук: пурте вăрмана кашкăрсем йĕрлеме кайнă,—терĕ Мĕкĕте савăнăçлăн кулса.

—Пар еппин тимĕрне. Туса парам. Епĕ ĕçлеме тытăниччен есĕ çăнăх илсе кил. Ку татăк—тимĕр мар, таса хурçă. Анчах вăрах çĕр çинче выртнипе тутăхнă. Пĕр пулсан питĕ çивĕчĕ пуртă пулĕ,—терĕ Тимухха, Мĕкĕте аллинчен тимĕр татăкне илсе çавăркаласа пăхса.

— Çапла, Тимухха шăллăм. Çĕнĕ саккун тухмала тет: пĕтĕм колхозра тăман çынсен çурт-йĕрĕсене сутса пĕтерсе, хăйсене ирĕксĕр колхоза кĕртсе ĕçлеттермеле, тет. Колхоза кĕмесен, çуйлав прависĕр хăварса, Нарыма ăсатмала тет,—терĕ Мĕкĕте, сăмси тăрăх пăхса.

— Кам? Ăçтан илтрĕн?

— Мĕн илтесси? Курăнсах тăрать. Ак, манах ил: çурта сутса хама Нарыма ăсатма тăман пулсан, ĕмĕрте те епĕ вăл колхоза кĕрес çукчĕ. Малтанах пит кансĕрччĕ. Халĕ ĕнтĕ епĕ пурăнатăп, мĕншĕн тесен

хам хуҫа. Пĕтĕм тырă-пулă, аш-пăш, сĕт-ҫу ман ала витĕр тухать. Хе-хе-хе!.. Манпа туслашсан есĕ выҫă пулмăн малашне,—хулăн тутисене сарса йарса, лăх-лăх кулчĕ Мĕкĕте.

Тимухха Мĕкĕтен ҫак сăмахĕсене пĕрре ĕненсех пăрахать, тепре ĕненмест. Мĕншĕн тесен, Мĕкĕте пĕр пайан ҫеҫ мар ĕнтĕ ҫакăн пек сăмахсем калаҫать—мĕн Совет влаҫĕ пулнăранпах. Анчах халиччен йалта колхоза кĕмен чухăн хресченсемпе вăтам хресченсен ҫурт-йĕрĕсене сутса, Нарыма ăсатассипе хăратса, колхоза ирĕксĕр ҫырăнтарнине Тимухха курман та, илтмен те.

— Ак, куратăн-и ĕнтĕ,—тет Мĕкĕте каллех, сассине пусарса,—хресченсене пĕтĕмпех хĕстерсе ҫитерчĕҫ. Кăшт ҫĕклене пуҫласанах пĕтĕм пурлăха тытаҫҫĕ те, сутса йараҫҫĕ. Хуть те ăҫта кĕрсе кай. Вара ирĕксĕрех колхоза пырса кĕрес пулать. Пурнăҫ-и ку!.. Хуть те пайанах выртса вил! Ĕлĕкхи пурнăҫа ăҫтан ҫиттĕр. Астăватăн пулĕ—аҫу йепле пурăнса ĕмĕрне ирттерчĕ... Ĕҫлетчĕ те, ĕҫмелĕх те, ҫимелĕх та тупатчĕ. Ҫитетчĕ. Халĕ ак ĕҫĕ те ҫук. Ĕҫлесен те—ĕҫмелĕх те, ҫимелĕх те ҫук. Иртнĕ пурнăҫра ĕҫни-ҫинисене аса илсен, ҫăвартан шыв килет,—терĕ те Мĕкĕте, ҫăварĕнче чĕлхине йăвалаcа, сурчăкне ланкăрт ҫăтрĕ.

— Чарăн! Атте ĕҫни ҫинчен ан асăнса тăр, епĕ ăна ахаль те пĕлетĕп. Тимĕрҫе килнĕ чух кам кăсйине путылки-путылкипе ерех чиксе килетчĕ? Есĕ мар-и? Ерех ĕҫтерсе, йӳн хакпа ĕҫлеттерешшĕн?—терĕ Тимухха хайаррăн кăшкăрса.

Мĕкĕте, Тимухха ҫилленнине сиссе, кăшт кутăн-кутăн чакрĕ:

— Есĕ ан ҫилен, уншăн, Тимухха шăллăм. Епĕ ун ҫинчен ахаль ҫеҫ асăнатăп. Вăл вăхăтсем пулнă та, иртсе кайнă ĕнтĕ. Калле ҫаврăнас ҫук... Апла епĕ ҫăнăх кайса илсе килем. Есĕ унччен пуртта туса хур,—терĕ те Мĕкĕте лаҫран хăвăрт тухса кайрĕ.

Мĕкĕте ҫăнăх илме тухса кайни чылай вăхăт ирт-

рĕ. Тимухха пуртгине туса пĕтерсе, сивĕ шыв ăшне сивĕнме чиксе хучĕ.

Кăшт тăрсан Мĕкĕте, шалпар кĕрĕкĕ арки айне пытарса, пĕр пĕчĕк хутаçпа çур пăт çăнăх илсе килчĕ.

— Фу, аран-аран илсе çитертĕм. Колхозниксем курассăнах туйăнаť. Курмарĕç пулсан йурĕччĕ,—терĕ Мĕкĕте сывлăшне çавăрса.

— Пуртту хатĕр. Ав, ил,—шывра!—Тимухха валашка çине аллипе чăсса кăтартрĕ...

— Йураť, куратăп. Анчах епĕ санпа пĕр-ик сăмах калаçасшăнччĕ, мĕншĕн тесен ман сăмах саншăн та, маншăн та усăлă пулассăн туйăнаť,—терĕ Мĕкĕте ун-кун пăхкаласа.

— Кала. Мĕнле усă пулĕ маншăн санпа калаçни?—терĕ Тимухха сиввĕн.

— Мĕнле усă? Ак, мĕнле. Есĕ ĕç çук пирки çимерен аптăраса пурăнатăн. Анчах... ку калаçу пирĕн иксĕмĕр хушăра çеç пултăр. Ман алăра çав çимелли: çăнăх-кĕрпе, аш-пăш, сĕт-çу туллийех, ниçта хума çук. Есĕ мана пулăшсан, епĕ сана, мĕн чул кирлĕ, çавăн чул пама пултаратăп. Пĕр ĕçсе çи те вырт,—терĕ Мĕкĕте Тимуххан хăлхи патне пырса.

— Есĕ укçасăр памăнçке?

— Мĕн укçи? Укçа тавраш кирлĕ мар. Анчах епĕ каланине итле. Ĕç ăнса пырсан, çийĕнчен тата хамран та парăп...

Тимухха ним ăнланмасăр Мĕкĕте калаçнине итлесе лараť.

— Кала еппин, мĕн калатăн. Епĕ итлетĕп.

— Акă мĕн. Халђ пирĕн колхозниксем килте çук. Ман алăра икĕ пуснă сысна тушкисем, тата пĕр вунă пăт сарçу пур. Епĕ санран ыйтасшăн, çав йапаласене сан тимĕрç лаççине вăхăтлăха çĕрле пуличчен хума пулĕ-и?.. Уншăн епĕ сана ахалђ тумăп. Çăнăх, аш, çу парăп.

Тимухха çак сăмахсене илтсен, тĕлĕннипе ларнă çĕртех йупа пек хытса кайрĕ. Мĕкĕте Тимухха çине шăтарас пек пăхаť.

— Есӗ колхоз ашне, ҫуне ман лаҫҫа пытарнине сиссен мӗн пулӗ вара?

— Хе-хе-хе!.. Ан хӑра... Никам та сисес ҫук. Тимуххапа Мӗкӗте нумай калаҫса тӑмарӗҫ. Килӗштерчӗҫ. Кӑшт тӑрсан Мӗкӗте икӗ мӑнтӑр сысна тушкисем, тата икӗ пичке сар ҫу тийесе пырса, Тимуххан тимӗрҫӗ лаҫҫине пушатса кайрӗ. Тимухха лаҫҫине питӗрсе илчӗ те, килне кайса ҫӗрулми пӗҫерме пикенчӗ. Анчах халиччен ҫын йапалине вӑрласа курманскерӗн, лаҫҫинче вӑрланӑ йапала выртнипе чӗри вут хыпнӑ пек ҫунаҭ. Ҫӗр-улмийӗ пиҫрӗ. Кашни кун мӗн чул пӗҫернине пурне те ҫисе йараканччӗ. Пайан ик-виҫ ҫӗрулми ҫирӗ те, тӑранчӗ. Ҫӑтса та анмасҭ. Йулашкинчен пӑчӑ землянкинче тӳссе лараймарӗ, тулала тухса кайрӗ.

Каҫ пула пуҫларӗ. Тимухха землянкипе лаҫҫи хушшинче каллӗ-маллӗ уткаласа ҫӳрет. Кураҭ—колхозниксем ухатаран кӗрлесе килеҫҫӗ. Икӗ кашкӑр тытнӑ: вӗсене йӗлтӗрсем ҫине хурса сӗтӗрсе килеҫҫӗ. Колхозниксене курсан, Тимухха хӑраса ӳкрӗ. „Ӑнсӑртран лаҫӑн тӗнӗ шӑтӑкӗнчен пырса пӑхсан? Лекрӗм вӗт. Вунӑ ҫул... Халех колхоз председателне калас та кӑтартас. Вара айӑпламӗҫ. Ҫук. Апла та, капла та айӑплӗҫ. Калас мар. Иртсе каймӗ-и,—тесе шухӑшларӗ вӑл.

Колхозниксем кашкӑрсене сӗтӗрсе иртсе кайрӗҫ:

— Ак, куратӑн-и, Тимухха! Есӗ хӗлӗпе ухутана ҫӳресе те пӗр кайӑк тытаймастӑн. Епӗр пӗрре кайса икӗ кашкӑр тытрӑмӑр,—кӑшкӑраҫҫӗ савӑнӑҫлӑ колхозниксем.

Колхоз председателӗ, Влассӑв, колхозниксенчен уйӑрӑлчӗ те, тӳрех Тимухха патне утса пычӗ.

— Авани-ха, Тимухха. Епӗ сан патна пӗр ӗҫпе... Тимухха кӑшт хӑранӑ пек пулчӗ.

— Мӗн ӗҫпе? Кала.

— Есӗ ан хӑра, епӗр сана вӑйпа мар ху ирӗкӳпе хамӑр колхоз членӗ тӑвас тетпӗр. Килӗшетӗн-и?...

— Çук! Епĕ колхоза кĕместĕп!—татса хучĕ Тимухха. Унтан вăл килĕ йеннеле утма пикенчĕ.

— Чим-ха чим! Колхоза çырăнас килмесен, ахаљ ĕçле. Пĕлетĕн вĕт, çурхи акана хатĕрленетпĕр. Ĕç нумай. Хамăр тимĕрçĕсем ĕлкĕреймеççĕ. Епĕр сана ĕçленĕшĕн лайăх тӳлĕпĕр. Çиме çăнăх, кĕрпе, аш, сĕт-çу парăпăр. Тух çак чуна илекен земљанкăран. Хваттер те парăпăр.

Тимухха утма чарăнса, Влассăв çине тинкерсе пăхрĕ:

— Есĕр мана хăвăр патра, çăнăх, кĕрпе, аш, сĕт-çу парăпăр тесе улталаса, хăвăр тарçăр тума тăрăштăр-и? Çук! Епĕ сирĕн тарçăр пуласшăн мар-ха...

— Çук, Тимухха. Епĕр сана тарçă тăвасшăн мар. Сана çак тĕттĕмлĕхрен туртса кăларасшăн. Анчах есĕ ăнланса илейместĕн пире.

Тимухха нимле те ăнланмасť. Ун йалан пĕр шухăш—пĕччен пурăнса пуйасси. Çав çилĕпе вăл Влассăва тем туса тăкĕччĕ. Анчах вăйĕ çитеймессĕн туйăнаť, мĕншĕн тесен Влассăв кашни кун тулă çăкăрĕпе аш йашки çийет, Тимухха—шуратман çĕрулмипе хытнă ыраш çăкăрĕ.

— Çук, есĕр мана хăвăр пата ан чĕнĕр. Епĕ сирĕн пата пырас çук. Ĕçĕр пулсан, хам пата илсе килĕр, ĕçлесе парăп,—терĕ вăл йулашкинчен земљанки йеннеле утса.

Влассăв урăх чарса тăмарĕ.

— Йурĕ еппин. Ыран ĕç кӳрсе парăпăр,—терĕ те йал йеннеле утрĕ.

## V

Тимухха пӳрте кĕчĕ те, çийĕнчех калле тухрĕ. Унтан нумайччен пуçне чиксе, тарăн шухăша путса, пӳрт таврашĕнче калле-малле уткаласа çӳрерĕ. Сасартăк вăл, шăп чарăнса тăрса, йал çинеле пăхрĕ. Унтан тепĕр хут земљанки çине çавăрăнса пăхрĕ те, йалала май майĕпен утрĕ. Тимухха урам тăрăх, ниç-

тала пăхкаламасăр, клуб йеннеле утаҫ. Тарăн шухăша кайса пынипе, Тимухха хăй те сисмерĕ:

— Пирĕн йеннеле килетним, Тимухха?—терĕ Таҥă, хыçалтан чупса çитсе.

Тимухха Таҥă çине пуçне йăлт çĕклесе пăхрĕ те, вăтаннипе каллех лашт йачĕ. Сăнĕ пĕрре хĕрелсе, пĕрре шуралса кайрĕ. Вăл вĕт Таҥăна курса каласшăнах килет кунтала. Çавăнпа та, ăна курнипе унăн пĕтĕмпе кăмăлĕ тулчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл тыткăна лекнĕ çын пек, Таҥă мĕн хушнă, çавна тума хатĕр. Пултараҫ кам хĕрĕ!.. Качча хăй май çавăраҫ-çавăратех. Пăхăр-ха, пăхăр. Тутисем йепле, тăп-тăп, йăл кулса ачашлаççĕ. Куçĕсем, куçĕсем!... Чĕлхи-çăварĕ, çемçе сăмахĕсем пылпа çу пек ирĕлеççĕ, Тимуххана илĕртеççĕ.

— Ан хăра, Тимухха. Колхозра саншăн ырринчен урăх ним те пулас çук. Сан вĕт аллусем—ылттăн. Анчах есĕ ху тĕттĕм пирки çеç çапла тарăхса çын ĕретне кĕреймесĕр пурăнатăн. Колхоза çырăнсан, епĕр сана каç-каç çырăва вĕрентĕпĕр. Лайăх хваттер парăпăр. Пĕлетĕни ăçта?.. Ак çак Мĕкĕтен икĕ хутлă çурчĕн пĕр пӳлĕмĕнче,—терĕ Таҥă, хĕрлĕ сăрпа сăрланă тăрăлă, икĕ хутлă çурт çине пуçĕпе тайса кăтартса.

Тимухха, Мĕкĕте йатне илтсен, типтикĕс утса пынă çĕрте такăнса чут ӳкетчĕ. Тимĕрçĕ лаççинчи икĕ сысна тушки, икĕ пичке сарçу асне килчĕç. Вăл тепĕр хут Таҥăн ăслă куçĕсенчен шăтарас пек пăхрĕ те, хурлăхлă сассипе:

— Мĕкĕте... Мĕкĕте вĕт вăл мана хăй çуртĕнче пурăнма памĕ,—терĕ. Тимухха, халиччен нихçан тытăнчăклă калаçмансккер, халĕ чĕлхе çыхланса ларнипе, сăмахĕсене, уççăн калаймарĕ.

— Ĕлĕк вăл çурт хăйĕн пулнă. Халĕ ĕнтĕ унăн мар. Пирĕн, колхозăн. Ху та пĕлетĕн, колхоза кĕриччен пирĕн те пӳрт çукчĕ. Сан пекех землянкăра пурăнаттăмăр. Халĕ епĕр те аттепе унта пурăнма

кусрăмăр. Сана ваҫҫи те пĕр пӳлĕм пур,—терĕ Таҫҫă, Тимуххан кăмăлĕ колхоз май çавăраннине сиссе.

Çак сăмахсене илтсен, Тимухха пĕтĕмпех Таҫҫă май çавăрăнса ӳкрĕ. Çавăнпа та ун халех мĕн пур айăпĕсем çинчен тĕпĕ йĕрĕпех каласа парасси килчĕ. Анчах нимпе те, çыхланакан чĕлхине çавăрса йарса, калама пуçлаймасть.

— Епĕ пысăк айăплă сирĕн умăрта,—терĕ вăл пĕтĕм вăйхалне пухса.

Таҫҫă, Тимуххан салху куçĕсене пăхса, кăшт тĕлĕнчĕ:

— Мĕншĕн айăплă? Ман шухăшпа есĕ пĕртте айăплă мар. Айăплама та çук, мĕншĕн тесен тĕттĕм çын çырăва та пĕлместĕн, çавăн пирки те халиччен колхозран, кашкăртан хăрана пек, хăраса пурăннă. Халĕ ĕнтĕ есĕ ăнланса илтĕн.

— Çук, вăл çеç мар, тата пысăк айăп!.. Анчах есĕ каçар мана. Ан айăпла! Айăпла пуçласан хута кĕр,—Тимухха хăй те сисмерĕ Таҫҫăн аллине йарса тытрĕ. Хăйĕн куçĕсенчен сывлăм шывĕ пек пĕрчĕнпĕрчĕн куççулĕсем йухаççĕ.

— Ан йĕр, Тимухха. Есĕ вĕт пĕчĕк ача мар. Епĕ сана айăпламастăп. Никама та айăплаттарас çук. Хут те хăçан та сан хутна кĕме хатĕр. Анчах епĕ каланă сăмахсенчен ан тух!—терĕ Таҫҫă, Тимуххана шеллесе.

Тимухха хăйĕн айăпĕсене йĕрки-йĕркипе калама пуçларĕ.

Таҫҫă Тимухха сăмахĕсене хăлхисене тăратсах итлерĕ. Пырсан-пырсан вара çапла каларĕ Тимуххана:

— Мĕкĕте колхоз йапалине вăрласа, ман патна пытарса хунине пĕлтернĕшĕн сана...

Тимухха Таҫҫăна пӳлчĕ:

— Мĕн пулĕ ши ĕнтĕ?.. Тĕрме?..

— Сана уншăн айăплама мар, мухтатăп епĕ. Мĕншĕн тесен есĕ пирĕн хушăра пытанса пурăнакан клас тăшманне пĕлтеретĕн,—терĕ Таҫҫă ăна мухтаса

Тимухха, Таҫӑ ҫине пӑхмасӑр, пуҫне чиксе хӑйӗн айӑпӗсене малала калама пуҫларӗ.

Каҫ пулчӗ. Ҫил тухрӗ, виҫӗм кун каҫ ҫунӑ кӗпшек йура ҫӗр ҫумӗнчен вӗҫтере пуҫларӗ. Таҫӑпа Тимухха ҫынсем илтмелле мар майӗпен калаҫса, клуба кӗрсе кайрӗҫ.

## VI

Вӑл каҫ клубра комсомолӗссем ҫпектакӑҫ лартрӗҫ. Сценӑ ҫинче „Партизансем“ йатлӑ пйессӑ выҫарӗҫ. Таҫӑпа Тимухха ҫпектаккӑҫ тӑршшипех йунашар ларчӗҫ. Чаршав хупӑннӑ хыҫҫӑн, халӑх хытӑ алӑ ҫупрӗ. Тимуххапа Таҫӑ та ҫупрӗҫ. Колхоз предҫедатӗлӗ—Влассӑв та унтаччӗ. Вӑл Тимуххапа Таҫӑ ҫине чалӑшӑн-чалӑшӑн пӑхса ларчӗ. Колхоз кладовшчикӗ Мӗкӗте те пурччӗ. Вӑл Тимухха ҫине сӑмси тӑрӑх шулӗкле пáхса, Таҫӑпа калаҫнине вӑрттӑн итлесе ларчӗ. Халиччен ҫпектаккӑҫ курса пӑхман Тимуххан кӑмӑлне сценӑ ҫинче выҫани питӗ килӗшрӗ. Ҫпектаккӑҫ ҫурҫӗр автанӗсем авӑтас умӗн пӗтнӗ пулсан та, Тимуххана вӑл ытла та час пӗтнӗ пек туйӑнчӗ. Халӗ ӗнтӗ ун Таҫӑран пӗртте уйӑрласси килмест.

Ҫпектаккӑҫ хыҫҫӑн Тимухха Таҫӑна ӑсатрӗ. Хапха умне ҫитсен, тата кӑшт калаҫса тӑчӗҫ те, унтан алӑ тытса уйӑрӑлчӗҫ. Таҫӑ икӗ хутлӑ ҫуртӑн вырӑсла хапхинчен кӗрсе, курӑнми пулчӗ. Тимухха савӑнӑҫлӑ кӑмӑлӗпе урам тӑрӑх, вӑрӑмӑн йара-йара пусса земҫанки йеннеле утрӗ.

* * *

Ҫилтӑман вӑйланнӑҫемӗн вӑйланать. Тимухха урапан ҫапса ӳкересле тӑмана хирӗҫ парӑнмасӑр утать. Сасартӑк ун хыҫӗнчен пӗр мӗлке чупса ҫитрӗ те, ҫухинчен ҫавӑрса тытрӗ:

— Ах, выҫӑ йытӑ! Мӗншӗн комсомолкӑ Таҫӑна ман ҫинчен пӗлтертӗн... Ак, сана! Мана вӗлеретӗн

пулсан, есӗ те вил!—ахлатса, те чулпа, те кире пуканӗпе пуҫӗнчен ҫапрӗ. Тимухха кам ҫапнине, мӗншӗнне ним те ӑнланса илеймерӗ; куҫӗсенчен вут хӗлхемӗсем йалтӑртатса сирпӗнчӗҫ.

— Ой! Рас-с-с-пу-у-й!—кӑшкӑрса йачӗ те вӑл, хайаррӑн, касса йанӑ йӑвӑҫ пек, йур ҫине лаплатса ӳкрӗ.

Тимухха кӑшкӑрни пӗтӗм йала илтӗнчӗ. Сасса хирӗҫ ҫынсем чупа-чупа ҫитрӗҫ.

— Кам ку? Кам?—тесе пӗр-пӗринчен ыйтаҫҫӗ.

— Тимӗрҫӗ Тимухха,—терӗ пӗр сасӑ.

Кам ӑна? Мӗншӗн вӗлерес пек хӗненӗ?

— Хулигансем пулӗ. Кам пултӑр урӑх?

— Халӗ ҫеҫ вӗсем Таҥӑпа ҫпектаккӑҧрен тухса кайрӗҫ.

— Вилмен-и?

— Ҫук. Сивлӑшӗ пур.

Тимухха тавра темӗн чухлӗ халӑх пухӑнчӗ. Тӗрлӗ сасӑсемпе кӑшкӑрашаҫҫӗ. Кам хӗневине никам та пӗлмест.

Таҥӑ та чупса ҫитрӗ.

— Мӗн пулнӑ? Ма халӑх пуҫтарӑннӑ?—ыйтрӗ вӑл халӑх ҫине пӑхса.

Тимӗрҫӗ Тимуххана такам вӗлерес пек хӗненӗ,—терӗ пӗр сасӑ.

— Ку ӗҫе никам та мар, Мӗкӗте тунӑ,—терӗ Таҥӑ.

— Ӑҫта вӑл?

— Тытас, ӑна!

— Тытас,— кӑшкӑрса чупкалаҫҫӗ ҫынсем.

Таҥӑ ҫавӑнтах Тимуххана хӑй хваттерне йатса кӗме хушрӗ. Тимуххана виҫҫӗн-тӑваттӑн йатрӗҫ те, икӗ хутлӑ ҫурт хапхинчен илсе кӗчӗҫ. Ҫынсем саланчӗҫ.

Каҫран пуҫланнӑ тӑман ҫутӑличченех туллашрӗ. Ҫил, сӑпкари ача пек, тӗрлӗ саспа йӑнӑшса макӑрчӗ. Кӑнтӑрла хӑратнипе пулас, вӑл каҫ анкарти хыҫӗнчен кашкӑрсем уламарӗҫ. Ҫавӑнпа йалти йытӑсем те канлӗ ҫывӑрса ҫӗркаҫрӗҫ. Йал ыйӑха кайрӗ. Ҫутӑлнӑ ҫӗре тӑман та чарӑнчӗ.

---

# ЙАКУР ÇУЛĔ

## I

Шăп йал варринчи ултă кĕтеслĕ, тăррине тимĕрпе витсе, хĕрлĕ сăрпа сăрланă хыр пӳрт таçтанах курăнса ларать. Урам йенчи çамки çумне шултăра саспаллисемпе вывĕскă çырса çапнă: „Сталин“ колхоз правленийĕ.

Вăл хыр çурт ĕлĕк пуйан Мĕкĕтен пулнă.1930-мĕш çул Мĕкĕтене пĕтĕм çемйипе тытса Нарыма ăсатрĕç; çуртне туртса илсе „Сталин“ колхозне пачĕç.

Сарă сăрпа сăрланă хапха йупи çумне пĕр пысăк мар чан çакнă, вăл чана кашни кун ирхине—ултă сехетре, кăнтăрла—вуник сехетре, каçхине пилĕк сехетре, правленирен пĕр ватă старик тухса:—тан-тан!.. çапать. Чанĕ пĕчĕккĕ пулсан та, сасси йантăраса пĕтĕм йала сарăлать. Вăл чан сассине колхозниксем çеç мар, колхозра тăман хресченсем те кашни кунах ир те, кăнтăрла та, каç та илтеççĕ. Хăшĕ пĕрисем вара:

— Ав, колхозниксене кĕлле чĕнеççĕ,—тесе лĕх-лĕх кулаççĕ.

— Турăсăрсем! Чиркӳ чанне хапха йупи çумне çакса, турăран мăшкăлаççĕ,—тесе, хаш хуйхăраççĕ ватă карчăксем.

Чăнах та, турăсăрсем ĕнтĕ ку колхозниксем: чиркӳрен—халăх çурчĕ турĕç, чанĕсене трактăр тăвакан савăта ăсатрĕç, пĕр пĕчĕк чанне çеç хăйсене хăварчĕç. Ĕлĕк çынсем чан сассипе чиркĕве кĕлле çӳренĕ. Халь вăл чан сасси ирхине—ĕç пуçлама, кăнтăрла—апат тума, каçхине—ĕç пăрахма пĕлтерет.

## II

Йакур йал вĕçĕнче, колхоз правленинчен инçе мар пурăнать; çавăнпа чан сассине ир те, кăнтăрла та каç та питĕ лайăх илтет. Йакурпа арăмĕ мĕн ĕлĕкренпех „тутлă“ пурнăçпа пурăнса курман, мĕншĕн тесен пурнăçĕ пит чухăн, ача-пăча пӳрт тулли пулнă: виçĕ хĕр, виçĕ ывăл, пĕринчен пĕри пĕчĕккĕ. Чи асли—сакăр çулта; вĕсене пăхас, тăрантас, çийĕсене питĕрес пулать. Чухăн пурнăç вăл—пыл сĕрнĕ кулач татăкĕ мар: вăрçтарать те, туллаштарать те... Йалта колхоз пулсан, Йакурпа арăмĕ пушшех йăтăпа кушак пек тавлашса пурăна пуçларĕç. Пурăнма питĕ йăвăррипе Йакур хăй колхоза çырăнасшăн. Арăмĕ, Марйе, нимпе те майа пымасть, мĕншĕн тесен, „çын сăмахне“ итлет.

„Уйрăлас—çынсенчен намăс, мĕнле пулсан та, ултă ача ашшĕ-амăшĕ пуличчен пĕрле пурăнса ĕмĕре ирттернĕ,—тесе шухăшлать Йакур. Çавăнпа кашни ир, чан сасси илтмессерен, тавлашма тытăнаççĕ вĕсем:

— Вăхăтра ĕçе пуçăнаймастăн... Вăхăтра апат тăваймастăн... Пурнăç-и ку? Ав, колхозра пурте вăхăтлă пулса пырать. Хуть те мĕнле пурăн ачусемпе... Малашне епĕ капла тӳссе пурăнаймастăп, колхоза çырăнатăп...

-- Çырăнсам-и-и... çырăн! Епĕ тытса тăратăп-им сана?.. Ачасем çинчен калаçса тăмали те çук. Çурмала: виççĕшĕ сана, виççĕшĕ мана. Мĕн, сансăр пуçне выçă ларĕç тесе шутлатним?! Ан хăра. Салтакра та тăвата çул çӳрерĕн. Пĕчченех пурăннă: акине те тунă, тыррине те вырнă, вăрманне те кайнă... Выçă ларман...

Йакур иккĕмĕш çул ĕнтĕ çапла: „хуть те мĕнле пурăн ачусемпе, колхоза çырăнатăпах“—тесе, арăмне вăрçса пурăнать. Анчах хăй нийепле те арăмĕпе ачисене пăрахса тухса кайса, хăйĕн шухăшне вырăна çитерейместь. Йакур пек чухăнсем пурте тенĕ пекех колхоза çырăнса пĕтнĕ ĕнтĕ. Йалта тĕреклĕрех вă-

тамсемпе кулак йуррине тăсакансем çеç йулнă. Йакур çавсем хушшинче пĕр-пĕччен, кĕтĕве кĕмен ĕне пек, ни унтала ни кунтала кайма пĕлмесĕр, пĕр вырăнта таптаса тăрат̌. Хăш чух хăйуланса çитсе, „çырăнатăпах"—тесех пӳртĕнчен тухса кайат̌. Сасартăк кĕсри аса килет те, хăш чух хапхинчен тухсан, хăш чух çурма-çула çитсен, калла çаврăнса кĕрет.

— Мĕншĕн çырăнмарăн тата? Мĕншĕн калла çаврăнтăн? Çырăнан пулсан, çырăн. Мана тарăхтарса ан пурăн,—тесе вăрçма тапратат̌ Марйе.

— Çырăнасси вăл ним те мар. Анчах... Лашана парасси шел,—пуçне лăшт чикет Йакур.

Йакур çапла каласан, Марйе пушшех урса кайса, çĕрти-çӳлтине хăвармасăр, йĕре-йĕре çунтарма тытăнат̌. Йакур хăй айапла иккенне сиссе, арăмĕ çине пăхмасăр, пуçне чиксе тарăн шухăша путса ларат̌.

III

Вăхăт—çырмари шавлă шыв йухăмĕ пек йухса иртет. Çанталăк çуркунне йенне те сулăнчĕ. Улăмпа, хăмапа, тимĕрпе витнĕ пӳртсем, кĕлетсем çурхи хĕвел çинче хĕртĕнсе, ăшăнса лараççĕ.

„Сталин" колхоз членĕсем çурхи акана тухма хатĕрленеççĕ. Тимĕрçĕ лаççинче акапуçсем, сӳресем, урапасем тӳрлетеççĕ, кĕлетсем умĕсенче трийĕрсемпе вăрлăхсем тасатаççĕ. Шурă сухаллă старик хăй ĕçне манмаст̌, кашни кун вăхăтсенче тухса чанне: тан-тан! çапат̌. Ир пуçласа каçченех чан сасси, млатук сасси, трийĕр сасси йанраса тăрат̌ урам хушшинче.

Кĕçĕр Йакур çĕрĕпе çывăраймарĕ, тĕрлĕ шухăша кайса, пĕр айăкки çинчен, тепĕр айăкки çине çĕклене-çĕклене çаврăнса çĕр каçрĕ. Ирхине, ултă сехетри чан сассине илтсен, тăрса питне çурĕ те, арăмне ним каламасăр, тумланса тухса кайрĕ.

— Ăçта кайатăн ирех?—кăшкăрса йулчĕ Марйе.

Йакур арăмне хирĕç чĕнмерĕ, пӳрт алăкне кăна темшĕн хыттăн хупса хăварчĕ. Алăкĕ çав тери

шартлатнипе çывракан ачисем ăйхисенчен вăранса сысна çурисем пек çуйăха пуçларĕç.

„Ниçтах та кайаймăн-ха, курăп ак, калла çаврăнса кĕрĕн",—шухăшларĕ Марйе хăй ăшĕнче.

Йакур хапхаран тухса, кăшт чарăнса тăчĕ те, чĕлĕмне тивертрĕ, унтан колхоз правлени йеннеле васкаса утрĕ.

Правлени умĕнче колхозниксем туллийех: арçынсем, хĕрарăмсем шавлаççĕ, кăшкăрашаççĕ. Правленирен пĕр качака сухаллă, типшĕн çын тухрĕ те:
—Иван, есĕ комсомолĕцсемпе вăрлăх тасатма кайан. Мирунпа Макçăм утă тийеме кайăр. Ыттисем пурте харпăрхăй ĕçне,—терĕ.

— Куçма, Марине, Укçине, Аҥук, Плаки,—атăр ман хыçран!—тесе кăшкăрчĕ комсомолĕцсен бригадирĕ—Иван. Чĕннĕ çамрăксем пурте Иван патне чупса пычĕç. Унтан алла-аллăн тытăнса, йурă çеммипе кĕлетсем йеннеле утрĕç.

— Ушкăн-ушкăн пухăнса,
Çĕнĕ йурă йурлар-и;
Пурте пĕрле тытăнса,
Çĕнĕ пурнăç тăвар-и...

Çапла, колхозниксем, вĕлле хурчĕ çурă уйăрнă вăхăтри пек кĕрлесе, шавласа тĕрлĕ йеннеле, тĕрлĕ ĕçе саланса пĕтрĕç. Йакур, кĕтĕве кĕме хăракан пăру пек, вĕсем çине тĕлĕнсе кайса пăхса тăчĕ. Каллех хăйĕн кĕсри асне килчĕ. Никĕс пĕренисем çĕрсе, вaтă карчăк пек чалăшса кайнипе тăватă кĕтессинчен те тĕревсем çапса, тăмпа шăлнă пўрчĕ çине çавăрăнса пăхрĕ. Шел. Çав тĕревленĕ пўртре çуралса ўснĕ вĕт Йакур. Начар пулсан та, „манăн" тесе пуранннă. Ак, ун умĕнче тимĕрпе, хăмапа витнĕ çĕнĕ çуртсем, кĕлетсем лараççĕ; анчах, вĕсене колхозниксем „манăн" мар, „пирĕн" теççĕ. Йакур халь те „манăн" теме пăрахаймаст. Выльăх витисенче лашасем, ĕнесем йĕркелĕн сарăлса тăраççĕ, сыснасем çуйăхаççĕ; вĕсем пурте „Сталин" колхозăн выльăхĕсем, вĕсене колхозниксем „пирĕн" теççĕ.

— Ей, пăрăн çул çинчен. Мĕн курак пек çăварна карса тăратăн? Лашасем таптаса кайĕç!—тенĕ сасă илтĕнчĕ. Унччен те пулмарĕ, тăватă-пилĕк çуналă лашасем Йакуртан пăрăна-пăрăна çил пек ирте-ирте карĕç. Йакур хăранипе ниçтала пăрăнма пĕлмесĕр, пĕр вырăнта тапăртатса илчĕ. Чи хыçалтан пыракан лаши Йакур тĕлне çитсен, вĕлт пăрăнчĕ те, çуни ÿречипе Йакура уринчен çаптарчĕ. Йакурĕ хăй те сисмерĕ, çуна ăшне кĕрсе ÿкрĕ. Çуна çине çын ÿкнинчен хăраса лаша сиккипе кайма пуçларĕ. Йалтан та илсе тухса кайатчĕ пулĕ те, халĕ Йакур ăрăскалне—сулăнкă пулчĕ, çав сулăнка çитсе çапăнчĕ те Йакур сирпĕнсе тухса ÿкрĕ, пуçĕпе йур ăшне тăрăнса тăчĕ. Утă тийеме кайакан Максăмпа Мирун хырăмĕсене йăваласа:

— Ха-ха-ха-ы-ы-ы-ы!—ахăлтатса кулса иртсе кайрĕç.

Йакур йур çинчен тăрса, çĕлĕкне тăхăнчĕ те, тÿрех колхоз правлени йеннеле утрĕ. Правленийе кĕриччен малтан, кĕлет умĕнче вăрлăх тасатакан комсомолĕцсен бригади патне пычĕ. Лешсем çавтери васкаса ĕçленипе, хăйсем патне çын пырса тăнине те сисмеççĕ. Йакур нимĕнле сăмах тупса калаймасăр, чылайччен пĕр ури çинчен, тепĕр ури çине пускаласа тăчĕ. Унтан ним тăвайман йенне, хм-хм!—ÿсĕрчĕ те:

— Вăй патăр!—тесе сăмах хушрĕ.

Комсомолĕцсем пурте Йакур çине çаврăна-çаврăна пăхрĕç.

— Мĕн ĕçпе çÿретĕн, Йакур пичче? Колхоза çырăнас шутпа мар пулĕ-çке,—терĕ Иван бригадир, тусан çыпăçнă çамкине шăлкаласа.

— Çапла тесе килнĕччĕ те... Те йурăхлă ĕнтĕ епĕ, те...

— Есĕ йурăхлă пулмасан, тата кам йурăхлă пултăр?.. Ну мĕнле Марйе инке майа килет-и?..

— Çук, нимпе те килĕштермест,—терĕ Йакур. Вăл вăтаннипе çĕртен пĕшкĕнсе пĕр пĕрчĕ улăм илчĕ те, хуçкаласа тăкрĕ.

Иван Йакур вăтаннине сисрĕ:

— Ан хуйхăр, Йакур пичче. Хăйех майа килĕ. Епĕр —комсомолĕцсем, ăна хамăр май çавăр ăпăр-çавăрăпăрах. Укçине, есĕ кĕçĕр çав Марйе инке патне кайса, калаçса лар-ха. Йуратă-и?

— Йурĕ,—терĕ Укçине татса. Укçине çамрăк комсомолккă, вăл ĕçлеме те, чĕлхи çăварĕпе калаçма та пултаракан хĕр.

Шурă сухаллă старик правлениren тухса чан патне майĕпен утса пычĕ те: тан-тан!.. вуникĕ хутчен çапрĕ. Чан сассипе пĕрле колхозниксем тĕрлĕ йенчен, столовăй патнеле апата ута пуçларĕç.

— Аттă, Иакур пичче, пирĕнпе апата. Колхоза çырăнниччен малтан—колхоз йашки çăкăрне çисе пăх,—терĕ Иван.

Комсомолĕцсем урама йаврăтса йурласа, столовăй йеннеле утрĕç. Йакур та вĕсемпе пĕрле кайрĕ.

## IV

Марйе, упăшки колхоза çырăнмасăр, ахалех каллетаврăнасса кĕтрĕ. Çук, Йакур ирхи апата та, кăнтăрлахине те таврăнмарĕ. Каçхи чан сасси хыçĕнчен тин çаврăнса çитрĕ. Йакур алăкне уçса, пўртне кĕнĕкĕмен:

— Çырăнсах килтĕн-им?—тесе ыйтрĕ Марйе.

— Çырăнма çеç мар, çур кун ĕçлерĕм те ĕнтĕ,—терĕ Йакур арăмĕн куçĕнчен пăхса.

— Тинех вĕçнĕ ăшĕ канчĕ-тĕр ĕнтĕ...—Тата тем те пĕр каласа вăрçма çеç пуçланăччĕ Марйе, сасартăк Укçине пырса та кĕчĕ:

— Ман килес!..

Марйе, Укçинене курсан, çăварне шыв сыпнă пек лăп пулчĕ. Унтан:

— Тĕпелеле иртсе лар!—терĕ кăшт вăтанарах.

Укçине колхоз чухăнсене мĕнле усă пани çинчен çурçĕрчченех калаçса ларчĕ. Çук, Марйе нимпе те майа пымасть. Итлесе ларсан-ларсан:

— Пурте çырăнса пĕтчĕр-ха, вара епĕ те çырă-

иăп,—тейейсе хучĕ. Çурçĕр автанĕсем авăта пуçласан, кунĕпе ĕçлесе ывăннă Укçине килне тухса утрĕ. Марйе ăна ăсатса кăларса йачĕ.

— Ыран каç тăга килĕп-ха,—тесе хăварчĕ ăна Укçине.

Укçине кайсан, Марйе пуçларĕ çĕрти-çӳлтине хăвармасăр Йакура кышлама. Йакур, арăмĕ вăрçнине илтес мар тесе, пуçĕ çинчен пĕркенсе выртрĕ. Ĕçлесе ывăннăскер, çутăличченех пĕр вăранмасăр çывăрчĕ.

V

Йакур колхоза çырăнсан, тепĕр кунне, кулак арăмĕсем Иакурпа Укçине çинчен суйа сăмахсем сарасшăн пулчĕç. Ирхине çăл патне, шыв ăсма аннă хĕрарăмсем пĕринчен-пĕри ăмăртмала йанраççĕ:

— Йакур, арăмĕнчен уйрălса, колхоза çырăннă, тет,—тесе пуçларĕ, тури пуйан Сахар арăмĕ.

— Комсомолка Укçинепе çыхланнă, тет,—терĕ тапкăшĕ, çын сисиччен тенĕ пек.

— Чăнах-и?..

— Ай-йуй!..

— Чăнах пулмасăр... Кĕçĕр çурçĕр çигсе автансем авăта пуçласан, Йакур патĕнчен тухса кайнине курнă, тет.

— Намăссăрсем! Арăмĕпе ачи-пăчисем умĕнче мĕн хăтланаççĕ. Тфу! Йытăсем!

— Çын упăшкипе çыхланнăшăн Укçинин урине çапса хуçасчĕ!

— Ха-ха-ха! Хы-хы-хы!

— Колхозниксем вĕт вĕсем пурте çапла: ватă арăмĕсене пăрахса, çамрăккисене илеççĕ.

— Ырă çын колхоза çырăнать-и!..

— Комсомолкăсем вĕсем йалан çапла арăмлă çынсемпе çыхланаççĕ...—Тата тем те пĕр каласа хурларĕç комсомолĕçсемпе колхозниксене çăл кутне пухăннă хĕрарăмсем.

Çапла чавка кĕтĕвĕ пек сырăнса илнĕ çăл патне Марйе те йăвăç витрисене майĕпен суллантарса шыв

ăсма анчĕ. Илтет: ун упăшкипе Укçине çинчен, нихçан пулман, пулас та çук ĕçсене пулнă, курнă, илтнĕ, тунă тесе пĕрне-пĕри ĕнентермелех суйса калаçаççĕ. Хăйсене хăйсем пĕлмесĕр пĕрне-пĕри суйнипе, Марйе пырса тăнине те сисмеççĕ. Марйе, суккине «пур» туса калаçнине итлесен-итлесен, тӳссе тăраймарĕ. Хĕрарăмсем хушшине чышкаласа кĕрсе тăчĕ те:

— Мĕн пулман йапала çинчен калаçса чĕлхĕрсене сӳхететтĕр! Укçине пынă пулсан, вăл Йакур патне марман пата каласса ларма пынăччĕ. Епĕ ăна хам ăсатса кăларса йатăм. Намăссăрсем! Есĕр хăвăр çапла та, çынсене те шанмастăр! — терĕ Марйе. Унăн, çавтери çилленнипе, куçĕсем сăра курки пек чарăлса, сăнĕ пĕрре шуралса, пĕрре хĕрелсе кайрĕ. Марйене курсан, çурăк чан пек йанракан хĕрарăмсем çăварĕсене вĕри шыв сыпнă пек тăп пулчĕç. Çавăнтах Марйе çине чалăшшăн-чалăшшăн пăхса, васкаса, витрисемпе шыв ăсрĕç те, пĕрерĕн-пĕрерĕн, тĕрлĕ йеннеле саланса пĕтрĕç. Вĕсем çине Марйе хайарррăн пăхса тăчĕ:

— Ак мĕнле вăл пуйан арăмĕсем, чухăнсем çинчен суккине пур туса, суйа сăмахсем сараççĕ?! — тесе шухăшларĕ. Унтан витрисемпе шыв ăсрĕ те, майĕпен килнеле утрĕ. Марйе хапхи умне çитсен, ăна Иван — комсомолĕц чĕнсе илчĕ:

— Авани-ха, Марйе инке!..

— Аван-ха, ху аван-и? — терĕ Марйе тăп чарăнса. Иван Марйе куçĕнчен пăхрĕ.

— Йакур пичче колхоза çырăнчĕ; есĕ мĕн тата кутăнланса тăратăн?..

Марйе витрисене çĕре лартрĕ.

— Ху та пĕлетĕн, Иван шăллăм. Тĕттĕм хĕрарăмăн пурне те çавăрса илме сасартăках ăс çитмест. Çавăн пек, халиччен епĕ пуйансем хыçĕнчен кайнă, хам та сисмен. Пайан хам куçăмпа курса, хам хăлхасемпе итлерĕм вĕсем суйнине. Кунтан вара епĕ вĕсен суйине нихçан та ĕненессĕм çук, — терĕ Марйе сăмахне

татса. Унтан тулли витрисене йӑтса, килкартишнеле кӗрсе курӑнми пулчӗ.

## VI

Ҫур сехет иртсен, Марйе колхоз правленине пырса кӗчӗ. Комсомолёцсем, Марйе алӑкран кӗрсенех, ӑна ҫавӑрса илчӗҫ те:

— Ура! ура!.. Пирӗн полкка тата тепӗр ҫын хутшӑнчӗ—тесе кӑшкӑрса, Марйене ҫӳлеле ывӑта-ывӑта йарса силлерӗҫ.

Ҫапла чысласа йышӑннипе, Марйе ним тума пӗлмесӗр, пӗр вырӑнта, унтала-кунтала пӑхкаласа тӑчӗ. Пӗр савӑнса, пӗр вӑтаннипе умӗнче тӑракан упӑшкине те курмарӗ.

— Марйе, есӗ те килтӗн-им!—терӗ Йакур савӑнӑҫлӑн.

— Килтӗм. Саншӑн вырӑн пулсан, маншӑн та пулӗ,—терӗ Марйе. Унтан Йакурпа Марйе пӗр-пӗрин куҫӗсенчен пӑхса йӑл кулчӗҫ. Ҫав вӑхӑтра чан сасси: тан-тан! - икӗ хутчен уҫҫӑн йанраса карӗ. Правленирен комсомолёцсемпе колхозниксем ӗҫе тухса кайса пӗтрӗҫ. Вӗсемпе пӗрлех Марйепе Йакур та мӑкӑрмӑкӑр калаҫса тухса утрӗҫ.

---

# ТĂШМАН—КУÇ УМĔНЧЕ

## I

Колхоз правленийĕн анкарти пек сарлака та çӳпĕлĕ çапăлă килкартинче вăрттăн чĕпĕ кăларнă чăхă—кăлик-кăлик!.. чĕпписемпе калаçса, тусан ăшĕнче чакаланать.

Çанталăк кĕркунне йенне сулăннă пулсан та, хĕвел ăшшăн пăхса ачашлать.

Кăвакарнă сухаллă, ĕмĕр çын тарçи пулса ĕçленипе çăкăр пек мăкăрăлса тухнă курпунлă Хĕлип пичче, тупăлха хуллисенчен çыхнă шăпăр йăтса тухрĕ те, хăй тĕллĕн мăкăртатса калаçса, колхоз пуçланнăранпа шăлса тасатман картишне шăла пуçларĕ. Çӳпçапсене вăл купа-купа туса пуçтарать те, кĕреплепе тĕртсе кайса, пĭрахăçа тухнă нӳхреп шăтăкне тултарать. Шăлса тасатнă вырăнта чăх чĕпписем чĕпĕлтетсе калаççа каллĕ-маллĕ чупкалаççĕ. Сасартăк чăх-чĕпсен кĕтӳçи, автан, таçтан сиксе тухрĕ те, кт-кти-ик!.. йантăратса кăтăкла пуçларĕ. Хăй хĕрлĕ туралă пуçне мăнтăр ăйăр пек çӳлеле каçăртса, тăп-тап пускалать, тăп-тап пускалать. Автан сассипе пулас, тусан ăшĕнче чакаланакан чăхă чĕпписене кт-кт-кт!.. йăхăрса илчĕ те сарай айнеле çунатланса чупса кĕрсе кайрĕ. Унччен те пулмарĕ, килкарти варринче хураçи пек мăйне тăсса ларакан пусă тараси çине—кр-р-ррр!.. кăшкăрашса пĕр улакурак пырса ларчĕ.

— Кш-ш-шшш... тăшман!.. Выçă хырăмна чĕпĕ çисе тăрантасшăн вĕçсе çӳретним?—терĕ улакурака аллинчи шăпăрĕпе хăратса, Хĕлип пичче. Анчах улакурак хăрасшăн мар. Вăл мăйне чăсса, çăварне карса пăрахса, Хĕлип пиччерен мăшкăланă пек:—кр-ррр-ак!.. кăраклатать.

Хĕлип пичче улакурак çине çавтери çиллен<е çитрĕ. Чупса кайса, шаршан вутти купи çинчен пĕр чăмăр вутă пуленки илчĕ те улакурака печĕ. Улакурак: ка-ррррк!—кăшкăрса колхоз правлени чӳречи умĕнчи йăмра çине куçса ларчĕ. Хĕлип пичче йеннеле мăйне чăссах пăхма пуçларĕ.

— У-у-ууу .. тăшман!.. Персен те хăрасшăн мар... çĕрçăтасшĕ пуçне...—тесе вăрçа-вăрçа шăлма пуçларĕ Хĕлип пичче. Пăшал пулсан Хĕлип пичче улакурака çавăнтах персе антарĕччĕ. Анчах пăшал çук. Пăшаллă колхозниксем пурте уйра, ĕçре: хăшĕ авăн çапаççĕ, хăшĕ кĕрхи суха тăваççĕ.

Икĕ хутлă колхоз правлени çурчĕн çӳлти хутĕнче пĕр чӳречи уçă. Уçă чӳречерен мунча алăкĕнчен мăкăрланса тухнă пек пăлкаса, кăвакăн-симĕсĕн йавкаланакан тапак тĕтĕмĕ тухаť. Йăмра çинчи улакурак вăхăтран вăхăт пуçне пĕшкĕртсе, хӳрине çĕкле-çĕкле çăварне карса пăрахаť те, Хĕлип пиччене йĕкĕлтенĕ пекех—каррк! каррк! туса илет, хура куçĕсемпе пĕрре чĕпсем çине, тепре Хĕлип пиччене тинкерсе пăхаť.

Хĕлип пичче улакурак мăшкăланине тӳсеймерĕ. Аллинчи шăпăрне пăрахса, пĕр чул катăкĕ илчĕ те, улакурака вăрхăнтарчĕ. Улакурак лапăстатса вĕçсе карĕ.

— Ех, тăшман!.. кулаксен хăраххи—йамăта анчах шыраť: чĕпсене тытса тăпаласшăн, шуйттан,—тесе вăрçса илчĕ Хĕлип пичче.

Курак вĕçсе кайсан, Хĕлип пичче каллех хăй ĕçне пуçларĕ. Чĕпĕлĕ чăхă та чĕпписене йертсе тухса, каллех чакаланма пикенчĕ; чĕббисем амăш тавра чупкалаççĕ. Хĕлип пичче шăлнипе килкартинче тусан мăкăрланаť.

Çак вăхăтрах вырăсла хапха йар уçăлса выртӑť. Кĕтмен çĕртен, хӳрине-çилхине каснă, çӳрен-ула кĕсре утланнă Ваçук—бригадир—сапантуйри пек сиктерсе пырса кĕчĕ. Çав тери хытă чуптарнипе, кĕсри сăмси шăтăкĕсене тавăрса пăрахса, хуткупăс пек каллĕ-маллĕ турткаланса йăвăррăн сывлаť, хырăмĕ айĕн-

чен супăҥ кăпăкĕ пек шапшурă кăпăксем татăла-татăла ўкеççĕ. Кун çав тери шăрăх мар. Ваçук хăй çарапуçăн, кĕпи сухине йўле йанă, çара çухинчен хура çăмпа витĕннĕ сарлака кăкри курăнать, тусанпа витĕннĕ питçăмартийĕсем тăрăх пăрçа пĕрчи пек тар тумламĕсем шăпăртатса йухса анаççĕ; дыҥă пек тăрăхларах пуçĕ çинчи хура çўçĕ, нумайранпа тураманнипе, курак йăви пек лапăстатса кайнă. Çĕмĕрт пек хура куçĕсем темшĕн хăранă пек йăлт-йăлт сиккелесе пăхаççĕ.

— Мĕншĕн çавтери хытă çўретĕн? Кĕсрў сывлăшне те çавăраймасть вĕт?.. Чуптарса вĕлерес тетним?.. Ху—комсомолĕц... Колхоз лашине шеллеместĕн!..— терĕ Хĕлип пичче, Ваçук çине тĕлĕнсе пăхса.

Хĕлип пичче мĕн ачаранпах пуйансем патĕнче ĕçлесе ĕмĕрне иртернĕ; ăна никам та çын вырăнне хурса шутламан. Колхоза çырăнсан тин çын шутне кĕчĕ. Çавăнпа та вăл хаљ хăйне хăй хуçа пекех шутлать: колхоз пурлăхне хăйĕнни пекех сыхлать.

Ваçук кĕсре çинчен сиксе анчĕ те тарлă питне хура аллипе шăлса тасатрĕ:

— Авăн çапнă çĕрте—прорыв, Хĕлип пичче. Пĕччен ним те тума пултараймастăп... Пулăшу ыйтма васкаса килтĕм...

— Мĕнле вăл прорыв пĕте пĕлмест?! Акнă чух прорыв, вырнă чух прорыв, çапнă чух та прорыв! Хăçан пĕтмеле вăл прорыв?

— Кам пĕлет ăна, хăçан пĕтессе,—аллине лашт сулчĕ Ваçук.

— Тĕлĕнмеле сиртен.. Çергейĕв—„ĕç майланать“ тет. Санăн бригадăнта йалан—прорыв. Тахăшне ĕненмеле сире: те сана, те Çергейĕва?

Ваçук тарлă кĕсрине сулхăна кĕртсе кăкарса хучĕ те, хăй правленийе васкаса утрĕ.

Хĕлип пичче, килкартишне шăлса çаранса, шăршан вутти купи çумне чĕлĕм туртма ларчĕ.

II

Колхоз кантурĕнче лару мĕн çук. Унта колхоз председателĕ Çергейĕвпа тимĕрçĕ Петров çеç. Вĕсем колхозри çитменлĕхсене мĕнле пĕтересси çинчен калаçса, пĕр чарăнмасăр чĕлĕмĕсене мăкăрлантарса ларaççĕ. Ват пек йўçĕ чĕлĕм тĕтĕмĕ, çĕлен пек йавкаланса уçă чўречерен тулала тухса кайат.

— Колхозниксем хушшинче кулътура ĕçĕ питĕ начар пырат пирĕн. Пуринчен ытла хĕрарăмсем хушшинче. Çавăн пирки хăшпĕр вырăнсенче прорывсем пулаççĕ. Тата пирĕн колхоз таса мар—кулак таврашĕсем пур. Çавăнпа кулак хыçĕнчен кайса, вĕсен йуррисене йурлакансем те курăнкала пуçларĕç. Çав ирсĕр кулак тавра шĕнчен йепле те пулсан тасалма тăрăшас пулат пирĕн, унсăрăн çак прорывсем пĕтес çук колхозра,—терĕ Петров чĕлĕм чăпăкне ĕмнипе пуçтарăннă сурчăкне сайра шăлĕсем виттĕр чăртлаттарса сурса.

— Ку пит те тĕрĕс ĕнтĕ, Петров йулташ. Пуринчен ытла хĕрарăмсем хушшинче кулътурлă ĕç çук. Пайан хĕрарăмсем çĕрулми кăларнине пăхас тесе кайрăм. Пăхатăп, вĕсем ĕçлес вырăнне пĕр çĕре пуçтарăнса тăнă та, пуçĕсене касăртса, çăварĕсене куraксем пек карса пăрахса итлесе тăраççĕ. Хăшĕсем чĕркуçленсе ларнă, хăшĕсем çĕре чăсăла-чăсăла выртнă. Леш Куçма арăмĕ—Кĕтерне, оратăр пек вăта çĕрте, çĕрулми хутаççи çине улăхса тăнă та, кĕпи çаннисене чавса таран тавăрса йарса, çурăк чан пек йантратат: „Йалан пиртен ыйтаççĕ, йалан епир пар... Малала та капла пулсан, çап-çарах тăрса йулăпăр... Ĕненмесен ак пăхăр, йулашки йĕме тăхăнтăм“ тет, кĕпине уçса кăтартса. Хăшĕсем каçса кайса кулаççĕ. Куçма арăмĕ хăйĕннех перет: „Кăçал каллех тырăсене патшалăха парса пĕтерсен, пĕлтĕрхи пек выçă тăрса йулăпăр... Айăр, хĕрарăмсем, харăс тăрса тырăсене парас мар“, тесе пакăлтатат.

— Чăнахах-и?.. Вăл пĕркун та патшалăха тырă парассине хирĕç тухса каларĕ. Упăшки, Куçма, йеп-

ле йăваш çын! Колхозниксем хушшинче пĕрремĕш ударник шутланать. Хĕрĕ — Укçине — комсомолкă. Амăшĕ—шыв шуйттанĕ, кулак йуррине йурлать. Мĕнле майпа ун чĕлхине кĕскетес-ха?

— Епĕ вăл Кĕтерне çине пăхатăп та... вăл хăй чĕлхипе мар, кулак чĕлхипе калаçать. Ахаљ мар, ăна кам та пулин çак сăмахсене калама вĕрентекен пур. Çав вĕрентекен çынни кам-ши? Çавна пĕлесчĕ.

— Хĕрарăмсем хушшинче ĕçлесси питĕ йăвăр ĕç. Ох, йăвăр..

— Хăраса ӳкрĕни мĕн?

— Ç-у-у-у-к, хăраса мар.—Епĕ хĕрарăмсенчен мар, Колчакпа, Деникĕнпа çапăçнă, хăраман...—терĕ Петров, сӳннĕ чĕлĕмин кĕлне сĕтел çумне шак-шак! шаккаса тăкса...

— Есĕ мĕн хĕрарăмсем хушшинче ĕçлессине Колчакпа—Деникĕнпа çапăçассинчен çăмăл тесе шутлатăн-им? Çук, Петров йулташ. Фронтра есĕ тăшмана куçпа курса, тĕллесе перетĕн. Кунти фронтра тăшман хамăрпа пĕрлех çӳрет. Епĕр ăна час-часах курмастпăр. Тăшман чейе, вăл ăçта пирĕн ĕç çинçе, çавăнтан туртса татма тăрăшать. Пирĕн чи çинçе вырăн хĕрарăмсем хушшинче,—терĕ Çергейĕв. Çак вăхăтрах правлени алăкĕ йарр!..—уçăлса кайрĕ те, Васук кĕрсе тăчĕ...

Çергейĕв, Васука курсанах, вăл ахаљ мар килнине сисрĕ.

— Мĕн хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче бригадăна пăрахса çӳретĕн? Йе мĕн те пулин пулчĕ-и?

— Авăн çапнă çĕрте—прорыв, Çергейĕв йулташ. Пĕччен ним те тума пултараймастăп, пулăшу ыйтма килтĕм,—терĕ Васук сассине чĕтретсе.

— Мĕнле прорыв тата? Енер çăç ĕç аван пыратчĕ вĕт. Пайан каллех прорыв!

— Енер аванччĕ, пайан—прорыв. Пулăшу парăр, —терĕ Васук йĕрес пек сассипе.

— Кала хăвăртрах, мĕнле прорыв тата?—çилленерех кăшкăрса тăкрĕ Çергейĕв.

— Колхозниксем итлемеççĕ. Пайан машин парапанĕ ăшне тимĕр сенĕк йарса машинăна ĕçрен кăларчĕç,—терĕ Ваçук.

Çергейĕвăн сăн-пичĕ пĕрре шуралса, тепре хĕрелсе кайрĕ. Унтан вăл хăвăрт сиксе тăрса, алăкăн-тĕпелĕн каллĕ-маллĕ уткаласа çаврăнчĕ те, Ваçук умне пырса тăрса, ун куçĕсене шăтарас пек пăхса тĕллерĕ.

— Ех, пиçмен пашалу!... Ху комсомолĕц. Сăмсуна уснипе бригадăнти прорывна пĕтерессшĕн. Колхозниксем итлемеççĕ, тетĕн. Есĕ кам? Бригадир мар-и? Хăвăн бригадăнти колхозниксене итлеттерейместĕн, мĕншĕн-ха есĕ комсомол билетне йатса çӳретĕн?

Ваçук çак сăмахсене илтсен, пуçне лăш чикрĕ: чĕри йĕппе чикнĕ пек ыратса кайрĕ. Колчакпа, Деникина çĕнтернĕ Петров партизан умĕнче хăйĕн ачалăхне кăтартнипе намăсланса, Çергейĕва хирĕç нимĕн сăмах та тупса калаймарĕ. Пĕр вырăнтах хытса урисемпе пускаласа тăчĕ. Çав тери намăсланасса пĕлнĕ пулсан, авăн çапнă çĕртех вилнĕ пулсан та килес çукчĕ Ваçук. Чылайччен пĕр вырăнта тапăртатса тăрсан-тăрсан тин:

— Айăплă епĕ, Çергейĕв йулташ. Каçар. Ӳлĕмрен нихăçан та капла пулас çук,—терĕ вăл.

— Айăплă. Каçар... Айăплă çынна мĕн тăваççĕ ăна пĕлетĕн-и?..

— Пĕлетĕп, Çергейĕв йулташ.

— Пĕлетĕн пулсан, манран каçару ан ыйт. Машин парапанĕ ăшне тимĕр сенĕк йараканcем камсем пулĕ тесе шутлатăн?

— Ман шухăшпа çав Кучан Хветĕрĕпе Хăмпă Йаккăвĕ пулассăн туйăнать, мĕншĕн тесен машин çемĕрĕлсенех иккĕш те, „тӳрлеткеличчен пĕр-икĕ кун канатпăр ĕнтĕ“ тесе улăм çине йăвана-йăвана кайрĕç. Ытти колхозниксем пек мар вĕсем.

— Ех, тăшман!.. Кучан Хĕветĕрĕ ĕлĕк кулак пулнă вĕт. Іаларăм, колхоза илес мар тесе. Çук итлемерĕç. „Çĕр çын хушшинче пĕр çын мĕн тума пул-

тарат“ терĕç. Ак сире „мĕн тума пултарат!“ Мĕнле хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче машинăна чарса лартрĕ,—терĕ Çергейĕв, ним чĕнмесĕр, пысăк шухăша кайса лараканн Петров çине пăхса.

— Кучан Хĕветĕрĕ—вăл мĕн колхоза кĕнĕренпех çапла: „Ку колхозра хут те мĕн чул ĕçлесен те пирĕншĕн пурĕ-пĕр усси пулас çук“, тесе хăш-пĕр колхозниксем хушшинче вăрттăн пăтратат. Хăмпă Йаккăвĕ малтанах ытла ырă ĕçлетчĕ; халь шăлт Кучан май çаврăнса ӳкрĕ, нимĕн те ĕçлесшĕн мар. Тата, леш комсомолкă Укçине ашшĕ,—Куçма, „колхозран тухатăп“, тесе çӳрет. Çаксем пурте Кучан ĕçĕсем.

— Сан пек комсомолĕц ене оппортунис, теççĕ ĕнтĕ. Мĕншĕн-ха есĕ тăшман пăтратнине пĕлсе тăрсах халиччен никама та ун çинчен пĕлтермен? Прорыв пулса, бригаду саланса кайас патне çитсен тин пулăшу ыйтма килнĕ. Е-ех!—терĕ Çергейĕв Ваçук çине çиллене çитсе.

Ваçук каллех уйăн айăпне иссе илчĕ. Вăл вĕт мĕн çуркуннеренпех Кучан Хветĕрин ирсĕр ĕçĕсене пĕлсе тăнă, анчах пайанхи кунччен никама та пĕлтермен. Йалан „çĕр çын хушшинче пĕр çын мĕн тума пултарат“ тесе шутласа пурăннă.

— Перре прорыв пулнă ĕнтĕ, вăл тата тарăна кайиччен, ăна пирĕн çийĕнчех пĕтерме тăрăшас пулат. Мĕнле пĕтермели майсем пур? Кучан Хветĕрне пайанах колхозран кăларса сирпĕтес пулат, ăна мĕншĕн кăларса сирпĕтни çинчен колхозниксене лайăх ăнлантарса парас пулат. Машинă парапанĕ ăшне тимĕрсенĕк йанăшăн вăл Кучана пролетари суччумне тăратас пулат,—терĕ сĕтел хушшинче чĕнмесĕр итлесе ларакан Петров.

Петров сăмахĕсене илтнĕ хыççăн, çил çинче çӳренипе çуркаланнă тутисене йăл култарчĕ Ваçук.

— Ку сан питĕ ырă шухăш, Петров йулташ. Апла есĕ уйа кайса Ваçука пулăш, епĕ кунта хĕрарăмсем хушшинче—пуху туса, клас тăшманĕпе кĕре-

шесси ҫинчен ăнлантарса парам,—терĕ Ҫергейĕв, Петров шухăшĕсемпе килĕшсе.

Урăх калаҫса тăрасси пулмарĕ. Ваҫукпа Петров правленирен тухса часах лашасем ҫине утланчĕҫ те, уйала йуртгарса тухса кайрĕҫ. Килкартиш шăлакан Хĕлип пичче, шăлма чарăнсах, шăпăр аври ҫине тайăнса, вĕсене пăхса тăрса йулчĕ.

## III.

Ҫергейĕв, Кучан Хветĕрĕ ҫине ҫав тери ҫиленсе ҫитнипе, нимĕн тума пĕлмесĕр, правлени пӳлĕмĕнче тахҫанччен каллĕ-маллĕ уткаласа ҫӳрерĕ, ăшĕ ҫуннипе ик-виҫ хут умлă-хыҫлăн чĕлĕм туртса йачĕ.

Правлени алăкĕ йăр-ррр... уҫăлса кайрĕ те, алăк йанахĕ урлă майĕпен пусса Укҫине—комсомолкă кĕрсе тăчĕ:

— Авани, Ҫергейĕв йулташ. Епĕ кансĕрлемерĕм-и сана?.. Ыйтмасăрах кĕтĕм,—терĕ Укҫине, ҫӳхе тутисене йăл култарса.

— Ҫук, ҫук... Кансĕрлеместĕн.. Епĕ сана пит курса калаҫасшăнччĕ пайан. Малтан ху каласа пар, мĕн ҫăмăлпа килтĕн?—терĕ Ҫергейĕв, Укҫине йенне ҫаврăнса тăрса.

— Епĕ, Ҫергейĕв йулташ, хĕрарăмсенчен хугаҫмихĕ пуҫтармали бригадă тăвас тесе шуглатăп, ҫавăнпа санпа сӳтсе-йавма килтĕм.

—Ку питĕ лайăх шухăш ĕнтĕ санăн, Укҫине. Патшалăха тырă парас вăхăт ҫитрĕ, пирĕн хугаҫ михĕсем ҫителĕклĕ мар. Вăл бригадă ĕнтĕ колхозниксем хушшинче хутаҫ-михĕ пуҫтарать, тата ҫĕтĕккисене те саплама пултарать.

— Вара, хам та ҫапла шухăшлатăп.

— Колхозри комсомолĕцсем пурте сан пек ĕҫлесен, пирĕн ĕҫре нихăҫан та прорывсем пулмĕччĕҫ,—терĕ Ҫергейĕв, Укҫинене хулпуҫҫийĕнчен ҫупăрласа мухтаса.

Укçине хăйне мухтанипе вăтаннă пек пулчĕ, çапах Çергейĕв куçĕнчен пăхса:

— Мĕнле прорыв тата? Хăш бригадăра пулнă?..— тесе ыйтрĕ.

— Ваçук бригадинче. Машинă парапанĕ ăшне тимĕр севĕк йарса авăн çапассине чарса лартнă пайан.

— Ах, тăшмансем! Ку ĕнтĕ кулаксен ĕçĕ,—терĕ Укçине шăлĕ витĕр.

— Тĕрĕс, Укçине. Клас тăшманĕ çывăрмасть. Ĕçхалăхпе хресченсем социалисăм тунă çĕрте йепле те пулсан сăтăр тумах тăрăшаť. Есĕ ак ху комсомолкă, социалисăм тунă çĕрте калама çук тăрăшса, пĕтĕм вăйна хурса ĕçлетĕн. Анчах санăн çывăх тăванусемех сана хирĕç пыраççĕ; вĕсем хăйсем тĕттĕмлĕхĕ пирки клас тăшманне пулăшаççĕ...

„Сан çывăх тăванусем сана хирĕç пыраççĕ“ тенĕ сăмахсене илтсен, Укçинен илемлĕ те çаврака куçĕсем пушшех çавракаланса каллĕ-маллĕ выљама пуçларĕç.

— Хăш тăвансем мана хирĕç пыраççĕ? Кала Çергейĕв йулташ, хăвăртрах!

— Хăш тăвансем? Аçупа аннў... Аннў хĕрарăмсем хушшинче патшалăха тырă парасшăн мар пăтратаť. Аçу колхозран тухатăп тесе çўрет...

— Чăнах-и?

— Чăнах пулмасăр. Суйа калатăп-им епĕ сана. Çын сăмахне хам та ĕненес çук. Пайан аннўне хам куçпа курса, сăмахĕсене хам хăлхапа илтрĕм.

Укçине, тĕлĕннипе, нимĕн тума пĕлмесĕр, чавсисем таран тавăрса йанă кĕпи çаннисене хул тĕпне çитиччен тавăрса хучĕ. Павулми пек хĕрлĕ питçăмартийĕсем кĕл тĕслĕ пулса кăвакарса кайрĕç.

— Пит ан хуйхăр, Укçине. Кунта сан аçупа аннў айăплă мар; вĕсен хыçĕнче урăххисем тăраççĕ.

— Камсем тата?

— Камсемми паллă. Кулаксем. Çав клас тăшманĕсем сан аçупа аннў пек тĕттĕм çынсем хыçĕсене

кĕрсе тăнă та, йытăсене вĕслетнĕ пек вĕслетсе тăраççĕ. Лешсем хăйсен тĕттĕмлĕхĕ пирки кулак хушнă тăрăх, анчăкла вĕреççĕ,—терĕ Çергейĕв.

Çергейăвăн йулашки сăмахĕсем Укçинене темĕншĕп Кучан Хветĕрĕн ĕлĕкхи пурнăçне аса илтерчĕç. Лайăх астăват Укçине: выçлăх çулхине Кучан Хветĕрĕ пилĕкçĕр пăт ытла тырă сутнă, тесе калаçатчĕç. Икĕ хутлă çурт тимĕрпе витгерсе лартрĕ, тăррине симĕс сăрпа сăрлаттарчĕ, урхамах пек ăйăрсем туйанчĕ. Йалти хресченсене пĕтĕмпех хăй аллине çавăрса илчĕ: çур йал ытла ун патĕнче ĕçлесе пурăнатчĕç. Кулак чейе. Йалта колхоз йухăмĕ пуçлансан курат ĕç начарланнине: тытăнчĕ унтала та кунтала пурлăхне салатма. Пĕр çул хушшинче пурлăхне пĕтĕмпех салатса пĕтерчĕ, Укçине кăсйине чиксе хучĕ те, йулашкинчен колхоза çыранчĕ. Çуртне, „колхоза пулăшатăп“, тесе, правлени вађђи пачĕ. Хăй ĕлĕкхи кивĕ пӳртне тухрĕ...

— Йе, пуçна пит ан ус есĕ. Пуç усасси вăл пирĕншĕн — партийцăсемпе комсомолĕцсемшĕн мар. Клас тăшманĕпе кĕрешес пулат, вăл пирĕн хушăра пытанса пурăнат пулсан, ăна шыраса тупса, колхозниксен куçĕсем умне кăларса тăратса: „Акă пирĕн клас тăшманĕ“ тесе чышса кăтартас пулат. Вăл тăшмана колхозниксем хăйсен куçĕсемпе курччăр, ĕненмесен аллисемпе тыта-тыта пăхчăр; ак çак задачсем тăраççĕ пайанхи кун пирĕн умра. Пайан каçпа колхоз хĕрарăмĕсен пухуне иртерĕпĕр; унта клас тăшманĕпе кĕрешесси çинчен сӳтсе йавăпăр.

— Çавăнпа иккен Кучан арăмĕ пирĕн пата пит час-час пыра пуçларĕ. Йалан манран пытанса пăшăл-пăшăл калаçаççĕ аннепе иккĕшĕ. Епĕ шухăшламан та анне кулаксем майлă ӳкессе. Халиччен мана анне нихçан та сивĕ сăмах каласа пăхман; ĕнер каç çеç кăшт сисрĕм. Çпектакăљтен таврăнсан, тыгăнчĕ мана тем те пĕр каласа хăртма. „Сĕтĕрĕнчĕк! Йытă ами! Сан пирки колхоза çырăнтăмăр, çарамас, выçă

йултăмăр. Çĕр çăттăрах ку комуниссемпе кăмсамулĕссене“ тет.

Клас тăшманĕпе кĕрешесси çинчен нумайччен калаçса ларчĕç Çергейĕвпа Укçине.

## IV

Петровпа Ваçук та, Çергейĕвпа Укçине пекех, клас тăшманĕпе кĕрешесси çничен калаçса, авăн çапнă çĕре çитрĕç.

Авăн çапакан бригадăри колхозниксем пĕри те ĕçлемеççĕ. Çапакан машин çĕмĕрĕлнĕ пулин те, сăвăрмали пур, ăна та сăвăрмаççĕ; хăшĕсем урапа айĕсене, сулхăна кĕре-кĕре выртнă та, харлаттарса çывăраççĕ, хăшĕсем улăм кĕлĕ çинче пĕçернĕ çĕрулмисем çисе лараççĕ; пăшал пуррисем пурте ухатана саланса пĕтнĕ.

Петровпа Ваçук йĕтем çине çитсе чарăнчĕç. Çывăрса выртакан колхозниксем нумайĕшĕ айхисенчен вăранса, услап йытăсем пек пуçĕсене çĕкле-çĕкле пăхрĕç.

— Праçник-им сирĕн пайан? Канатăр?!—терĕ Петров, пурин çине те пăхса çаврăнса.

— Хе-хе-хе... Праçник мар та, кăшт выртса канас терĕмĕр, Петров йулташ. Темшĕн машин çĕмĕрĕлчĕха,—лĕх-лĕх кулса, ури çине сиксе тăчĕ те кĕрепле йарса тытрĕ Кучан Хĕветĕрĕ.

— Пире мĕн, канмасăр... Ташлас-им? Епĕр вĕт тарçăсем: хушсан ĕçлетпĕр, хушмасан çывăратпăр. А-а-а,— аллисене çӳлеле çĕклесе, çăварне хăлхисем патне çитес пекех карса анасларĕ Хăмпă Йаккăвĕ.

Кучан Хĕветĕрĕ, ĕçленĕ пек пулса, сăвăрман кăшăл патне пырса тăчĕ те:

— Килĕр, йулташсем, сăвăрма пуçлар. Вăрах çывăрнă,—терĕ, вăрттăн кулса.

Петров тепĕр хут Кучана ури тупанĕчен пуçласа пуç тӳпине çитичченех пăхса илчĕ. Унтан Ваçук йенне çаврăнса пăхса:

— Пуçтар бригадăна пĕр çĕре. Пуху туса иртерĕпĕр,—терĕ.

— Хе-хе-хе... Ăçтан вăл вĕсене пуçтартăр?.. Нумайĕшĕ ухатана саланса пĕтнĕ,—тата тепĕр хут мăшкăланă пек лĕхлетсе кулчĕ Хăмпă Йаккăвĕ.

— Пире мĕн йулнисем те çитĕç,—терĕ Петров татса...

— Йулташсем! пуçтарăнăр пурте кунтала. Петров йулташ сирĕнпе кăшт калаçас тет,—кăшкăрса чĕнчĕ Ваçук колхозниксене.

Колхозниксем тĕрлĕ йенчен ĕселенсе, ăйхăлă куçĕсене хура аллисемпе тăрмаласа, урисенчен урисене ирттерме хăраса, пĕрерĕн пĕрерĕн Петровпа Ваçук патне пуçтарăна пуçларĕç.

Петров колхозниксем пуçтарăнкаличчен, çĕмĕрĕлнĕ машинăн парапанне тӳрлетме пикенчĕ. Парапанин виткĕчине илсе пăрахрĕ. Пăхат—пит сийенлĕ çĕмĕрĕлнĕ: айалти пĕр шăлĕ пĕтĕмпех хуçăлса тухса ӳкнĕ, тата çӳлте икĕ шăлĕ кукăрăла кукăрăла кайнă.

Машин таврашне тӳрлетме пĕлекен тимĕрçĕ Петровшăн ку ним те мар. Вăл çавăнтах кукăрăлнă шăлĕсене сӳте-сӳте илсе, тӳрлетсе çĕнĕрен пăрапăра лартрĕ, унтан хуçăлнă шăлĕ вырăнне çĕнĕ шăл пăрса хучĕ. Машин хатĕр. Шкивне тăхăнтарса çавăрса пăхрĕ — парапан ĕлĕкхи пекех ниçта та лекмест, уласа çеç çаврăнат.

— Хатĕр. Халех çапма пуçлăпăр,—терĕ Петров, линафпа вараланнă аллисене парапан çăварĕ умвĕнчи шăналăк çĕтĕкĕпе шăлса тасатса.

— Кивĕ машинă,—вăраха пырас çук, час çĕмĕрĕлĕ, —терĕ Кучан мĕкĕлтетсе.

— Çĕмĕрĕлмĕ. Çĕмĕрĕлсен ăстисем хамăр, каллех тӳрлетĕпĕр,—терĕ Петров, Кучан çине шурă куçĕсемпе çаврăнса пăхса.

Кучан Хĕветĕрĕ, те Петров татса каланипе, те çиллипе,—тăп тăнă çĕртенех йалт! сиксе ӳкрĕ, сăнĕ пĕрре хуралса, пĕрре кĕл пек кăвакарса кайрĕ.

Çав вăхăтрах колхозниксем майĕпе-майĕпенех Пе-

тровпа Ваҫук тавра пуҫтарӑнса урисене йава-йава ларса тухрӗҫ: пуҫӗсене чиксе, мӗскӗнӗн пӑхса ларӗҫҫӗ.

Петров кукӑр чӑпӑклӑ чӗлӗмне тапак тултарса тивертсе йачӗ те, урисене хуҫса ларакан колхозниксем ҫине пӑхса ҫавӑрӑнчӗ:

—Йулташсем! Есӗр хӑвӑр сисетӗр-и ҫакна, сисместӗр-и?.. Ак, есӗр пайан хӑвӑршӑн та, патшалӑхшӑн та пӗр пуслӑх та усӑ туман.

Колхозниксем пуҫӗсене ҫӗкле-ҫӗкле пӗр-пӗрин куҫӗсенчен пӑха-пӑха илчӗҫ.

— Есӗр, хӑвӑрӑн тӗттӗмлӗх пирки, кулак сӑмахӗсене итлесе, пайанхи кӗмӗл пек уйар куна ҫывӑрса ирттерсе йанӑ. Машин ҫӗмӗрӗлнӗ пулсан, сирӗн сӑвӑрмали пулнӑ, есӗр ӑна сӑвӑрман... Калӑр-ха: камшӑн сийенлӗ ку? Камшӑн ӗҫлетӗр есӗр?—Петров калама чарӑнса, колхозниксен куҫӗсенчен шӑтарас пек пӑхса ҫавӑрӑнчӗ. Нумайӗшӗ пуҫӗсене лӑшт чиксе, нимӗн чӗнмесӗр ларчӗҫ.

— Халӗ епӗр ӗлӗкхи улпут хресченӗсем мар... Кӑшт канмала та мар-и мӗн пирӗн?—терӗ Кучан Хӗветӗрӗ умӗнче чӗркуҫланса ларакан Хӑмпӑ Йаккӑвӗ, ури ҫине тӑрасшӑн пулса.

Петров Хӑмпӑ Йаккӑвин куҫӗсенчен шӑтарас пек пӑхса, хӑйӗн куҫӗсене кӑшт хӗстерсе илчӗ:

— Ак, епӗ сан ҫине пӑхатӑп та, Хӑмпӑ йулташ, сана пӗтӗм чунтан шеллетӗп. Мӗншӗн тесен, есӗ чухӑн хресчен пулнӑ. Револуцишӗн кӗрешсе йун тӑкнӑ ҫын. Халӗ кулак йытти пулса, кулакла вӗрме тӑрӑшатӑн.

— Есӗ мана йытӑпа танлаштаратӑн-и? Епӗ кам? Есӗ вӗт ху та пӗлетӗн, епӗ хӗрлӗ партизан пулнине, совет влаҫшӗн кӗрешсе инвалида тухнине?—кӗл пек кӑвакарса кайса, ури ҫине йалт сиксе тӑчӗ Хӑмпӑ Йаккӑвӗ.

— Есӗ хӗрлӗ партизан пулса Совет влаҫӗшӗн кӗрешнине санран никам та туртса илмест. Анчах есӗ кулак йытти пулса, ун сӑнчӑрне лекнине епӗр

лайăх пĕлетпĕр. Машин парапанĕ ăшне тимĕр сенĕк йанине те питĕ лайăх пĕлетпĕр. Есĕ чухăн хресчен, хĕрлĕ партизан пулнă çын; апла пулсан, кала пире çакăнта, пĕтĕм колхозниксем умĕнче: кам вĕрентрĕ сана машин парапанĕ ăшне тимĕр сенĕк йама?

Хăмпă, Петрова хирĕç сăмах тупса калайман йенне, каллех çĕре чĕркуçланса ларчĕ. Колхозниксем тĕлĕнсе кайса, Хăмпă куçĕсенчен шăтарас пек пăха-пăха илчĕç. Кучан Хĕветĕрĕпе йунашар ларакан Укçине ашшĕ—Куçма, майĕпен ури çине тăрса, Ваçукпа йунашар пырса тăчĕ.

— Асту, Хăмпă йулташ, хушамату „хăмпă“ тесе вăкăр хăмпи пек ан хăпар, кам та пулин йĕппе чышсан, сывлăшу тухса лапчăнса ан лар. Çийессе колхоз çăкăрне çийетĕн те, анчах кулаксен урапи çине ларнă есĕ, кулакла йурлатăн!—терĕ Петров.

Хăмпă хăйĕн айăпне сиссе илчĕ пулас, ним чĕнмесĕр, пуçне çĕреле чиксе, пӳрнисемпе улăм пĕрчисене вылятаткаласа ларчĕ. Çав вăхăтра колхозниксем майĕпен ура çине тăра-тăра, Петровпа Ваçук патнелĕ пыра-пыра тăчĕç. Хăмпă сасартăк пуçне çĕклесе пăхрĕ, курать — колхозниксем пурте ура çине тăрса, Петровпа Ваçук патнеле пырса тăнă. Вĕсем Кучанпа иккĕшĕ çеç лараççĕмĕн.

— Каçарăр мана, йулташсем... Епĕ айăплă мар кунта... Акă, акă, çак çын çавăрчĕ мана,—терĕ вăл Кучан çине кăтартса. Унтан сивĕ тытакан çын пек пĕтĕм кĕлеткипе чĕтресе сиксе тăчĕ, анчах каллех çĕре чăсăлса ӳксе, пĕчĕк ача пек ĕсĕклесе йĕре пуçларĕ.

Колхозниксем, тĕлĕннипе, Петровпа Ваçук йĕритавра тата çывăхрах пырса тăчĕç.

Кучан Хĕветĕрĕ, тăнă çĕртен, выçă кашкăр пек, айăккинеле сиксе ӳкрĕ. Унтан, аллинчи кĕреплине ывăтса йарса, виçĕ йуплĕ тимĕрсенĕк йарса тытрĕ те, шывран типĕ çĕре кăларса пăрахнă пулă пек чĕтресе йĕрсе выртакан Хăмпă Йаккуне çурăмĕнчен сенĕкпе лачлаттарса чикрĕ.

Хăмпă çари-и! кăшкăрса йарса ури, çине сиксе тăчĕ те, ик-виçĕ хăлаç пек чупса кайрĕ, унтан каллех чăсăлса ўксе çĕлен пек авкалана пуçларĕ; тарпа хытнă улача кĕпи витĕр йун шĕрлесе йухма пуçларĕ.

Кучан Хĕветĕрĕ аллинчи тимĕр сенĕкне айккинеле ывăтса йарса тарасшăн пулчĕ, анчах виççĕ-тăваттă йарса пуссанах, ăна колхозниксем хуса çитсе çавăрса тытрĕç, аллисене хыçалала туртса çыхса хучĕç.

— Акă, йулташсем, куратăр-и ĕнтĕ: клас тăшманĕ—пирĕн куç умĕнче. Вăл пирĕн авăн çапакан бригадăра прорыв туса, патшалăха вăхăтра тырă парассине чарса тăрасшăн пулнă. Анчах епĕр ăна вăхăтра шыраса тупрăмăр. Халĕ ĕнтĕ вăл пирĕншĕн хăрушă мар. Епĕр ăна ăçта кирлĕ вырăна ăсататпăр. Анчах клас тăшманĕ пĕр Кучан Хĕветĕрĕ çеç мар, ун пеккисем татах та пўр-ха, вĕсенчен малашне те питĕ сыхă пулас пулаť.

Колхозниксем тĕлĕннипе нимĕн чĕнмесĕр, пĕрре аллисене хыçалала туртса çыхнă Кучан çине, тепре —пусса пăрахнă така пек йун йухтарса выртакан Хăмпă Йаккăвĕ çинеле пăхса тăраç;ĕ.

Таса уй тăрăх чĕрĕ йун шăрши сарăлчĕ; кĕркуннехи симĕс пуçлă хура шăнасем те йун шăршине сисрĕç пулас, Хăмпă тавра сĕрлесе вĕçе пуçларĕç.

Петров çавăнтах лаша кўлсе Хăмпă Йаккуне пулЂницана илсе кайма хушрĕ. Унтан Кучан Хĕветĕрĕ çине кăгартса:

— Ку тăшмана йалсовет аллине леçсе парăр,—терĕ вăл.

— Мĕн йалсовечĕн-мĕнĕн сĕтĕрсе çўремеле ăна?.. Тĕрмене ларса патшалăх çăкăрне çитермеле тата!.. Çакăнтах пĕрмай тĕп тăвас та, пĕттĕр! Çавăнтала ăна çул... Шăтăк чавса чиксе хурас!—терĕç хайаррăн кăшкăрса иквиçĕ çын харăс.

— Тĕрĕс, çапла çеç кирлĕ... Мĕн патшалăх çăкăрне çитермеле ăна. Тĕрĕс!—кăшкăрчĕç теприсем, малтан кăшкăрнисемпе килĕшсе.

— Çук, ку тĕрĕс мар, йулташсем. Епĕр апла ту-

ма пултараймастпăр. Пирĕн ăна пролетари влаçĕн аллине парас пулаť, унта унпа мĕн тăвассине пĕлеççĕ,—терĕ Петров.

Кучан колхозниксем çине кашкăрла усал куçĕсемпе çавăрăнса пăхрĕ.

Пĕр Куçма çеç чылайччен нимĕн чĕнмесĕр, пĕрре шуралса, тепре кăвакарса кайса, йупа пек хытса тăчĕ. Йулашкинчен тин вăл:

— Н-да, Кучан мана та колхозран тухма нумай хистерĕ... Унăн чунĕ капла пулнă иккен!—тесе хучĕ.

Хĕвел пĕчĕккĕн шуса каçхи апат тĕлне çитрĕ. Хăмпă Йаккуне урапа çине тăсса вырттарса пуљницана илсе кайрĕç Кучан Хĕветĕрне çурран уттарса йалсоветне ăсатрĕç.

## V

Каç пулчĕ. Кĕтӳçĕсем кĕтĕвĕсене антарчĕç.

— Ей... пухăва пырăр! Хĕрарăмсен пуххи пулаť,—хулăм саслă пĕр хĕрача урама йантратса кăшкăрса, чӳречерен-чӳречене шаккаса иртсе кайрĕ.

Çур сехетрен правленине чыхса тултарнă пекех херарăмсем те, арçынсем те кĕрсе тулчĕç. Пуринчен ытларах хĕрарăмсем, вĕлле хурчĕ çăвăр уйăрнă вăхăтри пек сĕрлеççĕ. Мĕн çинчен çеç калаçмаççĕши вĕсем унта?

— Праски, есĕ хăна ху чар пăртак. Мĕн çын упăшки хыçĕнчен йытă ами пек чупатăн?.. Хăвăн упăшку çук-и мĕн?

— Çăварна ан кар! Сан ĕçӳ çук ман çумра... Хаљ ĕлĕкхи мар: кама кирлĕ—çавна йурататăп.

— Мĕн пĕр-пĕринпе кӳлешетĕр? Акă пурте пĕр утийал айĕнче çывăрма пуçлăпăр.

Темĕн те пĕр пуплешеççĕ, сĕрлеççĕ. Кĕвĕлемен купăс чĕлĕхĕсем пек йантраççĕ пухури хĕрарăмсем.

— Чш-ш-ш ш!.. Килеççĕ,—тенĕ сасă илтĕнчĕ алăк патĕнчен. Пурте çăварĕсене шыв сыпнă пек шăп пулчĕç: алăк йеннеле йалт-йалт çавăрăнса пăхкала

пуçларĕç. Сасартăк алăк йаррр! уçăлса кайрĕ те, малтан—Çергейĕв, ун хыçĕнчен Укçине пырса кĕчĕç. Вĕсем иккĕшĕ те тĕпеле иртсе сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕç. Ыгти комсомолĕцсемпе активиссем сĕтел патнеле тухса тăчĕç.

Хĕрарăмсем Çергейĕва куçĕсенчен шăтарас пек пăхса тĕллерĕç.

— Йалан савăнăçлă пулаканччĕ-çке ку. Пайан мĕншĕн çилĕлĕ. Арăмĕпе килĕштерейммен-ши-мĕн масар?!.

— Ватă пуçĕпе Укçинепе çыхланман-и вăл?

— Çу-у-у-к, апла тесен—арăмĕ кунта, кӳлешнĕ тĕслĕ мар.

Колхозра мĕн те пулин пулнă пуђ,—пăшăл-пăшăл хăлхаран-хăлхана калаçса илчĕç хĕрарăмсем.

Çергейĕв çилĕлĕ куçĕсемпе пуху халăхĕ çине пăхса çаврăнчĕ. Вунултă çул пĕрле пурăннă арăмин çĕмĕрт пек хура куçĕсемпе тĕл пулсан, унăн кĕрхи çил çинче çӳренипе кăшт çуркаланнă тутисем ирĕксĕрех йăл кулса илчĕç.

— Килмелисем пурте килсе пĕтнĕ пулас.. Пĕр авăн çапакан бригадăри хĕрарăмсем çеç килейменха. Йерçӳлисем унтан та килеççĕ ĕнтĕ. Пухăва пуçлатпăр пуђ,—терĕ Çергейĕв, арăмĕ çинчен куçне илсе.

— Килмелисем килсе пĕтнĕ ĕнтĕ. Пухăва пуçлас. Унсăрăн пит каçа йулатпăр. Ыран ирех ĕçе каймала, —тенĕ сасăсем илтĕнчĕç.

Çергейĕв хура тăла картусне хывса сĕтел çине хучĕ те, çамки çинеле витĕннĕ çӳç пайăркисене ĕнсе хыçнеле шăлса йарса, майĕпен калама пуçларĕ:

— Йулташсем! Епĕ ун çинчен сире темиçе хуг та каласа панă ĕнтĕ. Анчах пайанхи пухура та çав ыйтуранах пуçласан сийенлĕ пулмĕ тесе шуглатăп. Епĕр сирĕнпе лайăх пĕлетпĕр, кăçалхи çул—пилĕкçуллăхăн йулашки татăклă çулĕ, пилĕкçуллăх плана тăвата çулта тултаратпăр. Çавăнпа та кăçалхи çул иртнĕ çулсенчен темиçе хут йăвăртарах, мĕншĕн тесен кăçалхи çул пирĕн пĕтĕм тума пуçланă

çĕнĕ хапрăк-савăтсене пурне те туса пĕтерсе ĕçе йамала, тата çакăнпа пĕрлех иккĕмĕш пилĕкçуллăх плана пурнăçа кĕртме пуçăнмала. Ĕçхалăх патшалăхĕн хуçалăхĕ калама çук хăвăрт ӳссе çирĕпленсе пырать. Капиталисăм хуçалăхĕ йăвăр кризĕс аллине кĕрсе ӳкнĕ. Çавăнпа та капиталиссем пролетари патшалăхне кураймаççĕ, пĕтĕм вăйĕсене хурса пирĕн çине вăрçăпа килесшĕн тăрăшаççĕ. Анчах епĕр те çывăрсах лармастпăр. Вĕсем хамăр çийе киле пуçласан, хуть те хăçан та хирĕç тăма хатĕр. Купĕр йенчен. Тепĕр йенчен—пирĕн хамăр хушăра та клас тăшманĕсем пур-ха, вĕсем те çав капиталиссем пекех, епĕр социалисăм тунă çĕрте пире тĕрлĕ майсемпе чăрмантарасшăн тăрăшаççĕ, вĕсем патшалăха тырăсăр выçă хăварса, çирĕмпĕремĕш çулхи пек, рабочисемпе чухăн тата вăтам хресченсем тăпра, вилнĕ лаша, кушак, йытă ашĕсем çимеле пуласса кĕтеççĕ...

Çергейĕв клас тăшманĕсемпе кĕрешесси çинчен çур сехет ытла йĕрки-йĕркипе каласа пачĕ. Пухури колхозниксем Çергейĕв çинчен куçĕсене илмесĕр, хăлхисене чанк тăратса, унăн сăмахĕсене тинкерсех итлесе тăчĕç.

Анчах та, çак вăхăтра алăк патĕнчен пĕр çинçе сасă йаркаса кайрĕ:

— Есĕр, коммунисем, пит нумай тăрантаратăр ĕнтĕ. Чĕлхĕрсемпе çеç шăлтаратăр. Ĕçĕр курăнмасть. Хăвăр çеç тутă. Халăха çарамас хăваратăр ĕнтĕ!

Ăшăпа аптăранă кураксем пек çăварĕсене карса, сывлăшĕсене кăлармасăр, Çергейĕв çăварĕнчен тата мĕнле сăмахсем тухасса кĕтсе ларакан хĕрарăмсем хыçалала çаврăна-çаврăна пăхрĕç.

— Мĕн чĕлхӳ кĕçтет-им?.. Сынна каласа пĕтерме памастăн, пӳлсе кăшкăрса ларатăн,—терĕ ăна хирĕç тепĕр сасă.

— Кăшкăрмасăр... Мĕн йалан суйса илĕртеççĕ пире. Епĕр вĕт пĕчĕк ачасем мар. Йалан пирĕнтен илеççĕ, йалан епĕр пар... пире мĕн параççĕ?.. Епĕрех

тыррине пар, ҫийӗнчен тата тыррине турттарма хутаҫҫине те пар. Ӑҫтан кӑларас пирӗн вӗсене пурне те?—хӗрлӗ чӗкӗнтӗр пек хӗрелсе кайса, алӑк патӗнчен тӗлӗнмеле сиксе тухрӗ Укҫине амӑшӗ—Кӗтерне.

Укҫине, амӑшне куҫӗнчен шӑтарас пек пӑхса, ури ҫине тӑчӗ:

— Есӗ, анне, ытла ан кӑшкӑр. Малтан игле, унтан сӑмах илсе калаҫӑн.

— Сире итле-итле ӗнтӗ хӑлха йӗрӗнсе ҫитрӗ. Вунпилӗкӗмӗш ҫул итлетпӗр... Йалан ним те ҫук. Пӗрмай пушӑ парапана ҫаптаратӑр,—терӗ те тата маларах тухса тӑчӗ Кӗтерне.

— Пӑртакҫӑ хуллентерех пулсан та йурат пуљ, анне... Есӗ вӗт кунга пасарта мар, пухура,—терӗ Укҫине, амӑшӗ ҫине ҫиленсех пӑхса.

— Мӗншӗн хуллен пулас ман? Есӗр вӗт ӗлӗкхи уретниксем мар.

— Ха-ха-ха!.. Шӑп тӗлне ҫитсе лекрӗн, Кӗтерне инке. Ҫапла ҫав, епӗр ӗлӗкхи уретниксем мар. Ҫавӑнпа та сиртен нимӗн йапала та ирӗксӗр туртса илместпӗр: пурне те сирӗнпе канашласа,—терӗ Ҫергейӗв кулса. Ҫергейӗвпа пӗрле пухури халӑх та ахӑлтатса кулса йачӗ.

Пурте кулнипе Кӗтерне намӑсланчӗ пулас: шӑп пулса, пуҫне лӑшт ҫӗреле чикрӗ.

— Мӗнле намӑс мар сана, анне, ҫак тери пуху умӗнче кирлӗ мар сӑмахсем калаҫма?—ӳкӗтлет Укҫине хӑйӗн амӑшне.

— Сана намӑс пек пулсан, питне хупла! Мана пӗртте намӑс мар. Епӗ тӳррипе калатӑп. „Тӳррипе калакан—тӳрене йураман“ теҫҫӗ. Ҫавӑн пек ӗнтӗ ку,—терӗ Кӗтерне.

— Ҫук есӗ, анне, „тӳррипе калатӑп“ тетӗн те, ман шухӑшпа пӗртте тӳррипе мар, кукӑрӑлса калаҫатӑн; мӗншӗн тесен, есӗ ху сӑмаххусене мар, кулак сӑмахӗсене калатӑн. Епӗр тырра камсене паратпӑр? Есӗ ӑна пӗлетӗн—хамӑр патшалӑхри рабочи-

сене. Вĕсем пире тырă выранне—плугсем, трактăрсем, комбайнсем, çитцă-таварсем, тата ытти кирлĕ йапаласем те параççĕ. Рабочисем пире хуть те хăçан та пулăшма хатĕр, анчах пирĕн колхозниксен те вĕсене вăхăтĕнче пулăшма тăрăшас пулать. Епĕр вĕсене тырра вăхăтĕнче парсан, вĕсем те пире хапрăк-савăт таварĕсене вăхăтра пама пултараççĕ. Епĕр, колхозниксем, хапрăк-савăтри рабочисене тырă параймасан, вĕсем пире хапрăк-савăт таварĕсене парайас çук. Ку камсемшĕн сийен пулать-ха? Есĕ ăна пĕлетĕн-и? Пирĕншĕн—колхозниксемпе рабочисемшĕн. Пилĕк çуллăх плана тватă çулта тултараймасан—кама намăс пулĕ? Сана, мана, тата çакăнти пухури колхозниксене пурне те,—тесе пĕтерчĕ Укçине хăйĕн сăмахне.

— Çап-çамрăкскер, йепле вăл амăшне хĕртет! Чĕлхи-çăварĕ вут пек çунтарать!—пăшăл-пăшăл каласса илчĕç хĕрарăмсем.

Укçине каллех тӳсеймерĕ, амăшне хирĕç калама пуçларĕ:

— Есĕ калакан сăмахсем камсемшĕн усăлă вĕсем? Клас тăшманĕсемшĕн мар-и? Мантăн-им çирĕмпĕремĕш çул выçă вилесрен аран хăтăлса йулнине? Камсем пулăшрĕç? Рабочисем мар-и?.. Вата пуçупа хăна ху ан намăслантар есĕ, анне. Чарăн! Тавлашассу килсен, киле таврăнсан тавлашăпăр. Кунта пуху иртterме ан кансĕрле. Итлесе лар. Пит итлессӳ килмесен—тухса кай!—терĕ Укçине. Унтан вăл халăхран михĕсем пухма кирли çинчен, вăл михĕсене пухса саплама хĕрарăм бригади тума кирли çинчен калать. Чылайччен каларĕ Укçине.

— Итлеттере-итлеттере çарамас, выçă хăвартăр ĕнтĕ. Йулашкинчен çĕтĕк-çурăк хутаççене те туртса илесшĕн тăрăшатăр,—тесе хучĕ чылайччен сĕнксе тăнă Кĕтерне.

Укçине амăшне пушшех хайарланса кăшкăрса тăкрĕ:

— Сан хутаҫҫуна епӗр вӑйпа туртса илместпӗр вӗт!.. Ху ирӗкӳпе: парассу килсен—паратӑн, парассу килмесен—ҫук.

Кӗтерне шӑпланчӗ.

Укҫине каланипе, пуху михӗсем пухакан хӗрарӑм бригади уйӑрмала турӗ.

Ҫергейӗв каллех колхозниксен клас тӑшманӗнчен мӗнле сыхланмали ҫинчен, кашни колхозникӗн колхозшӑн мӗн пур вӑйпа пикенсе ӗҫлемели ҫинчен каласа парат.

Ҫав вӑхӑтрах алӑкран васкаса Ваҫук пырса кӗчӗ.

— Кӑшт лӑпланӑр-ха, йулташсем. Ҫул парӑр-ха, малала иртем,—терӗ вӑл тӗпелеле иртсе.

Пурте шӑп пулчӗҫ. Ваҫук йеннеле тинкерсе пӑхрӗҫ.

— Ҫергейӗв йулташ, епӗр Куҫма пиччепе Кучан Хӗветӗрне ҫыхса илсе килтӗмӗр... Ӑҫта хурас ӑна? Кунта илсе кӗрес-и, йе тӳрех йалсоветне илсе кайас-и,—терӗ Ваҫук, Ҫергейӗв умне пырса тӑрса.

— Кучан Хӗветӗрне? Ҫыхса!?. Мӗншӗн? Мӗн турӗ тата вӑл?—терӗ Ҫергейӗв тӗлӗнсе кайса.

Ваҫук ӗҫ мӗнле пулнине, Кучан Хӗветӗрӗ Хӑмпӑ Йаккуне чиксе пӑрахни ҫинчен йӗрки-йӗркипе каласа пачӗ. Пухури халӑх ҫакна илтсен шартах сиксе, ах!—тесе йачӗ.

— Ай, пӗтрӗмӗр!—кӑшкӑрса йачӗ Кӗтерне хыҫӗнче тӑракан Кучан арӑмӗ—Мархва. Вӑл ҫавӑнтах урайне шӑнк месерле кайса ӳкрӗ те, тытса пӑрахнӑ ҫын пек чӗтре пуҫларӗ.

Ваҫук йулашкинчен пуху халӑхӗ йенне ҫавӑрӑнса тӑчӗ:

— Вӑл—Кучан Хӗветӗрӗ пирӗн колхозра ӗҫлесшӗн мар, мӗнле те пулсан ӑна салатса йарасшӑн кӗнӗ; ман бригадӑри пӗтӗм колхозниксене хӑй май ҫавӑрса пӗтерчӗ. Колхозниксем нимӗн ӗҫлеми пулса ҫитрӗҫ. Йулашкинчен Хӑмпӑ Йаккуне укҫа парса тытса, машин парапанӗ ӑшне тимӗрсенӗк чиктернӗ. Шӑп хӗрӳ авӑн ҫапмали вӑхӑтра машинӑна чарса

лартрĕ. Пайан çав Кучан Хĕветĕрин ирсĕр ĕçĕсене шыраса тупса, вĕсене колхозниксен куçĕ умне кăларса хутăмăр. Куратăр—ĕç начар: апла та тĕрме, капла та тĕрме... Çиллипе, нимĕн тăвайман йенне, Хăмпă Йаккуне тимĕрсенĕкпе чиксе пăрахрĕ. Ăна пуљницана илсе кайрĕç; те вилĕ... те чĕрĕ йулĕ...

— Ай, туру-у-у... тăшман!.. У-у-у-уууу!—чĕчĕ ачи пек татăлса макăра пуçларĕ Йакку арăмĕ Сăпани...

Пухури халăх тĕлĕннипе, нимĕн тума пĕлмесĕр, пĕрре Ваçук çине, пĕрре Çергейĕв çине, тепре тытса пăрахнă пек чĕтресе выртакан Кучан арăмĕ çине, йе татăлса макăракан Хăмпă арăмĕ çине пăхкаласа, пĕр-пĕринпе пăшăл-пăшăл калаçать:

— Ак тăшман!

— Колхоза кĕртмеле марччĕ.

— Кам пĕлнĕ ăна капла пуласса...

— Пĕлмесĕр... Мĕн ĕлĕкренпех çын йунне ĕçсе пурăнма вĕреннĕ вĕт вăл, çĕлен.

Укçине хăй амăшĕ çинчен куçне илмесĕр, ăна шăтарас пек пăхса тăчĕ. Амăшĕ, Укçине çине пăхма вăтаннипе, нимĕн тума пĕлмесĕр, пуçне тăмана пек пăркаласа, пĕрре çĕреле, тепре маччанала пăхкаласа, пĕр ури çинчен тепĕр ури çинеле пускаласа тăчĕ.

— Йулташсем! Куратăр-и, акă вăл клас тăшманĕ пирĕн куç умĕнче ĕнтĕ,—терĕ Çергейĕв, аллисене хыçалала туртса çыхнă Кучан Хĕветĕрĕ çине усă чӳрече виттĕр кăтартса.

Пухури çынсем пурте капкăна лекнĕ кашкăр пек пуçне чиксе тăракан Кучан Хĕветĕрĕ çинеле куçĕсене тĕллерĕç.

— Акă, анне, куратăн-и ĕнтĕ кам вăл пирĕн тăшман? Сире „ăс паракан ырă çын“—сан куçу умĕнче. Вăл урнă кашкăра хĕрхенен пулсан, ун патне кай, ăна тытса чупту,—терĕ Укçине амăшне.

Кĕтерне, хĕрĕнчен вăтаннипе, кăшт шывланнă куçĕсене кивĕ улача кĕпи çанни вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ те, пуçне çĕреле усрĕ.

— Ĕнтĕ миçе михĕ паратăн патшалăха тырă турттарма?

— Пурне те ил, ачам, санра ирĕк... Чармастăп,— терĕ Кĕтерне.

Кучан Хĕветĕрне тĕрмене ăсатма йалсоветне илсе кайрĕç.

Çакăн хыççăн, Çергейĕв пушшех хĕрсе кайса, пуху халăхне Кучан Хĕветĕрĕ пек клас тăшманĕсемпе вирлĕн кĕрешме чĕнчĕ. Мĕнпур чухăнсене, вăтамсене пурне те колхоз пурнăçне малала йарассишĕн тиме хурса ĕçлесси çинчен каласа ăнлантарчĕ.

Пуху Çергейĕв чĕнĕвĕпе килĕшрĕ. Пурте пĕр ĕмĕтпе колхоза çирĕплетессишĕн вăйа хума сăмах пачĕç.

Хĕрарăмсем, Укçине чĕннипе, михĕ-хутаç пухакан бригадă уйăрчĕç.

Нумайччен сĕрлерĕ пуху. Йулашкинчен, пĕтĕм колхозниксем пĕр чунлă пулса, килĕсене саланчĕç.

# ВУНПИЛĔК ÇУЛ

Ирхине. Çанталăк уйар. Тин тухса сарăлнă хĕвел шевли Атăл çинче выљаť. Анатран килекен пăрахут пристăњ çумне майĕпен пырса чарăнчĕ. Ларса килекен пăсажирсем пĕринчен-пĕри ăмăртмала тухма пуçларĕç: хăшĕсем хуланала саланчĕç, хăшĕсем çыран хĕрринче уткаласа çӳреççĕ.

Акă пĕр хура шĕлепке тăхăннă пăсажир пуринчен кайран, аллинчи кукăр туйи çине ывăçтупанĕпе тайăнса, майĕпен утса тухрĕ. Вăл çыран хĕрне улăхсан, хĕвел çутине хирĕç пăхайманнипе, шĕлепкине куçĕ çинерех пусса лартрĕ, унтан хула çине пăхрĕ. „Хула пĕтĕмпех улшăннă. Ак ку шурă çурт вырăнĕнче ĕлĕк сăра сутаччĕç. Ав унта тимĕрçĕ лаççиччĕ,—халĕ мĕн пысăккĕш чул çурт! Ак кунта ашса тухма çук лачакаччĕ, хаљ йепле илемлĕ йемйешĕл сат-пахчи!.. Çак вырăнта ĕнтĕ епĕ унпа паллашса, ăна малтанхи хут йуратса чуптурăм. Вăл ун чухне тин йалтан килнĕ хĕрччĕ. Вунçичĕ çултаччĕ. Ав çав виçĕ хутлă çурт вырăнĕнче ларакан лавкара суту-илӳпе услам куракан, пуйан патĕнче стрепкăра пурăначчĕ вăл. Хаљ ăçта çӳрет-ши? Хăш хапрăкра, йе хăш учрежденинче ĕçлесе пурăнаť-ши? Пĕлесчĕ“...—шухăша кайса, ӳсекен çĕнĕ хула çине тĕлĕнсе пăхса тăчĕ вăл. Ăçта пăхнă унта, ĕлĕк пулнă хула мешченĕсен, усламçăсен лутра та хĕсĕк куçлă чӳречелĕ пӳрчĕсем вырăнĕсенче, виçшер-тăватшар хутлă çуртсем шăтса тухнă. Илемлĕ çĕнĕ хула! Çыннисем те улăшăннă: ĕлĕк çĕтĕк-çурăк тумтирпе, çăпатапа çӳретчĕç. Халĕ çийĕсенче паљто, урисенче пушмак.

Пирĕн пăсажир, хула ӳсни çине пăхса тĕлĕннипе тата малтанхи хут йуратса чуптунă хĕре аса илсе шухăша кайса тăнипе сисмен те, пристăнран пăрахут хусканса кайнă. Çавăрănса пăхрĕ:—Ах, тăрса йултăм вĕт!—пристăн патнеле чупса пычĕ. Кăшкăрса та пăхрĕ. Çук, пăрахут чарăнмарĕ. Çивĕчĕ сăмсипе шыва икĕ йенеле çурса малала ишрĕ пăрахут. Шыв çинчи хумсем çеç пристăн çумне çите-çите çапăнчĕç. Пăсажир хăй ларса килнĕ пăрахутран тăрса йулнипе кăмăлсăр пулса, каллех Атăл хысине хăпарчĕ.—Ах, йепле кăвасак пулчĕ тепĕр пăрахут çитиччен кĕтсе тăма!—хăйне хăй вăрçса илчĕ. Унтан çыран хĕрринче каллĕ-маллĕ уткаласа çӳре пуçларĕ.

— Пăрахутран тăрса йултăн-и-им, пичче?—сасă илтĕнчĕ хыçалтан.

Пăсажир çавăрăнса пăхрĕ. Курать—ун çывăхĕнчех сарă кăтра çӳçлĕ хĕрача тăп-тăп тутисене йăл култарса тăрать, кăвак куçĕсем ăшшăн пăхаççĕ.

— Сирĕн хулана курас тесе хула хушшинеле кĕнĕччĕ те, хам та сисмен, пăрахут хускалса та кайнă,—терĕ пăсажир хĕрачана хирĕç. Хăй çавăнтах хĕрача çине тепĕр хут тинкерсе пăхса илчĕ...—Йепле çын тĕслĕ çын пулать,— шухăшларĕ вăл хăй ăшĕнче. Сасартăк унăн куçĕ умне вунпилĕк çул ĕлĕк йуратса чуптунă хĕр сăнĕ тухса тăчĕ. Акă унăн сарă кăтра çӳçĕсем икĕ хулпуççийĕ çинче Атăл хумĕ пек авкаланса выртаççĕ; кăвак куçĕсем йăл-йăл пăхса, тăп-тăпăл тутисем çамрăк каччă кăмăлне илĕртеççĕ. Вăл тусеймест. Сарă хăмăш пек йаштака пӳлĕ хĕре икĕ аллипе ыталаса илет. Хĕр ăна хăй çумĕнчен чышса йарасшăн пулать: „Ай, вăйпах ан чупту-ха есĕ!.. Есĕ хула каччи, епĕ тин йалтан килнĕ хĕр. Есĕ мана улталама та пултаратăн... Шанмастăп!..“—тет.

— Ак хĕвел... уйăх... епĕ сана сăмах паратăп: ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăнăпăр. Хам ăçта кайатăп сана та çавăнтах илсе çӳрĕп...—тесе илĕртнĕ вăл ăна. Çаксем аса килчĕç шĕлепкене. Çав вăхăтрах ăна сасă илтĕнет:

— Есӗр, пичче, хӑвӑр ку хуларисем мар-и вара?— пӑса жир шухӑшне пӳлсе чӗнчӗ хӗрача.

— Ӗлӗк епӗ ҫак хулара пулнӑ та... Халӗ урӑх хулара пурӑнатӑп,—кӗскен тавӑрчӗ шӗлепке.

— Мӗншӗн пӑрахса карӑр вара ку хулана? Йуратмарӑр-им? Хули пӗчӗк ҫав...

— Пысӑк шкула вӗренме карӑм та, вӗренсе тухсан вара урӑх тавӑрӑнмарӑм.

„Ах, йепле ӑслӑн калаҫать ку ҫамрӑк хӗрача!.. Культурлӑ пурӑнакан ашшӗ-амӑшӗ аллинче ӳсет пулас"—шухӑшларӗ пӑсажир хӑй ӑшӗнче.

— Ҫапла ҫав вӑл... Ҫын пысӑка вӗренсен, пӗчӗк хулара пурӑнасси килмест,—йуптарарах кулса каларӗ хӗрача.

Пӑсажир курать: хӗрача куҫкӗретех кулать. Ҫавӑнпа вӑл хӑйӗн сӑмахне тепӗр йеннеле пӑрса йарасшӑн пулчӗ:

— Ма пит илемлӗ чечеклесе пӗтернӗ сирӗн хулана пайан?

— Ху пысӑк вӗреннӗ ҫын тетӗн. Ҫапах та пӗлместӗн... Пайан вӗт пирӗн республик хӑйӗн уйавне тума хатӗрленет!..

Шӗлепке вӑтаннипе, нимӗн тума пӗлмесӗр, хӗрелсе кайрӗ. Пӑсажир пӗр тӗлсӗр пускаласа илчӗ, аллинчи туйипе умри хӑйӑра чава-чава ыватрӗ. Акӑ вӑл каллех урӑх ыйту ҫине куҫасшӑн пулчӗ:

— Аҫу-аннӳ пур-и сан? ыйтрӗ хӗрачаран.

Хӗрача ун ҫине тӗлӗнерех пӑхса илчӗ те:

— Атте? Атте ҫук манӑн. Вӑл анне манпа йӑвӑр ҫын пулсан, урӑх хулана вӗренме кайнӑ та, вара ҫавӑнтан тавӑрӑнман. Халӗ анне Чулхулара тухтӑра тухма вӗренет, кӑҫал пӗтерет. Вӑл, пайан пӑрахутпа анмала. Епӗ ӑна хирӗҫ илме тухрӑм, терӗ хӗрача.

— А, есӗ кампа пурӑнатӑн?

— Асаннепе,—кӗскен тавӑрчӗ хӗрача.

Пӑрахут, ирхи сывлӑша хумхатса кӑшкӑрса йачӗ.

— Ак ҫитрӗ! Ҫак пӑрахутпа килмеле-ха ман анне. Хӗрача пристӑнь йеннеле чупса анчӗ.

— Аннӳ мĕн йатлă сан?—хыçалтан кăшкăрса йулчĕ пăсажир.

Анчах хĕрача хирĕç калаймарĕ. Пристăҥ ăшне чупса кĕрсе курăнми пулчĕ.

Пăсажир тĕлĕннипе, вырăнĕнчен те хускалмасăр, пристăҥ йеннеле пăхса, пăрахут çинчен халăх тухасса кĕтсе тăчĕ.

Ак, халăх кĕпĕрленсе тухаҭ. Вĕсен хушшинче уйрăмах пĕр сарă-кăтра çӳçлĕ, пуçне илемлĕ шĕлепке тăхăннă, хура палҍтолă чипер хĕрарăм курăнаҭ. Ун аллинче пысăк мар чăматан. Хĕрлĕ галстуклă хĕрача унпа йунашар утаҭ. Вăл хĕрарăм куçĕнчен пăхса унпа пĕр таттисĕр калаçаҭ.

— Çəвă, çавă... Маруççă! Урăх никам та мар,— шухăшларĕ пăсажир. Акă вăл, ку хĕрарăм куçĕ умне лекесшĕн мар пулса, айакала пăрăнаҭ те кĕсйинчен пирус кăларса чĕртсе йараҭ. Пирусĕ хаклă йышши пулсан та, пĕр-иккĕ туртса ĕмнĕ хыççăн, унăн тĕтĕмĕ çав тери йӳççĕн туйăнчĕ. Çиллипе çăварĕнчен туртса кăларса, пируса айăккала ывăтса йачĕ.

— Гражданин!—тенĕ сасă илтĕнчĕ хыçĕнчен.

Пăсажир тăп чарăнса, хыçалала çаврăнса пăхрĕ.

— Виçĕ тенкĕ штраф тӳлĕр,—терĕ ăна вахтăри матрос.

— Мĕншĕн?

— Пирус тĕпне йураман вырăна пăрахнăшăн.

— Ах, епĕ ас та туман пирус тĕпĕсене пăрахмали вырăнсем пуррине! Каçарăр...

Çав вăхăтрах хайхи хĕрарăмпа хĕрача пирĕн пăсажирпа милиционер тĕлне утса çитрĕç.

— Анне, ак çак çын пăрахутран тăрса йулнă. Ĕлĕк вăл Шупашкарта пурăннă тет те, хулана курма аннă пулнă ..

Хи-хи-хи!.. кулса йачĕ хĕрача, амăшне арçын çине пӳрнипех кăтартса.

Хĕрарăм тăп чарăнса, пăсажир çине тинкерсе пăхрĕ:

— Волотă! Владимир! Республикă уйавне иртерме килтĕн-им?—хăй мĕн каланине чухласа илеймесĕр, васкасах утса пырса, шĕлепкелĕ арçына аллинчен йарса тытрĕ. Вăл унтан чухласа илчĕ пулас. Сасартăк аллине туртса илсе кайала-кай ала чакса тăчĕ.

Пăсажир, тĕлĕннипе нимĕн тума пĕлмесĕр, пĕрре хĕрарăм çине, тепре квитанци çыракан матрос çине пăхса тăчĕ. Матроса хăй патĕнчен часрах уйăрса йарасшăн пулса:

— Ме тархасшăн тесе,—виçĕ тенкĕ вырăнне, пилĕк тенкĕлĕх хут укçа кăларса тыттарчĕ.

— Манăн тавăрса пама вак укçа çук. Гражданкă, сирĕн вакки пулсан тархасшăн вакласа парăр,—терĕ матрос хĕрарăм çине пăхса.

— Тавăрса пама кирлĕ мар, пĕтĕмпех ил!—сĕнчĕ пăсажир.

— Епĕ вĕт çпекуљант мар, санран ытлашши илме!—татса хучĕ матрос.

— Пилĕк тенкине калле пар. Ме, хам парам виçĕ тенкĕлĕх,—хĕрарăм хăйĕн кăсйинчен виçĕ тенкĕлĕх хут укçа кăларса пачĕ.

— Спасибă сире, гражданкă,—пăрăнса кайрĕ матрос.

— Анне, сан пĕлекен çын-им вăл?—амăшне кусĕнчен пăхса ыйтрĕ хĕрача.

— Çук. Ултавçă вăл! Йытă!—шăлĕ витĕр сăрхăнтарса кăларчĕ çак сăмахсене хĕрарăм. Унтан хĕрне аллинчен çавăтрĕ те шĕлепкелĕ пăсажире пăрахса кайрĕ.

— Маңă!.. Маруççа!.. Марйе!.. Ме, ил укçуна! Есĕ вĕт маншăн тӳлеме айăплă мар,—аллинчи пилĕк тенкĕлĕх укçине чăсса тăрса йулчĕ шĕлепкелĕ çын.

Хĕрарăм хирĕç чĕнме мар, çавăрăнса та пăхмарĕ. Малала утрĕ.

— „Вунпилĕк çулхи хĕрĕ пур. Епĕ пĕр пĕччен, хусах хур аçи пек. Ултавçă... Йытă... епĕ...“—шухăш-

ларĕ шĕлепке. Унтан чирлĕ çын пек тайкаланса пристăнь йеннеле утрĕ.

Анатран тепĕр пăрахут хăпарчĕ. Хуларан тĕрлĕ оркестăр-музăк сассисем илтĕнчĕç.

Пăрахут çитсе чарăнчĕ. Пĕр пилĕк минутран вăл каллех хускалса кайрĕ.

Сарă кăтра çÿçлĕ, хĕрлĕ галстăклă хĕрача, 15 çул тултарнă Чăваш республикин тантăшĕ, хăй амăшĕпе пĕрлех Чăваш автономи праçникне уйавлакан хĕрлĕ йалавлă, музыклă демонстрантсем хушшине кĕрсе карĕ.

---

## ТУПМАЛИ


| | Стр. |
|---|---|
| Стрелок Иванĕ | 5 |
| Сăнчăр | 26 |
| Пăлхав вăхăчĕ | 38 |
| Иккĕмĕш хут | 45 |
| Кутăн Куçма | 55 |
| Тимĕрçĕ Тимухха | 65 |
| Йакур çулĕ | 87 |
| Тăшман—куç умĕнче | 96 |
| Вунпилĕк çул | 119 |



67404

с. 24132.

Державна
Наукова Бібліотека
ім. Короленко. Харків

Перевірено 1948 р.

[redacted]

Хакě 1 т. 80 п.
Цена 1 р. 80 к.

Переплет 50 коп.

23 коп.

61186

М. ДАНИЛОВ-ЧАЛДУН

# КОЛХОЗНЫЕ РАССКАЗЫ

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

ЧУВАШИЗДАТ • 1936